78-47

Валентина Эльби



# Йӑл кулсан...

Валентина Эльби



# ЙĂЛ КУЛСАН...

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1978

С/Чув/2
Э

**Валентина Эльби**

Йăл кулсан... Повеçсем, калав. Чăваш кĕнеке издательстви. Шупашкар, 1977 ç.

80 с.

Кĕнекене икĕ пысăках мар повеçпе пĕр калав кĕнĕ.

«Йăл кулсан...» повеçре тăлăха юлнă Акукпа Исмаль пурнăçне сăнласа кăтартать автор. Ырă çынсем пулăшнипе çак ачасем маттур та ăслă çитĕнеççĕ.

«Урокран йывăрри» повесть — учительпе вĕренекен хушшинчи кăткăс хутшăнусем çинчен.

«Илеме курма пўрнĕ ача» калавра вулакан йывăç тымарĕнчен тĕрлĕ чĕрчунсем тума юратакан Энтьукпа паллашать.

Государственная
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„24" марта 1978 г
№

Э $\frac{0763-031}{М 136(03)-78}$ 77—78

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1977 ç.



# ЙĂЛ КУЛСАН...

## 1

Шит хăпмарĕ Исмаль хура куçлă, икĕ çиветлĕ Утиçрен. Уроксем пĕтнĕ хыççăн та, пĕтĕм класс умĕнче, вăл каллех ăна алlinчен тытса илсе тухса кайрĕ.

Пĕрле вĕренекен хăшпĕр хĕрачасем хулпуççийĕсене хускаткаласа, чăр-чăрр пăхкаласа илчĕç, анчах сăмах таврашĕ хушмарĕç. Çĕрулми калчи евĕр шуранка Çемен вара, хăйне кăткă йăви çине пăрахнăн, вĕтеленме тытăнчĕ. Кантăкран кантăк патне чупа-чупа пырать, урамалла тĕмсĕлсе пăхать. Лешсем, пĕрпĕрин çумне çĕлесе янăн, тач юнашар утаççĕ-мĕн.

Ним тума аптранă енне Çемен ихĕлтетсе ячĕ.

— Килĕр-ха кулăш курма! — чĕнчĕ вăл ыттисене. — Кусем халех савнилле пуласшăн мар-и?

Çук, ун кăмăлне туса, ни кулаканĕ, ни кантăк витĕр пăхаканĕ тупăнмарĕ. Вара вăл, çиллине шăнăçтараймасăр, пурă илчĕ те доска çине пысăк саспаллисемпе çапла çырса хучĕ: «Исмаль+Утиç=юрату».

— Халĕ ĕнтĕ эпир çеç мар, учительсем те сисĕç, — саркаланчĕ Çемен. — Мĕнле пек?

— Ним çĕнни те çук.

Каллех ун майлисем тупăнмарĕç. Пĕлеççĕ-çке-ха: Çемен çырусем сахал яман Утиç патне. Хĕрачи çеç юрламан ун юррине.

— Чăнах, пустуй япала марах ку, — хаш-ш сывласа илчĕ Çемен. Халĕ вăл йĕрес патнех çитнĕ. — Паçăр заводра тĕлĕнтерчĕç вĕсем мана: Утиç хăюллăнах Исмалĕн кĕсйинчен унăн кăвак куçлăхне туртса кăларать, сăмси çине лартать, вара каллех чиксе хурать.

Ĕç урокĕ вĕсен заводра иртет. Чи малтан, вĕренекенсем завода пырсан, вĕсене тимĕр-тăмăр шăратнине кăтартнăччĕ... Исмале ун чух бригадир хĕрлĕ хĕлхем çине пăхса куçа пăсасран кăвак куçлăх панăччĕ. Куçлăхне рабочисем пек карттус çумне çирĕплет те кăмакара хурçă мĕнле шăраннине кирек мĕн чухлĕ тинкер, ним те мар.

Кăвак куçлăха Исмаль заводăн хаклă парнийĕ вырăнне хурать, ăна тирпейлĕ усрать, ялан хăйпе пĕрле илсе çӳрет. Çемен шăпах ĕнтĕ çав кăвак куçлăх пирки калаçать те.

Ку хутĕнче Утиçĕн чи çывăх юлташĕ Тамара чĕнмесĕр тӳсеймерĕ:

— Эх, туртса илчĕ Исмаль санăн тӳррине, тьхик, — кулса илчĕ.

— Кам каларĕ «Утиç ман тӳрри» тесе?

Çеменĕн сасси ку хутĕнче йынăшнăн тухрĕ пĕтĕм.

— Эппин, мĕн пит пăшăрханан?

— Эпĕ-и?

— Кам пултăр тата.

— Пурте паллă, — аллине сĕлтрĕ Çемен, — Утиç чапа тухнă сталевар Мария Степановăн хĕрĕ. Унпа пĕрле çӳресен, Исмале чыс кӳрет. Унсăрăн...

Пуçланă сăмахне вăл вĕçне çитереймерĕ, ĕлĕкхине асăнса питĕ хурласшăнччĕ, анчах хăрарĕ.

Вĕренекенсем пĕрин хыççăн тепри класран туха-туха кайрĕç. Çемен аллине пурă тытнипех доска умĕнче пĕччене тăрса юлчĕ.

2

Урамра çуркунне. Хĕвел шартарса пăхать, хĕл сулхăнĕнче шуранкаланнă пит-куçа пăхăрлантарать. Юр ирĕлсе сĕлкĕшленнĕ. Сăрхăнакан шыв ĕнтĕ, лупашкасене тулса, Атăла çитме васканă май, çĕр питне чĕркелесе уçнă çулĕпе шăнкăр-шăнкăр юрласа, хĕрача çивĕчĕ пек явăнса юхать. Пахча карти çумĕпе ӳсекен шурă шупăр тăхăннă хурăн тураттисем капăр алка çакнă. Çакă парка кăчкăсем çерçисене илĕртеççĕ пулас, унсăрăн вĕсем çулçăсăр туратсем хушшинче чĕриклетместчĕç.

Утиçпе Исмаль, алăран алă тытнăскерсем, кӳлленчĕксем урлă йăлт та ялт сике-сике каçаççĕ. Иккĕшĕ те савăнăçлă вĕсем, çаплах кулаççĕ темшĕн. Паллах, пурте кулăшла пек туйăнать ĕнтĕ, тĕлĕнмелли те сахал мар. Умран тин çеç вăраннă хитре çунатлă лĕпĕш вĕлтĕртетсе вĕçсе иртни те чунĕсене çĕклентерет. Çамрăклăх паллисем ĕнтĕ çаксем.

Çул юппинче уйăрăлса чунĕсене хурлантарас çук, вĕсем çирĕм саккăрмĕш çуртра, пĕр хутра пурăнаççĕ, хваттер алăкĕсем те хире-хирĕç пăхаççĕ.

Виçĕмкун та, ĕнер те уроксем пĕтнĕ хыççăн Утиçпе Исмаль Атăл хĕррине чупнăччĕ. Темшĕн илĕртет çав аслă Атăл çамрăк чунсене? Вĕçĕ-хĕррисĕр пăхтарать вăл хăйĕн çине. Хĕл каçа çакă сарлака юханшыва витсе, ăшăтса тăнă тачка пăр касмăкри кулач чусти евĕр пăш-ш хăпарнă, çыран хĕрринчен, шыв питне уççа, виç-тăвата утăм хăпнă, ку картина ирĕксĕрех çапла шухăшлаттарать: пăрлă Атăл çумĕпе тепĕр юханшыв хăй çулне тупнă... Çынна ним те хăратаймасть, шыв урлă каçма хывнă та утать, унăн Атăл леш енне çитмелле. Йăлăмри хыр вăрманĕ кăвак тĕслĕ шăлапирпе карăннă.

Подъезда кĕрсен, Утиçпе Исмаль хăйсен хутне чупсах хăпарчĕç, васканипе мар, ытахальтен çеç, выляса. Алăк умне çитсен чарăнса та тăмарĕç.

— Сывă пул! — терĕ хĕрача, аллине Исмаль ывăçĕнчен кăларса.

— Ыран ирччен! Шкула кайнă чух пирĕн алăка шакка.

— Юрĕ.

— Кĕтетĕп, унсăрăн çывăрса юлăп.

— Тата сана ăнăçлăх сунатăп. Сочинени санăн конкурсра пĕрремĕш вырăна тухса Мускава çитмелле пултăр.

— Сана та çавнах сунатăп! — йăл-йăл кулкаларĕ Исмаль. Хваттер алăкĕсем уçăлса хупăнчĕç, коридор пушанчĕ.

3

Исмаль яланхиллех тĕкĕр умĕнче чарăнса тăчĕ. Ку пĕчĕк тĕкĕре çĕнĕ хваттере куçсанах стена çумне çакнăччĕ. Ёлĕк вăл хăй сăнне курасшăн чĕвенленетчĕ.

Иртнĕ çул çу кунĕсенче Исмаль сасартăк пĕве кайрĕ, класри чи çӳллĕ ачасемпе шайлашрĕ. Спорт пулăшрĕ темелле ăна. Çу каçа мĕн чухлĕ шывра ишмен-ши! Стадионта та чупрĕ, пайтах сикрĕ. Хул-çурăм сарăлчĕ, пӳ-си яштакаланчĕ. Çӳçĕ ун ука евĕр сарă, вăрăм пирки хулпуççийĕсем çине тĕшĕрĕлет. Куç лупашкисене мăшăр чакăр шăрçа вырнаçтарнă тейĕн. Вĕсене çĕре тухса ӳкесрен çӳçĕ тĕслех сарă (çук, ĕнĕкрех тĕслĕ темелле пулĕ), хĕлĕх пекех çирĕп хăрпăксем хӳтĕлеççĕ. Сăмса тăрри, питçăмартисем, хăмăр-сăрă шĕвекпе сирпĕтнĕн, хуратутлă.

Кăçалччен ун çине пĕр хĕрача ăшшăн пăхман. Çĕнĕ çул каçĕ, капăр чăрăш тавра вылянă чух, почтальон сасартăках темиçе çыру тыттарса хăварчĕ. Çырусене пĕтĕмпех хĕрачасем çырнă. Кашниех тус пулма сĕнет. Мĕнех, тĕлĕнмелли çук. Ун юлташĕсем акă тахçанах хĕрачасем хыççăн чупаççĕ. Унăн та черет çитрĕ-тĕр.

Исмале çырусем савăнтарчĕç, анчах вăл никам патне те хирĕç çырмарĕ. Ăна темшĕн çав хĕрачасем килĕшмерĕç. Ун чунне тахçанах умри парта хушшинче ларакан хура куçлă Утиç илĕртет. Кăмăллать-ши ăна хĕрача? Исмаль шанмасăртараххăн тăватă сăмахран çыру çырчĕ. Ырăпа тăснă алла çапса сирмерĕ хĕрача. Çав кунтанпа Утиçпе Исмаль пĕрле çӳреме тытăнчĕç.

Исмаль сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Класри ытти ачасем пекех унăн сочинени çырмалла.

4

Вĕренме тытăннăранпа Исмаль таса хута сахал вараламан. Ку хутĕнче вара нихăçан тĕкĕнмен тема — чăн-чăн çын çинчен çырмалла. Исмаль, «Коммунистсенчен тĕслĕх илетпĕр» темăпа сочинени çырса, Пĕтĕм Союзĕпе ирттерекен конкурса хутшăнать.

Исмаль ятарласа хатĕрленĕ тетрадьне илсе уçрĕ те чи çӳлти графа хушшине сочинени темине çырса хучĕ.

Никĕсне хывма мĕнрен тытăнмалла? Исмаль апла та, капла та пуç мимине хĕскелеме тытăнчĕ, анчах хут çине пĕр сăмах та хывăнмасть.

Асăннă сочинение çырма хатĕрленнĕ май класра диспутсем

пулса иртрĕç. Унта юлташсем калаçни асрах-ха: «Комсомолец хăйне пулас коммунист пек туймалла»,— терĕç. Исмаль комсомола кĕни те темиçе уйăх çеç-ха.

Кам-ха тĕслĕх илмелли çын? Шкулта, ав, физикăна пĕр учитель, математикăна тепри вĕрентет. Пурăнма мĕншĕн вĕрентмеççĕ? «Пурнăç» наука мар-ши вара? Мар пулĕ çав. Ăна кашни çыннăн хăйĕн пĕрчĕн-пĕрчĕн суйламалла-тăр. Çавăншăн ĕнтĕ кирек камăн та чун-чĕри пур, çавăншăнах мăшăр куç парнеленĕ ăна курма.

Исмаль пуçĕнче шухăшсем пĕве умĕнчи мăн пăр катрамĕсем пек явăнаççĕ. Çук, пăр катрамĕсем те мар — çынсем. Çав çынсем карусель ларкăчи çинче ярăнакансем пекех вĕлтлетсе иртеççĕ, анчах вĕсене паллама хĕн. Тĕплĕнрех сăнама пикенсенех кӳршĕ хĕрарăмĕ, Утиç амăшĕ — Мария Никитична Степанова килсе тухать те кирек хăшне те картлать хурать. Мĕншĕн çапла? «Хăçантанпа пĕлетĕп-ха Мария Никитичнăна?» — хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Исмаль.

Чи малтанхи тĕлпулăва аса илме хăтланни ăна аякри, тахçан иртнĕ кунсене тавăрчĕ.

5

Асар-писер тăман асать, касса вĕрекен çил куçа уçма памасть. Ал-ура шăнса ĕнтĕркенĕ.

— Юлашки хут пăхса юлăр аннĕре, — терĕç çăва çине виле пытарма килнĕ çынсем пысăк шăтăк умĕнче тăракан Исмальпе унран çулталăк çурă аслăрах аппăшне.

Тупăкра куçне хупнă, питне çĕр сăнĕ çапнă амăшĕ выртать. Тинкерет ывăл, ĕмĕрлĕх асра хăвармалла-çке. Авăк çил ним те ăнланмасть, ун хăйĕн ĕçне туса пултăр. Таçтан юр ывăçлать те ваш-ш сапать, амăшин кăвакарнă тути кĕтессисене ирĕлме пĕлмен кĕрпек купаланать.

Ним те шухăшлама пĕлмест Исмаль: те пĕчĕккĕ вăл, те пысăк; пиллĕкмĕш класра вĕренет, çавă çеç.

Масар çинчен таврăннă чух пĕр кинемей, хура тутăр çыхнăскер, тем мăкăртатса пычĕ, вăл ачасен ашшĕне ятлать. Пурăнать имĕш таçта, хытă чĕреллĕскер. Алимент тӳлеттермелле тунăччĕ. Йĕркеллĕ пĕр вырăнта ĕçлемен пирки унăн укçи-тенкипе усă курайман çемье.

Амăшне пытарнă хыççăн пуçланнă вара Исмальпе аппăшин выçăллă-тутăллă пурăнасси. Юрать-ха, вĕсене шкул столовăйĕнче укçасăр апатлантараççĕ. Сайра хутра амăшин аякри тăванĕсем пĕрер михĕ çĕрулми килсе паркалаççĕ. Каникул вăхăчĕ, канмалли кун савăнăç кӳмен ачасене. Аша тĕпренчĕк яман кунсем пайтах пулнă.

Пуранать талах. Хевел ана херхенет тейен, теттем çер иртнĕ хыççăн, çĕнĕ кун пуçласа, тӳпене хăпарать; çуттине, ăшшине хĕрхенӳсĕр сапать, чуна йăпатать.

Пĕччене тăрса юлнăранпа хĕл, ав, виçĕ хутчен хăйĕн шурă, кăпăшка, ăшă тăлăпĕпе çĕр-аннемĕр çурăмне витсе çывăрттарчĕ. Исмаль ĕнтĕ вĕренсе саккăрмĕш класа çитрĕ. Апла пулин те, пир пек тĕртĕнсе пыракан пурнăç тăрăхĕ кĕске-ха ун; майĕпен, кун иртнĕçем, вăрăмланса пырать вăл. Пуçламăшĕнче ыватнă çураççи — нихăçан манăçми амăшĕ, унтан ăна пытарни.

Вăхăт темле хуйха-суйха та йăвашлатать, вара пуçĕпех мантарать пулать. Тен, тĕрĕс, ара унсăрăн çын мĕнле тӳсĕ, чăнах. Ача-пăча вара кулянма пачах пĕлмест тесе çирĕплетеççĕ хăшпĕрисем. Çапла шухăшлаттаракан сăлтавĕ пур иккен: пĕчĕк этем татăлса макăрнă хыççăнах ахăлтатса кулма пултарать, питçăмарти çине юхса аннă куççулĕ те ун çийĕнчех типет.

Анчах та ку ача-пăча кулянма пĕлмест тениех пулать-ши? Чухла ĕнтĕ, те тĕрĕсех?

* * *

Сочинени çырасси Исмале хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнчи чун асапне аса илтерчĕ.

Умĕнчи тетрачĕ çав-çавах таса-ха.

Ассăн сывларĕ Исмаль. Пĕкнĕ пуçне çĕклерĕ. Унăн куçĕсем амăшĕннипе тĕл пулчĕç. Виçĕмкун вăл амăшин пысăклатнă сăнӳкерчĕкне рама ăшне вырнаçтарса стена çумне çакрĕ. «Анне, кала-ха, сочинени çырма мĕнрен тытăнас?» — ыйтрĕ Исмаль, амăшĕ чĕнме пултарнăн. «Пуçламăшĕ хатĕр ĕнтĕ. Хăвăн пурнăçна пĕрчĕн-пĕрчĕн тишкĕрмесĕр, хак памасăр хăвна коммунист пек туяймăн. Йăнăшсем туман мар эсĕ...» — амăшĕ çапла тавăрнăн туйăнчĕ ăна. «Йăнăшсем тунине тунмастăп. Эсĕ пĕлместĕн пулĕ-ха мана хăшпĕрисем епле кӳрентернине».

## 6

Хӳтĕсĕре тăрса юлнă ачасене темшĕн çынсенчен хăшпĕрисем тиркеççĕ. Çавăн йышши çынсем хăйсен ывăл-хĕрĕсене шаккасах асăрхаттараççĕ: «Асту, унпа ан выля, усала вĕренен. Тăлăх ачасем тӳлек мар, умсăр-сумсăр ĕрĕхсе çӳреççĕ, тӳрккес калаçаççĕ, хăлхана йӳçĕтмелле кăшкăрашаççĕ, тантăшĕсене тӳпелеççĕ...» Ку çитмест, тĕрĕс-и, çук-и, ним маршăнах тăлăха юнама пăхаççĕ. Кам, кам, Исмаль тӳскелесе курнă сивлек инке-пиччесен мăшкăлне. Амăшĕ çĕре кĕнĕ хĕл пĕр куштан этем пĕтĕрнĕ сылтăм хăлха халĕ те пĕçертсе тăрать.

Хĕллехи кунра мĕнле ачана кăчăк туртмĕ ĕнтĕ тăвайкки? Исмалĕн те кайăк пек чунĕ тапса тăрать, вĕçтерчĕ вăл ярăнма, хăйĕн çунашки те, йĕлтĕрĕ те çук, туянса парас çынни те çук ун. Ытахальтен çеç чупрĕ ача çырма хĕррине, савăнăçлă сасăсем канăç паманран.

Çитрĕ хайхискер. Куçĕ çунать ыттисемшĕн савăннипе. Мĕн чухлĕ кунта йĕлтĕрçĕсем! Ухă йĕппи евĕр вĕсем вашлатаççĕ çырма тĕпнелле.

Ярăнас килет-çке, тупата. Мĕнле этем сивлетĕр çакă ырлăха? Чим, çывăхрах пĕри тăрать. Мĕн кĕтет айван? Вăркăштар юр пĕрчисене айккинелле пĕрĕхтерсе! Вăл, пур, вырăнтан хускалмасть, йĕлтĕрлĕ ури çĕр çумне шăнса хытнăн.

Исмаль тимлесе пăхса илчĕ ăна татах. И-и! ара, пĕр çуртра пурăнакан каçăр сăмса — Çемен-иç ку. Шкулта та пĕрле вĕренеççĕ, пĕр парта хушшинче ларманни кăна. Çăмламас свитер тăхăнса капăрланнă та, хăй çинçешке пулин те пичке пек курăнать, палламалла та мар ăна. Шуранка питне Хĕл мучи те хĕретеймен.

Мĕншĕн ярăнмасть вăл? Исмаль тавçăрчĕ: хăравçă вăл ытлашши. Çырми, ав, епле тарăн, тăвĕ — чăнкă. Шикленет мĕскĕн. Ачасем ярăннине пăха тăркач хăй хăюланасса шанатьтĕр.

Çеменрен йĕлтĕр ыйтса пăхма шутларĕ Исмаль. Чĕнмест леш. Илтмĕше хывать-ши? Куç айĕн пăхкалать. Тутине шит вăрăмăш тăсрĕ.

— Шеллетĕн? Хăравçă çеç мар иккен эсĕ, хыт кукар та! — йĕплесе илчĕ ăна Исмаль. — Пĕлменччĕ эсĕ сăхă иккенне.

Хăйне хурлаттарас килмест лешин. Класс ачисене каласа парасран хăрать. Мăшлата-мăшлата йĕлтĕрне хывса пачĕ çапах.

— Телей кур! — пуç тайрĕ ăна савăннипе Исмаль.

— Асту, пĕр хут çеç ярăнса анатăн! — хытарчĕ Исмале йĕлтĕр хуçи.

— Эс каланă пек пулать, — майăн шăлтарать Исмаль. Унтан вăл хăпăл-хапăл сырчĕ те ярт! тăсăлса тăчĕ. Патаксем çине тĕренсен, йĕлтĕр тупанĕ якине тĕрĕслес шутпа, урине ылмаштарса чăш-чашш шутаркаларĕ каллĕ-маллĕ. Тиркеймĕн лашине, чăн-чăн спортсменăнниех. Кунашкал чаплă йĕлтĕрпе хытă чупакан пуйăспа ăмăртсан та намăс курмăн.

Тем самантра, Çемен ăна лайăххăн сисеймерĕ те, тапранса кайрĕ Исмаль. Хыçĕнче юр тусанĕ кăна мăкăрланать, тата çĕп-çĕнĕ мăшăр йĕр авкаланса юлать. Кайăк пек вĕçет йĕлтĕрçĕ, ăна никам та хуса çитеес çук.

Каçăр сăмса — Çемен куçне хупмасăр сăнать Исмале. Хă-

йĕн чунĕ кĕвĕçнипе кӳтнĕçем кӳтет. Малтан Исмаль тăвайкки сĕвекĕпе пĕччен кукăр-макăр çул хывса пычĕ, вара çырма тĕпне çитрĕ те ыттисемпе арпашса çухалчĕ. Аçта вăл? Каялла хăпарни курăнмасть.

Кĕтме çăмăл мар, чăнах та. Уйрăмах кунта, йĕри-тавра ачасем ярăннă çĕрте, пĕр минут сехете тăсăлнăн туйăнать.

Тепĕртакран Исмаль пачах урăх енчен çавăрăнса çитрĕ, анчах ăна шутсăр тарăхса çитнĕ Çемен сисмерĕ.

— Чаплă сан йĕлтĕрӳ, тупата, хăй тĕллĕн шăвать,— мухтать Исмаль. — Тавтапуç.

Çемен палт çавăрăнчĕ. Çурăм хыçĕнче Исмаль тăра парать. Вăл халь-халь тапранса каяссăн туйăнчĕ, вара ним уямасăр кăшкăрса пăрахрĕ, йĕлтĕр патакĕсене ярса тытса:

— Хыв! Кӳр йĕлтĕре! Эсĕ пĕр хут çеç ярăнса анма пултăн!

— Мĕн ĕрлен? Çапла хăтланнăшăнах акă йĕлтĕрна памастăп.— Хăратасса хăратрĕ Çемене Исмаль, çапах та ун хăй сăмахĕнчен иртес йăла çук. Урлă-пирлĕ çыхнă кантрисене салтса пушатсан, йĕлтĕрĕсене ура пуçĕпе хуçи патнелле шутара-шутара ячĕ. — Ме, тыт!

Ярăнас пек, хыпалансах йĕлтĕрне сырчĕ Çемен. Çук çав, вăл каллех юпа евĕр хытса тăчĕ. Мĕн кĕтет?

«Тăхта, санăн чăх чĕрӳне халех сыватлатăп, — чăрсăрлăх вĕлтлетрĕ Исмаль кăмăлĕнче. — Ишме вĕрентес тесен, çынна шыва пăрахма хушаççĕ». Унччен те пулмасть, Исмаль Çемене тĕкрĕ ячĕ çыран хĕрринчен. Унăн йĕлтĕрĕ çавна çеç кĕтнĕ-тĕр, йăкăртатрĕ ту сĕвекĕпе аяла, çырма тĕпнелле. Шел, ярăнаканĕ çеç чĕрĕ çын пулмарĕ — чăн-чăн тăм пукане. Ури-алли те вылянмасть, ĕрĕхекен урхамахне тытса пыма пĕлмест. Акă паш! чăмрĕ кĕрт ăшне. Вăйлă çил, ашкăнса, кăкăрĕнчен пырса тӳнклеттерчĕ-ши е юрпа витĕнеймен чул муклашки йĕлтĕрне хуçрĕ-ши? Упа евĕр мĕкĕрни таçта илтĕнет. Вăтанасчĕ айванăн кăшт. Чим, пулăшмалла мар-ши йĕкĕте? Айăпне туйнă тантăшĕ чупса пычĕ.

— Уру хуçăлман-и?

— Сана мĕн ĕç, — ниепле те макăрма чарăнаймасть Çемен, кӳреннĕскер.

Çĕклесе тăратрĕ ăна Исмаль. Чип-чиперех çын, ури-алли тĕрĕс-тĕкелех, йĕлтĕрĕ те хуçăлман.

— Ярăнма вĕренес тесен, хăрама юрамасть,— терĕ Исмаль.

— Санран ыйтмаççĕ, çара çерçи! Хăвăн йĕлтĕрӳ те çук, çынран кĕлмĕçленсе çӳрен, — чăркăшать Çемен.

Исмаль ним пулман пек лăпкăн утрĕ киле. Уроксем тусан, каçа хирĕç каллех урама тухрĕ вăл уçă сывлăшпа сывлама. Утăм та тума ĕлкĕреймерĕ, каçăр сăмса тăнине курах кайрĕ,

пĕччен мар вăл, ашшĕпе. Вĕсем никама та мар, Исмале кĕтнĕ.

— Атте, вăл мана çырмана тĕксе ячĕ, чутах урана хуçмарăм, — пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ Исмаль еннелле. — Таврăр ăна.

Исмалĕн тарасчĕ. Анчах çĕре тымар янăн вырăнтан тапранаймарĕ.

— Э-э, пĕлетĕп, ашшĕ-амăшĕсĕр анчăксене, вĕсем ялан ашкăнаççĕ! — ятлаçрĕ Çемен ашшĕ. Хĕремесленнĕскер ярса тытрĕ те Исмале хăлхинчен, пĕтĕрчĕ вара чунĕ каниччен.

Хăлха тем пек пĕçертсен те Исмаль сасă кăлармарĕ, чăтрĕ. Киле кĕрсен вара, аппăшĕнчен тата хваттере янă икĕ хĕртен вăрттăн ĕсĕклесех макăрчĕ, ыратнăран мар, хурланнипе.

Исмаль ашшĕ-амăшĕ пулнă пулсан, çакă куштан этем ăна тивме хăяймастчĕ.

Пĕр-ик хут çакнашкал, ним сăлтавсăр, пысăккисенчен мăшкăл тӳссе ирттерни тăлăх-турата ырă патне илсе пымарĕ, киревсĕр ĕçсем тума çеç илентерчĕ.

* * *

«Пĕлетĕн-и ĕнтĕ, аннем?» — каллех рама ăшĕнчи ăшшăн пăхакан амăшĕпе калаçрĕ вăл.

«Йăлтах курса тăнă эпĕ...»

«Астăватăн-и тата мана вĕтнине? Эпĕ çавăншăн таврăртăм».

— «Таврăртăн? Мĕнле?»

## 7

Вăрçăлла выляма тытăнсан, ачасем урамра икĕ ушкăна пайланчĕç. Пайланчĕç те пĕр-пĕриншĕн ют пулса тăчĕç. Шав хирĕçеççĕ, хăш чух чышкисене те хута яраççĕ.

Пĕр ушкăнĕ Исмаль майлă. Хирĕçлисен пуçлăхĕсем иккĕн: Титпа Çемен.

Чунтан кураймасть Исмаль Титпа Çемен ушкăнне, уйрăмах, ашшĕ-амăшĕсене. «Ман тăшмансем», — тет вăл çавсене асăнсан. Нихăçан та каçарас çук ачаш чун хăйне усал тунине.

Сăмахран, акă, Титăн ашшĕне Исмаль хаяр кашкăрпа танлаштарать. Пĕррехинче вăл Исмале ним сăлтавсăр чĕн пиçиххипе вĕтрĕ. Вĕсен хваттер кантăкне Исмаль ватнă имĕш, çавăншăн ăса кĕртме шутланă. Тĕрĕссипе илсен, айăпли — хăйĕн ывăлĕ; вăл, юр чăмаккипе Исмальсен форточкине çапас тесе, тăван кил кантăкне чанкăртаттарчĕ. Патакне Исмаль çирĕ. Мĕн çав кунтанпа Тит ашшĕне шăл хăйраса çӳрет хайхискер. Часах кĕтнĕ самант та çитрĕ.

Тит ашшĕн çăмăл машина пур. Çуркунне çитсен, ăна вăл çурт умнех ларта-ларта хăваракан пулчĕ. Таврăма ĕмĕтленекеннишĕн ку питĕ лайăх, хăйĕн тĕллевне пурнăçлама меллĕ.

Чылайччен сăнарĕ Исмаль. Кун çути сӳнсен, çынсем çӳреме пăрахрĕç. Шăп çакăн пек самантра Исмаль машина патне йăпшăнса пычĕ те. Васкасах сылтăм енчи урапасене, малтине те, хыçалтине те, пекĕпе шăтарчĕ. Сехре хăппи те çумрах-мĕн.

— Эсĕ мĕн хăтланнине йăлтах куртăм! — илтрĕ Исмаль сасартăк. Шартах сикрĕ. Пуçне çĕклесе пăхрĕ те Пишерсеме курах кайрĕ. Тарма пикеннĕччĕ, анчах ун хутне кĕрсе сăмах хушни чарчĕ.

— Çав кирлĕ Тит ашшĕне, ӳлĕмрен аллине çӳле ан çĕклетĕр.

Кун хыççăн Исмаль татах хастарланчĕ, вăл сулахай енне каçрĕ. Ун шухăшне тавçăрнă Пишерсем акă мĕн тума хушрĕ:

— Пĕр тытăннă пек чух, ытларах сиен ту ăна. Кабинине уç та инструменчĕсене ил.

Машина алăкне питĕрме маннă-ши, вăл уçах. Исмаль инструменчĕсене хутаççипех туртса кăларчĕ.

— Çылăхлă япаласене атя çурт хыçне кайса пăрахар, — терĕ Пишерсем. Кайсан-кайсан, вăл Исмале тытса чарчĕ те каларĕ: — Тек эсĕ малалла ан пыр. Санăн килте ларнинчен ырри пулмĕ халĕ. Хутаçа пар, ăна ăçта кирлĕ, çавăнта хамах ывăтса хăварăп. Темĕн чул шырасан та тупаймĕ.

— Аслă канаш паратăн, — килĕшрĕ Исмаль.

* * *

Исмаль сĕтел хушшинчен тăрса уткаласа çӳрерĕ. Хĕл каçа хупăнса тăнă кантăка уçса ячĕ. Шерпет-çке çав уçă сывлăш! Чӳрече умĕнчи хурăн туратти çинче çерçи чĕриклетет. Урамра ачасем выляççĕ.

— Тен, мечĕк тапма тухмалла?— сассăнах каларĕ Исмаль. Анчах амăшĕ сĕтел хушшине ларма хистенĕн туйрĕ. «Мĕншĕн эсĕ, аннем, ыйтуллăн пăхатăн мана? Пишерсем сан тус-и, тесе ыйтатна? Ун чухне эпĕ ăна чи çывăх тус вырăнне хунă, ара, вăл мана хӳтĕлетчĕ-çке.»

Кам вăл Пишерсем? Хăш урамра, ăçти çуртра пурăнать? Мĕнле майпа кунта килме хăнăхнă вăл? Мĕншĕн Исмале хӳтĕлет, ялан ун ушкăнĕ майлă пулать? Çак ыйтусем çине явап пама пултаракан ача çук. Çулĕпе кăшт аслăрахран пулас, ыттисенчен вăл вăйлă, тавçăрулла, кирек мĕнле вăйăра та çĕнтерет. Хăй вăл лутра, сăнĕ хура, хул-çурăмĕ сарлака. Ачасем унтан темшĕн хăраççĕ.

Исмаль вара Пишерсеме турă вырăнне хурать. Тит ашшĕне тавăрма пулăшнă хыççăн тата ытларах хисеплеме пуçларĕ ăна. Шит хăпмасăр çӳрет ун хыççăн анчăкла.

Çуллахи пĕр вырсарникун Пишерсем ертсе кайрĕ вара анчăка.

Исмаль ырă шухăшпа тухнăччĕ ун чух килтен, шкул пахчинчи сăнавлă йăран çинчи купăстана шыв сапмаллаччĕ хĕвел хĕртме пуçличчен. Алкум вĕçĕнче Пишерсем тăнине курах кайрĕ вăл.

— Ай-яй нумай çывăран, ыйхă чăпти-çке эсĕ,— шӳтленĕмĕнлĕ кулкаларĕ Пишерсем, Исмале алă парса.

— Эсĕ мĕн пит ир çĕмĕрттерсе çӳрен? — ыйтрĕ унран Исмаль.

— Эп ир çӳрени ниме те пĕлтермест. Эсĕ ăçта каян? — тĕпчет Пишерсем.

— Пирĕн практика, шкул пахчинче ĕçлетпĕр.

— Айван-çке эсĕ, Исмаль! Шухăшламанччĕ. Пахчаçимĕç ӳстересси — хĕрачасен ĕçĕ. Паян санпа пĕр çĕре çитесшĕнччĕ эпĕ,— пуплерĕ Пишерсем.— Ална сул пахча енне, атя, кайрăмăр.

Пишерсем хушрĕ пулсан, эппин, алă сулмаллах. Анчăк каллех тусĕ хыççăн лĕпĕстетрĕ.

Автовокзала çитрĕç вĕсем. Кĕчĕç. Кунта халăх лăк-тулли. Лараканни ларать, тăраканни тăрать. Теприсем касса умĕнче тĕпĕртетеççĕ.

Такама шырать Пишерсем, пысăк хура куçĕсем ун вут тĕртнĕн ялтăртатаççĕ. Тимлĕн пăхать вăл енчен енне. Каллĕ-маллĕ кумнă хыççăн, шыранине тупаймасăр автовокзалтан каялла тухма шутларĕ-ши Пишерсем. Çук, урама тухма асне те илмен вăл. Исмале икĕ аллинчен тытрĕ те алăк янаххи çумне çурăмĕпе тăратрĕ. Хăй вара алăк тепĕр енне тăчĕ.

Тăраççĕ икĕ ача хуралти пек, çынсене тухса кĕме чăрмантарса.

Акă алăк патне çурăм хыçне кутамкка çакнă ача çывхарчĕ. Пĕрре пăхсах вăл ял ачи пулнине тавçăрса илетĕн. Вăрăмрах кĕпине шăлавар çине кăларнă, пилĕкне шерепеллĕ пиçиххи çыхнă. Пуçĕнче тĕсĕ кайнă карттус, карттус сăмси те лӳчĕркеннĕ.

Ял ачи алăкран тухма тăчĕ, анчах Пишерсем ăна урипе картларĕ.

— Укçа пар. Атту кăларса ямастпăр, — терĕ Пишерсем.

Лешĕ тепĕр енне сулăнчĕ, Исмаль çумĕпе иртесшĕнччĕ.

— Маль, — асăрхаттарчĕ Пишерсем Исмале, урăх ятпа чĕнсе, — ура хур!

Тĕлĕнчĕ хайхискер ял ачи. Татах тухма пикенчĕ, каллех тытса чарчĕç. Аллинче ачан билет. Ларса каяс автобусĕ часах тапранмалла. Ун мĕнпур укçи те çур тенкĕ çеç. Ку укçа хăйне те питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен ăша хĕлхем яман-ха, паçăрах çиес

килнипе вар чăрлатать. Çав укçапа çăкăр туянмалла. Мĕн тăвăн, хаяр куçсенчен хăтăласса сунмарĕ, кăларса тыттарчĕ вара мĕскĕн аллă пуслăх кĕмĕле.

— Сахал! Аллă тупанĕ çине пĕр тенкĕ хур! — хистет Пишерсем ял ачине.

— Урăх çук, кăларса ярăр мана, тархасшăн, — тилмĕрет ял ачи. Билетне вăл шăл хушшине хучĕ. Пушаннă аллипе шăлавар кĕсйисене тавăрса кăтартрĕ ирĕксĕрех.

Ĕненчĕ-ши Пишерсем ăна е алăк патне çĕнĕ ача çывхарнине асăрхарĕ-ши, тек кутăнланса тарăхтармарĕ, ним чĕнмесĕр çул уçрĕ ун валли.

Пишерсем çапла майпа татах, татах автобуспа ларса кайма килнĕ ачасене çаратрĕ. Қаçченех тăрататчĕ-ши вăл Исмале хуралта? Часах пăтăрмах сиксе тухрĕ.

— Ха, кусем мĕн хăтланаççĕ! — кăшкăрса ячĕ чечеклĕ хура тутăр çыхнă хĕрарăм. — Ăçта милиционер? Тыттарса ямалла ку икĕ çăхана!

— Маль! Пăч пул! — хушрĕ Пишерсем Исмале. Хăй çавăнтах куçран çухалчĕ.

— Юрать-ха, милиционерĕ çийĕнчех тупăнмарĕ, лекетчĕç капкăна.

Қаçалапа Пишерсем каллех Исмаль пурăнакан çурт умне пычĕ. Ачасем нумаййăн пуçтарăннă выляма. Пĕтĕм вĕт-шакăр умĕнче вăл Исмаль аллине çур кирпĕч пысăкăш мороженăй тыттарчĕ. Куçне чарсах пăрахрĕ лешĕ кăна кĕтменскер.

— Хăналанă чух çи, çи, — сăйлать Пишерсем, — мороженăй мĕн тути каланине те пĕлместĕн-тĕр-ха.

Тĕрĕсех вăл калани. Амăшĕ вилнĕренпе Исмаль çăварĕнче мороженăй тавраш ирĕлмен. Астăвать-ха вăл мороженăй пăр пек сиввине, шăла кайса тиветчĕ.

— Исмаль, мана тутантар-ха,— тет тусĕ.

— Ме, çырт!— мороженăйне тăсать вăл.

Темиçе кун иртсен, Пишерсем каллех Исмале автовокзала илсе кайрĕ. Ĕçĕ киввиех. Пĕр ачанне укçине илме ĕлкĕрнĕччĕ çеç, милици пырса та тытрĕ. Тĕпчерĕç вара милици уйрăмĕнче вĕсене. Мĕн каланине йăлтах çырчĕç. Исмаль тĕрĕссине каласа пачĕ, вăл суйма хăнăхман-ха.

— Асту, çакăн пек татах усал ĕç тусан, сана юсанма колоние яратпăр, — ятларĕ милицин ачасен уйрăмĕнче ĕçлекен хĕрарăм инспектор.

Исмале киле ячĕç, Пишерсеме тытса юлчĕç.

Унтанпа тек Пишерсем çирĕм саккăрмĕш çурт умне ачасемпе выляма килмест-ха. Çын пачах çухалчĕ. Ăçта шырамаллине Исмаль те пĕлмест.

* * *

Исмаль амăшĕн сăнӳкерчĕкĕ çине пăхмасăр тӳсеймест, темшĕн вăл сочинени çырма пулăшнăнах, калаçнăнах туйăнать. «Анне, — чĕнчĕ вăл, — чухларăн-и мĕнле ача пулнă Пишерсем? Эпĕ ун çулĕпе кайма пултарнă. Пĕррехинче пирĕн подъездра пăтăрмах сиксе тухрĕ. Çав кун пирĕн пата Мария Никитична Степанова чи малтанхи хут ура ярса пусрĕ. Çав куна эпĕ мĕн халичченех тав тăватăп».

9

Икĕ ушкăн та вăрçăлла выляма хатĕрленет. Ачасем подъездри пусма картлашкисем çине патак, хăма татăкĕсем илсе кĕрсе тултарчĕç. Хăшĕ «пăшал», «наган», тепри «шашка», «граната» татах шăкăр-макăр ăсталама тытăнчĕç. Тит йышĕ аялти хутра кĕрмешет. Исмаль юлташĕсем виççĕмĕш хутра, хăйсен хваттерĕ тĕлĕнче аппаланаççĕ. Йывăç каскалани, чутлани, савалани пĕтĕм подъезчĕпех илтĕнсе тăрать.

Ĕç хĕрсе пынă вăхăтра Исмальсен хваттерĕпе хирĕçле алăкран хĕрарăм тухрĕ. Çутă сăнлă хăй, куçĕ хăмăр, сарă çӳçне хыçала чăмакка туса туранă. Ку çуртра вăл çĕнĕ çын-ха, пурăнма пуçлани нумай пулсан пĕр виçĕ эрне. Унăн Утиç ятлă хĕрачи пур. Юлашки вăхăтра вăл пачах курăнмасть, пионер лагерĕнче канать имĕш.

Хваттерне тирпейлесе çитерсен, Утиç амăшĕ алăк çумне ятне «М. Н. Степанова» çырса хăма çаптарчĕ. Хваттер номерне кăтартакан цифрсене те лартрĕ — 22.

Çапла, пусма çине тухнă М. Н. Степанова, ăçта пусам-ши тенĕн, куçĕсене чалтăртаттаркаларĕ.

— Ку мĕне пĕлтерет, тусăмсем? — тĕлĕнсе ыйтрĕ. — Плаки инке ирхине çеç пусма картлашкисене çуса кайрĕ, эсир варалама та ĕлкĕрнĕ. Çын ĕçне хисеплемелле.

— Эпир вăрçă хатĕрĕсем ăсталатпăр! — персе ячĕ пĕри.

— Халĕ çулла. Тулта ăшă. Ирĕкре каскалăр. Хамăр пурăнакан çурта таса тытмалла.

Аялти хутра тĕрмешекен ачасене те çавнах каларĕ вăл.

— Эпир кунта хамăр хуçа! — кăшкăрать Тит.

Çемен кăвар çине краççын сапма пĕлет иккен:

— М. Н. Степанова юлташ, эсĕ хăвăр хутри ачасене пĕл, вĕсене хӳтер.

— Мана — Мария Никитична тесе чĕнеççĕ. Ку пĕрре. Тата хăвăртан аслă çынпа çапла тӳрккес калаçмаççĕ.

Виççĕмĕш хутра йывăç каскалакан ачасем, Исмаль хушнипе,

хăйсен хатĕр-хĕтĕрĕсене йăлтах кил хушшине йăтрĕç, коридор картлашкисене щеткăпа шăлса тасатрĕç, ниçта пĕр çӳп-çап юлмарĕ.

Мария Никитична магазина кайрĕ пулĕ-и е киле кĕчĕ, картишĕнчи ачасем асăрхамарĕç ăна.

Тепĕртакран подъездра шăй-шăй çĕкленчĕ:

— 22-мĕш хваттер çунать!

— Пушар!

Çынсем хĕвĕшкелеме пуçларĕç. Исмальпе унăн юлташĕсем те тӳссе тăраймарĕç, ĕç пăрахсах чупрĕç.

Подъездăн аялти хутĕнче, пусма картлашкисем çинче, пĕр ача та çук, ачасем урайне те тасатман, çункавсем çаплах выртаççĕ.

Исмаль виççĕмĕш хута хăпарчĕ. Çынсем Исмальсен çĕнĕ кӳршин алăкĕ умне пуçтарăннă. Мария Никитична тăрăшсах алăк çумĕнчи çĕткеленсе тăракан сăран татăкĕсене каса-каса илет хачăпа. Сăмсана тĕтĕм шăрши çапать. Урайĕнче кӳлленчĕк, ахăртнех, алхасакан пушара шыв сапса сӳнтерме тивнĕ.

— Мĕн çунма тытăнчĕ малтан?

— Мĕнле çиййĕнчех сиссе илтĕн? — тĕпчеççĕ кил сыхлакан карчăксем.

— Мĕн мĕнли, лараттăмччĕ çăм çиппинчен носки çыхса, — тет Мария Никитична, — сасартăк курах кайрăм: урай çиййĕн тĕтĕм сарăлать, майĕпен кантăк енне туртăнать. Кухньăна чупса кĕтĕм, ним те йăсăрланмасть. Йĕри-тавра пăхса çаврăнтăм, пурте йĕркеллĕ. Пĕтĕм çурт çунмасть-ши тесе, коридора тухрăм. Кунта сывлăш тап-тасах. Эппин, хваттертех амакĕ. Алăка хупнă чух тĕтĕм çăра уççи шăтăкĕнчен палканине асăрхарăм...

Мĕн тăвать-ха малалла Мария Никитична? Çынсем пулăшнипе алăка сăрнă сăрана сĕвет. Акă, тĕлĕнтермĕш куç умĕнче: мамăк тĕлкĕшет! Çурри кăмрăкланнă шăрпăк пĕрчи çĕре ӳкет.

Паллах, хăй тĕллĕн çунма пуçланă япала мар ку, тахăшĕ тĕртнĕ. Пуçа ытлашши минретмесĕрех тĕрĕс шухăш патне пырса тухать Мария Никитична. Паçăр вăл ачасене ăса вĕрентсе ятлакаларĕ, çав юраман. Вĕсенчен пĕри хура юнлă апла. Мĕн курĕ ун пек ача ӳлĕм? Кам пулса ӳсĕ? Шыраса тупмалла ăна, инкекрен çăлмалла. Халь, тути çинче амăшĕн сĕчĕ типмен чух тăна кĕртеймесен, кайран качака сĕчĕ пулăшаймĕ.

— Кам ман алăка вут тĕртрĕ? — лăпкăн кăна ыйтрĕ Мария Никитична пушар курма пухăннă ачасенчен. Йышăнакан тупăнмарĕ. Вĕсем тĕпĕр-тĕпĕр куçран çухалчĕç.

Çынсем пĕр-пĕрин çине чăр-чăрр пăхкаларĕç.

— Юрать-ха, паян хăвăн канмалли кун, унсăрăн шар ку-

раттăмăр,— ахлатрĕ ватă мучи.— Ачасене ытла астартăмăр, уншăн хамăрах айăплă пулĕ.

Пушар хăрушлăхĕ иртсе кайрĕ, халăх саланчĕ. Мария Никитичнăн ăшĕ выртмасть.

— Ашшĕ-амăшĕсемпе юмахласа пăхам.

Çака шухăшпа вăл аялти хутри пĕрремĕш хваттере шăнкăравларĕ. Уçса кĕртрĕç ăна.

Çапла та, капла, терĕ Мария Никитична.

— Мĕн эсир хваттере куçнă-куçман ачасемпе хуçаланма тытăнтăр? — кăмăлсăррăн калаçрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ. — Вĕсем пĕчĕккĕ-ха. Ман Тит ывăлăм, акă, саккăрмĕш класа çеç куçнă. Ўссен, ăс кĕрет. Халĕ выляччăр, вĕсене ан чăрмантарăр. Чул çурт тем чухлĕ вут тĕртсен те çунмасть. Çакна чухлăр кăшт.

— Айăплине тупасах тесен, тĕллесе кăтартмах пултаратăп, — калаçăва хутшăнчĕ упăшки те. — Вăл хăварпа хирĕçле пурăнакан ача — Исмаль. Акă ман машина кабининчен инструментсем çухалчĕç. Эпĕ ăнах çылăха кĕртетĕп, çавах хыптарнă.

— Тытман вăрă, вăрă мар, теççĕ, — сăмах хушрĕ Мария Никитична.

— Ĕнер милици кайса каларăм.

— Пушар кăларакане те çавах!— хăпартланать Тит, ашшĕ ун хутне кĕнине туйса.

— Эсĕ, курнă пулсан, мĕншĕн тытса чармарăн? Маттур йĕкĕт теттĕм сана, — чеен выляткаласа илчĕ куçне Мария Никитична.

— Курнă пулсан, аллине çапса хуçаттăм!— паттăрланать Тит.

— Ма ăна ача çуртне ăсатмаççĕ? Тантăшĕсене пăсать усал ĕçпе, çынсене канлĕ пурăнма памасть, — ĕçлĕ çын пек кăтартма тăрăшать хăйне Тит амăшĕ.

— Путсĕр ĕçпе камăн çыхăнас килтĕр ара. Пурте укçа юратаççĕ, — тет ашшĕ.

— Иккĕшне те ача çуртне ăсатмалла, хваттер пушанать. Ырă çынсем хваттерсĕр асапланаççĕ, — ытлашши тем персе ярасран тутине чăпăртаттарчĕ амăшĕ. Сăхă куçĕсем ялтăртатса илчĕç. Çапах та хăйĕн ĕмĕтне пытарма хал çитереймерĕ.— Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пирех акă шутсăр кирлĕ. Туяннă кавирсене ниçта сарма-çакма çук, выртаççĕ тĕркере.

— Тĕрĕс калаçатăн эсĕ, амăшĕ, — тет упăшки, мĕскĕнленсе. — Ыранах министерствăна каятăп.

— Ăсат, ăсат вĕсене хăвăртрах. Кам тăлăхсене ача çуртне вырнаçтарать, хваттерне çавна параççĕ.

Унччен те пулмасть вăл, диван çинче лараканскер, сиксе тăчĕ те сурчăкне сирпĕте-сирпĕтех упăшкине перекет кассине хăвалама тытăнчĕ, пилĕк пин укçа илсе килме хушать.

— Эсӗ, Степанова юлташ, халех милицие чуп, — терӗ хайхискер Мария Никитичнăна. — Ашкăнчăк Исмаль хăвăн алăкна вут тӗртни ҫинчен каласа пар. Ку вӗсене ача ҫуртне хăвăртрах ăсатма, пире хваттер часрах илме пулăшать.

Мария Никитичнăн ҫакă кил хуҫисен халапне тăнланăҫемӗн ăшӗ вăркама тытăнчӗ.

«Ара, чăн-чăн пушар тин амаланать-иҫ», — сехӗрленчӗ вăл. Вут-кăвар хӗлхемӗ тăлăхсене ҫунтарса кăмрăклатасран хăранипе пуҫран ҫапнăн тухса вăркăнчӗ.

— Хăтармалла! — хăйсем пурăнакан хута чупса хăпарчӗ вăл. Тӳрех ачасем патне кӗресрен тытса чарчӗ хăйне, пăшăрханнă сăн-сăпатпа вӗсене хăратăн кăна.

Коридор чӳречи янк уҫă. Ун янаххи ҫинче вăркăш ҫил вӗрнипе вăрăм хурăн турачӗ симӗс ҫулҫисене вылянтарать. Тăчӗ вара вăл, пӗр савăк сивӗнсе. Шуйханнă шухăш сирӗлмест, ҫавҫавах тăлăхсем тухмаҫҫӗ пуҫӗнчен. «Мӗнле ача-ши вăл Исмаль текенскер? Тит ашшӗ каласа панă пекех япăх-ши? Тен, апла та мар, тен, вӗсене урăхла пулăшмалла?»

Шăнкăравланă хыҫҫăн алăка имшеркке те пӗвӗпе ҫӳллех мар ача уҫрӗ.

— Кӗме юрать-и? — сас пачӗ Мария Никитична.

«Кӗрӗр!» — темерӗ ача. «Кам кирлӗччӗ?» — тесе ҫеҫ ыйтрӗ. Ун куҫӗнче шанманни палăрать.

— Мана, кӳршӗ хӗрарăмне, хăвăр пата кӗртесшӗн те мар-и? — йăл-йăл кулкаларӗ Мария Никитична.

Хӗрарăмăн пит-куҫӗнче хаярлăх тапса тăманнине асăрхарӗ те алăкне яриех уҫрӗ Исмаль.

— Тархасшăн, — чӗнчӗ вăл, — хăна пулăр.

— Тавтапуҫ. Ытла кăмăллă ача иккен эсӗ.

Тӗпелелле иртрӗ Мария Никитична. Тӗрӗсех-мӗн, хваттерӗ пысăк, виҫӗ пӳлӗмлӗ. Ҫăткăн куҫсем ăмсанмалăх пур.

Килнӗ хӗрарăмран шикленнӗн кухньăра хӗрача тăрать тӗршӗнсе. Исмалӗн аппăшӗ — Акук ӗнтӗ ку. Аллинче ун чăмăрла пӗҫернӗ ҫӗрулми.

— Эсир апатланма хатӗрленнӗ пулас? Эп чăрмантаратăп. Чимӗр-ха, эпӗ те паян ҫиме мансах кайнă, тата пӗччен чăмласан та ҫăтăнмасть. Атьăр пӗрле апатланар, э? — сӗнчӗ кӳршӗ.

Акукпа Исмаль ним те чӗнмеҫҫӗ, килнӗ ҫын калаҫăвӗ вӗсене тивмест тейӗн.

— Эсӗ-и-ха вăл Исмаль?

— Эпӗ. Мӗн вара? — Ăна хӗрарăм патакпа хăмсарнăн каяллa чакса тăчӗ вăл.

— Атя ман пата, Исмаль. Яшка, хуплу илсе килетпӗр те пӗрле апатланатпăр, — алăк патнелле утрӗ Мария Никитична,

Исмаль хӑй хыççӑн пырасса шанса. Çаврӑнса пӑхрӗ, лешӗ вырӑнтан та тапранмасть. Пырса çурӑмӗнчен çупӑрларӗ ӑна.— Эсӗ мӗн иккӗленсе тӑран? Эпӗ чӑннипе калатӑп. Утиç хӗрӗм пионер лагерьне кайнӑранпа путлӗн апат та çимен. Атя!

Сасартӑк Исмалӗн кӑмӑлӗ çемçелчӗ, хӑй патне чӗнекен хӗрарӑма тахçанах палланӑн, пӗлнӗн, чи çывӑх çын пек туйрӗ. Утрӗ вара ун хыççӑн.

Мария Никитична, хваттерне каçсан, ачана хуплу хунӑ ывӑс тыттарчӗ, хӑй яшка тултарнӑ кастрюле çӗклерӗ.

Акук çӗнӗ кӳршӗ хӗрарӑмне ӗненсех те пӗтерейммерӗ, шӑлнӗне вашкӑртса илсе тухса кайнӑнах ӑнланчӗ. Пушаршӑн ӑна ятласран пӑшӑрханнӑскер, вӑл алӑкран пуçне кӑларса хӑлхине тӑратрӗ. Сас-хура илтӗнмест. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, хайхискерсем апат-çимӗç çӗклесе те тухрӗç.

— Çул пар! — тет Исмаль хаваслӑн.

Акукӑн ирӗксӗрех алӑкне яриех уçма тиврӗ.

Ачасем, иккӗшӗ те, амӑшӗ пурӑннӑ чухнехи пекех, сӗтел хушшине тӗпӗртетсе кӗрсе ларчӗç. Кӗтеççӗ, аллисенче кашӑк. Темӗн чухлӗ нушаллӑ пурӑнаççӗ пулин те, вӗсенче ача чунӗ хӑрман-ха, ав, выляма та тытӑнчӗç: пӗр-пӗрин кашӑкӗсене тивертсе чанклаттараççӗ кӑна.

Мария Никитична ачасене хӑтӑрмасть, килти пек хуçаланать кунта.

Сӗтел ещӗкӗнчен савӑт-сапа туртса кӑларчӗ, таса маррисене çурӗ, шӑлса типӗтрӗ, вара яшка антарнӑ турилккесене кашнин умне шутарчӗ.

— Çийӗр, çийӗр! — сӑйласа тӑчӗ вӑл ачасене.

Исмаль малтан пӗр кашӑк ӑсса тутанчӗ.

— Ай-ай тутлӑ какай шӳрпи! — кашӑкне çулакаларӗ вӑл.— Кунашкал сӗтеклӗ яшка çинине астумастӑп, тупата.

— Ӳлӗм ялан çакнашкал тутлӑ яшка çийӗн.

— Мӗнле апла? — тӗлӗнет ача.

— Сып, сып! Йӑлтах лӗрккесе яр! — тет Исмале Мария Никитична. — Çиекен путек лайӑх ӳснӗ, тет. Эсӗ, ав, ытла начаркка. Санӑн çирӗпленмелле, унсӑрӑн çара та каяймастӑн.

— И-и! Унччен ӳсетӗпех! — парӑнмасть Исмаль.

Симӗс суханпа çӑмарта тураса хупнӑ кукӑль те килӗшрӗ ачасене.

— Эх, тутлӑ та имӗш! Çуне нумай янӑ, — тет Исмаль, кукӑле çӑвар тулли çыртса.

Апатланнӑ хыççӑн виççӗшӗ пӗрле кашӑк-тирӗке çуса пуçтарса хучӗç.

— Мария Никитична, эсир шахматла выляма пӗлетӗр-и? — ыйтать Исмаль.

— Пĕлетĕп.
— Вĕрент-ха.
Урам енчи пӳлĕме вырнаçса ларчĕç. Тытăнчĕç выляма. Акук пулăшаканни. Вăл «хăна» майлă та пулать, шăллĕне те çул кăтартать.
Шахматла вылянă май, ачисене çаплах калаçтарчĕ Мария Никитична, йăлтах пĕлчĕ вĕсем мĕнле пурăннине. Ăмсанма çук вĕсене нихăш енчен те. Шутсăр шеллерĕ ачасене, ăнланать пурне те, хăй те тăлăх-турат пулнă.
Пушар çинчен те, аялти хутри хваттерте пурăнакансен сипетсĕр калаçăвĕ пирки те сăмах тапратмарĕ Мария Никитична.

* * *

Шăнкăрав янăрарĕ. Шартах сикрĕ Исмаль.
— Кам килчĕ-ши?
Алăк умĕнче Утиç-мĕн, йăл кулса тăрать вăл.
— Ĕç мĕнле пырать, Исмаль?
— Чиперех. Санăн?
— Çуррине яхăн çыртăм, — терĕ Утиç.
— Кĕр.
— Кĕрейместĕп. Пирĕн паян репетици. Сывă пул!
Утиç амăшĕ ĕçлекен заводăн Культура çуртĕнчи драма кружокне çӳрет.
Хĕрачан йăл кулли Исмаль чунне çутатсах пăрахрĕ.
Сĕтел хушшине пырса ларсан, Исмаль каллех амăшĕ çине пăхса илчĕ. Вăл та йăл кулнăн курăнать темшĕн. Унăн сасси хăлхара янăрать.
«Йăл кулă çыннăн чи хаклă парни. Йăл кулсан, пĕр-пĕрне ĕненен, шанан».
«Ĕненетĕп. Туслăх та йăл кулнинчен пуçланать, теççĕ юрăра. Мария Никитична та чи малтан пирĕн пата йăл кулса кĕчĕ. Шăп çав вăхăтра пирĕн хушăри туслăх, тăванлăх пĕр утăм ярса пусрĕ. Çав ырă утăм мар-ши кӳршĕ хĕрарăмне пирĕншĕн пин-пин утăм тума хавхалантараканĕ?»

## 10

Мария Никитична завода çĕрлехи сменăна тухма калаçса татăлчĕ. Кăнтăрла пĕчĕк кӳршисен ĕçĕпе çӳремелле ун. Тĕп тĕллев çапла: тăлăхсене амăшĕшĕн пенси кăларса парасси.
Чи малтан Мария Никитична райĕçтăвкома кайрĕ. Собес пайĕн пуçлăхĕ вырăнтах. Мĕн сăлтавпа килнине йăлтах каласа пачĕ ăна.

— Пенси тухать, — пĕлтерчĕ лешĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, — анчах опекун, тепĕр тĕслĕ каласан: ачасене пăхакан çитĕннĕ çын — тăван кирлĕ. Укçа-тенкĕ çул çитмен ачасен аллине пама юрамасть.

Чупрĕ Мария Никитична пĕчĕк кӳршĕсем патне. Кĕчĕ те шартах сикрĕ. Акукпа Исмаль диван кĕтессине тĕршĕннĕ те макăрса ларaççĕ.

— Мĕн пулнă сире, мĕншĕн йĕретĕр? — ыйтрĕ пăшăрханса ӳкнĕ Мария Никитична.

— Тит ашшĕ килсе кайрĕ. Пире ачасен çуртне яраççĕ, терĕ вăл. Хатĕрленме хушрĕ, — йĕпе питне чышкипе шăла-шăла калать Исмаль.

— Иксĕмĕре икĕ çĕре ярaççĕ, тет,— ӳлет Акук, çăвар уçайми. — Эпир уйрăласшăн мар.

— Килтен ниçта та каймастпăр. Эпир ĕнтĕ ӳснĕ, хамăрах пурăнма пултаратпăр!

— Паллах, пурăнма пултаратăр. Часах аннĕршĕн пенси тухма тытăнать. Собесра каларĕç, — лăплантарма пикенчĕ вĕсене аслă тусĕ. — Ан кулянăр, ниçта та каймастăр, эпĕ ирĕк памастăп.

— Чăнах-и? — Пĕрин те, теприн те куçĕсем ăшшăн йăлтăртатрĕç.

Вара пĕрле аталăх пулма пултаракан тăван-пĕтен шырама тытăнчĕç. Хулара вĕсен йыснăшĕ пурăнать иккен. Вăл амăшĕпе пĕртăван хĕрин упăшки.

Ачасене нумай кирлĕ-и, савăнăç ыталарĕ те, шăлĕсем çине, ав, тутисем витĕнмеççĕ.

Мария Никитична ачасен йыснăшне шырарĕ.

Урам вĕçĕнче, айлăмра лартнă пысăк йывăç çурт. Пулă куçлă, сарлака хулпуççиллĕ этем кĕтсе илчĕ ăна. Сăмах чĕниччĕнех чунĕ сӳлетрĕ килнĕ хĕрарăмăн. Хăйне мĕнле инкек хăваланине çинчен пĕлтерчĕ вăл.

— Тавтапуç та, анчах çын ачи-пăчипе аппаланма пачах вăхăтăм çук, — татса хучĕ хайхискер.

— Куратăп-ха. Сирĕн хăвăрăн çурт-йĕр, пахчара улма-çырла. Çимĕçне пасарта сутса лармалла, — сăмахпа тĕксе илчĕ Мария Никитична чунĕ кӳтнипе. — Çапах та ăнланăр ĕнтĕ, ачасен çывăх тăван-пĕтен пачах çук.

— Мĕнле çук? Ашшĕ пур вĕсен! Пĕлетĕп-ха унăн урăх çемье. Пурпĕрех, вăл хăйĕн ачисене пăхма тивĕç.

— Апла пулин те вăл ачисем патне пĕр хут та пырса кайман.

Темле калаççан та ӳкĕте кĕмерĕ «йысна» текенскер.

Пуçне усса пырса кĕчĕ Мария Никитична килне. Утиç пио-

нерсен лагерĕнчен таврăннă-мĕн, чупса пырса ыталаса илчĕ вăл амăшне.

— Қаçар, хĕрĕм, пырса илейменшĕн.

— Пĕлетĕп-çке эсĕ ĕçре пулнине.

— Паян эпĕ ĕçе касхи сменăна каятăп, — пĕлтерчĕ вăл хĕрачине.

Диван çине выртрĕ Мария Никитична кăшт канас тесе. Çумне кушак çури евĕр Утиç вырнаçрĕ. Тем çинчен те каласрĕç вара. Хĕрĕ лагерьте пулса иртнĕ мыскарасене аса илсе култарчĕ, амăшĕ кӳршисен хуйхи-суйхи çинчен пуплерĕ.

— Паллаш эсĕ вĕсемпе, Утиç.

— Лагере кайиччен ку çуртра пурăнакан ачасемпе пуринпе те паллашнă эпĕ. Исмаль, ав, кĕркунне эпĕ çӳремелли класрах вĕренет.

— Эсĕ туслан вĕсемпе. Қапла авантарах пулĕ. Ан тунсăхла, эпĕ ĕçе каятăп, — чăп чуптурĕ вăл хĕрачине.

Мария Никитична, çула май Акукпа Исмаль патне кĕрсе, вĕсене Утиç патне каçма хушса хăварчĕ. Лешсем чунтан савăнчĕç.

— Ман пата килме мĕнле ăс çитертĕр? — тĕлĕнет Утиç хĕпĕртенипе.

Паллашрĕç пĕр-пĕринпе. Виççĕн пĕрре те кичем мар. Қалаçмалли те, вăйă-кулă та тупăнсах пырать.

Выляччăрах, вĕсен телейĕшĕн тăрăшакан çын пур халĕ тĕнчере. Вăл сталевар-хĕрарăм, заводра вĕри кăмака умĕнче тăрать. Хурçă шăратма çăмăл мар, уйрăмах çĕрлехи сменăра. Ачасенчен чăн-чăн çын шăратма вара пин хут йывăртарах.

Вĕри кăмака умĕнче те Мария Никитична самантлăха та ачасене манмасть, çаплах вĕсем çинчен шухăшлать.

* * *

Исмалĕн, ручкине сĕтел çине хурсан, каллех амăшĕпе калаçас килчĕ. «Мĕншĕн чĕнместĕн? Тем ыйтса пĕлес пек эсĕ... Тен, Мария Никитична пирки? Вăл сан пекех ырă кăмăллă çын, вăл чăн-чăн коммунист. Пире вăл хăтарса хăварчĕ, унсăрăн Акукпа иксĕмĕре те тискер çынсем тахçанах çăтса яратчĕç».

## 11

Пуçланă ĕçе вĕçне çитериччен пайтах вăхăт кирлĕ. Кунсем иртеççĕ те иртеççĕ.

Исмаль, Акук, Утиç çĕнĕ ĕмĕтпе çывăрма выртрĕç. Ырантан пуçласа вĕсем Утиç амăшĕ тăрăшнипе чăн-чăн ĕçе кӳлĕнеççĕ.

— Усăсăр сулланса çӳрени юлхава ертет, — терĕ вĕсене Мария Никитична.

Ирхине чи малтан хĕвел вăранчĕ. Вăл хăйĕн çутă та ăшă шевлине ачасем çине сапрĕ.

Вăранчĕç виçĕ тантăш. Васкаса çăвăнчĕç, сĕтел хушшине ларчĕç.

— Тăраниччен çийĕр, сирĕн кăнтăрлаччен тӳсмелле, — сăйлать Мария Никитична ачасене.

Автобуспа ларса кайрĕç вĕсем, парк умĕнче анса юлчĕç.

— Тараса тĕрĕс-тĕкелех ларать!— кăшкăрса ячĕ Исмаль, вырăна пуринчен малтан çитсе тăрса.

Ĕнер виççĕшĕ те тарасапа мĕнле ĕçлемеллине вĕренчĕç.

Парк çумĕпе халăх нумай çӳрет, хăйĕн виçине пĕлме ухута çынсем сахал пулмĕç.

— Пĕрле ĕçлеме хаваслă пулĕ, — терĕ Мария Никитична. — Акук— виçекенни, Утиç — квитанци çырса параканĕ, Исмаль, эсĕ — кассир, кашнинчен виçĕ пус илсе тăраканĕ. Квитанци икĕ пачкă, укçа хума сумки Исмаль çумĕнче. Вăлах, кун вĕçленсен, пухнă укçана кантура кайса парать.

— Чи малтан хам виçĕнем-ха, тен, эпĕ ĕнертенпе пĕр пăт хутшăннă, — тараса çине хăпарса тăчĕ Исмаль. — Тата ман ал çăмăл!

— Халех пĕлĕпĕр, — терĕ кулкаласа Утиç. — Çĕр пăт туртатăн пулĕ-ха.

Вăл пĕчĕк кире пуканĕсене виçесене пайланă тимĕр хăйă тăрăх унталла-кунталла шутаркаларĕ. Тупăнчĕ-тупăнчех тĕнĕл ниçталла тайăлмасăр тӳп-тӳрĕ тăракан вырăн.— И-и, ара, эсĕ вĕлтĕрти лĕпĕш кăна! Хĕрĕх кило та таяймастăн!

— Самăр çын вăл — мăран. Эпĕ ырханкка пулин те, ав, епле вăйлă,— алă шăнăрне хытарса кăтартрĕ Исмаль.

Çак вăхăтра пĕр мăнтăркка хĕрарăм чарăнса тăчĕ.

— Тараси ĕçлет-и? Хуçи кам кунта? — ыйтрĕ.

— Тараси ĕçлет. Хуçисем — эпир, — пĕлтерчĕ Утиç.

— Эппин, пĕлес-ха, миçе пăт таятăп-ши?— пуплерĕ мăнтăркка хĕрарăм.

— Ан часрах,— асăрхаттарчĕ Акук шăллĕне.— Эпир ĕç тума килнĕ кунта.

Мария Никитична ачасен хăтланăвне кулкаласа пăхса тăчĕ. Юлашкинчен татах канашсем, сĕнӳсем паркаларĕ те, сывпуллашса, ачасем патĕнчен кайрĕ.

Иртнĕ кунсенче Мария Никитична Акукпа Исмаль ашшĕне шырарĕ, ун йĕрĕ çине ӳкрĕ-ӳкрех. Стройкăра ĕçлет-мĕн. Управленинче ун ячĕ тап-таса. Тулли ĕç укçи илет те никампа пайлаймасăр пĕччен ыр курать.

— Мĕне пăхаççĕ судисполнительсем? — чунтан тарăхрĕ Мария Никитична. Ачасен ашшĕпе калаçас кăмăл пулмарĕ ун.

Халăх судне пырса кĕчĕ вăл. «Исполнительнăй лист» текеннине шыраса, нумай хут пăтраштарчĕç кунта ĕçлекенсем. Мĕн кирли аран-аран тупăнчĕ.

— Çапла, — терĕç вĕсем, — ашшĕн ĕç укçинчен алимент тытса тăма суд туни пур. Анчах укçа илсе тăраканĕ вилнĕ пирки ĕçе пĕтернĕ.

— Амăшĕ вилнĕ, ачисем юлнă, çиме ыйтаççĕ, — кăмăлсăррăн каларĕ Мария Никитична.

— Ăнланатпăр-ха. Укçа-тенке ачасен аллине пама саккун хушмасть. Аталăх, опекун тупчăр.

Чылай пуплерĕç вĕсем. Ырă сĕнўсем пачĕç Мария Никитичнăна. Чунĕ çĕкленчĕ ун. Хавасланнăскер, вăл алă тытсах сывпуллашрĕ.

Урама тухсан хĕвел çине пăхса илчĕ Мария Никитична. Яшка пĕçерме вăхăт, часах пĕчĕк ĕçченсем кăнтăр апатне таврăнĕç. Çак шухăшпа вăл троллейбус çине васкарĕ.

Подъезда кĕрсен, хăйсем пурăнакан хута ача пек çăмăллăн хăпарчĕ. Алăкне уçма сумкинчен çăраççи кăларнăччĕ çеç, сасартăк курах кайрĕ: хирĕçлисен алăкĕ кăшт уçă.

— Ачасем ĕçрен таврăннă та-ши? — тĕлĕнчĕ хайхискер. Вĕсен хваттер алăкĕн урати урлă каçнă-каçман чĕнчĕ:— Акук! Исмаль!

— Кам унта? — сас пачĕ шалта. — Исмаль те, Акук та çук! Кунта çĕнĕ хуçасем!

Йăнăшпа урăх хваттере кĕмерĕм пулĕ-çке тесе, Мария Никитична хваттертен каялла тухрĕ. Тĕрĕсех. Вăл алăкран тепĕр хут кĕрсе тĕпелелле иртрĕ. Пысăк пўлĕмре Тит амăшĕ тăрмашать.

Çак вăхăтра Акукпа Исмаль çитсе тăчĕç. Апат çиме таврăннă ĕнтĕ. Кăн-н пăхрĕç хайхискерсем. Мария Никитична ачасем те ним ăнланманнине тавçăрчĕ те Тит амăшĕнчен ыйтрĕ:

— Мĕн хăтланатăр эсир кунта?

— Суккăр-и-мĕн эсир?— хавaслăн эхĕлтетсе илчĕ вăл.— Хваттере çĕнĕ гарнитур лартатăп. Пўлĕме эрешлетĕп, пурăнма килпетлĕ пултăр.

— Эх, эсреметсем! Кам ирĕк пачĕ сире çын хваттерне кĕрсе лапăртатма?

— Мĕнле хăян çапла калама? — кăшкăрса пăрахрĕ Тит амăшĕ çиллес сассипе.— Пĕлетĕн-и çакă гарнитур мĕн чул тăнине? Вунă пин! Югославирен. Эсĕ «лапăртатма» тесе калама

хăятăн. Тепĕр тесен, ку пирĕн хваттер. Хам хваттерте мĕн тăвас тетĕп, çавна тăватăп.

— Суятăн, ку тăлăхсен хваттерĕ.

— Кая юлнă çын эсĕ. Тăлăхсене ман упăшка ача çуртне вырнаçтарать, — хастарланать çаплах хĕрарăм, чакăр бархатпа сăрнă илемлĕ пукансене сиктеркелесе.

— Ачасем килтен ниçта та каймаççĕ.

— Кам пăхĕ вĕсене? — Аллисене пилĕкĕнчен тытса сурчăкĕсене сирпĕтет Тит амăшĕ. — Выçса вилччĕр-и? Исмалĕ шăпанана тухать. Ачисене пулăшас чух эсир чăкăлташса тăратăр тата. Хăвăр, путех, коммунист пулĕ-ха.

— Тĕрĕс, эпĕ — коммунист! Эппин, коммунистăн çирĕп сăмахне илт: ачасем килтех пурăнаççĕ. Вĕсене амăшĕшĕн часах пенси тухса тăма тытăнать. Ашшĕнчен те халь-халь укçа шыраса илмелле, — терĕ Мария Никитична, тарăхнипе сассине хăпартса.

— Суян! Ман упăшка йăлтах пĕлнĕ. Вĕсене нимле укçа та тыттармаççĕ, мĕншĕн тесен опекун çук, — парăнмасть çапах йĕксĕк.

— Мĕнле çук? Эпĕ вĕсен опекунĕ!

Мария Никитичнăна çак шухăш халăх сучĕн кантурĕнчен тухсан пырса кĕнĕччĕ. Халĕ вара, ачасен хваттерĕнче пуççăрланакан сĕмсĕркке хĕрарăм саркаланнине курчĕ те сасартăк çак шухăш çирĕпленсех çитрĕ. Çавăнпа хăюллăн тепĕр хут каларĕ:

— Çапла, вĕсен опекунĕ — эпĕ. Халех тасалăр кунтан, унсăрăн хăвăра ӳкĕнмелле пулĕ.

— Ах, чее эсĕ! Ачасен хваттерне хăв илесшĕн пулĕ-ха! Чухлатпăр эпир сирĕн йышшисене! — ĕрлет Тит амăшĕ. Тухса каймा шутламасть те усалскер.

Мария Никитична йĕксĕке тек ӳкĕтлесе-мĕн тăмарĕ. Килне каçрĕ те телефонпа кирлĕ çынсене чĕнчĕ. Пухăннисем Тит амăшĕ пирки акт çырчĕç. Ĕç суда ăсанчĕ.

Çурт умĕнчи вăрăм хурăнăн мĕлки хăй урлă каçнă çĕрелле яшка пиçрĕ.

## 12

Каç пуларахпа, хĕвел анас чух, кăнтăртан кăваккăн-шуррăн курăнса катрамланнă çумăр пĕлĕчĕсем тухрĕç. Çакна пула Исмаль, тем пек шыва кĕрес килсен те, Атăл хĕррине анма шутламарĕ. Вăл çурт умĕнчи, çул урлă, çеремлĕ вырăна вырнаçтарнă çаврака сĕтел умне пырса ларчĕ. Çумăр пĕлĕчĕсене сăнама тытăнчĕ Исмаль. Акă, аслати кăлтăртатрĕ майĕпен.

Унччен те пулмарӗ, тахӑшӗ хыҫалтан пырса унӑн куҫне ал лаптӑкӗпе хап! хупларӗ.

— Ай-уй! — пӑшӑрханчӗ Исмаль. — Кам ку?

Аллисене каялла ярса хыпашлама пуҫларӗ. Ҫук, пурпӗрех чухлаймасть. Пӗри ахӑлтатса илчӗ. Тит кулли манерлех. Тит Ҫеменпе ҫӳрекенччӗ. Ҫав пулма кирлӗ.

— Ҫемен! — терӗ Исмаль.

— Пӗлеймерӗн!

— Тусун ӑшӑ аллине сисейми те пултӑн, эппин! — кӳреннӗн каларӗ куҫ хуплаканӗ, аллине Исмаль куҫӗнчен сирсе.

Ҫаврӑнса пӑхрӗ те Исмаль, паллана ҫынна курах кайрӗ.

— Ай-уй! Эсӗ-ҫке ку, Пишерсем! Хӑҫантанпа курман сана, ӑҫта пурӑнтӑн ку темӗн?

— Хуларах. Эсӗ паллами пултӑн мана, — шӑл йӗрет Пишерсем.

Ҫак вӑхӑтра Исмаль айккинче тӑракан Тита курчӗ.

— Тит тусӑм, эсӗ пӳрт кӗтессине кайса тӗрекле-ха, — хушрӗ Пишерсем. — Ман иптешпе вӑрттӑн ӗҫ ҫинчен юмахламалла.

Тит куҫран ҫухалчӗ. Пишерсем сак ҫине Исмальпе юнашар пырса ларчӗ.

Пишерсем Титпа туслашнӑ. Мӗнле ҫын вӑл Пишерсем? Ҫемьере инкек тапӑртатнӑ чух вӑл пырса алӑ тӑсать. Ахӑртнех, лайӑх ача пулӗ вӑл. Унтан автобус вокзалӗнче ял ачисене ҫаратни куҫ умне тухса тӑчӗ. Ҫакӑншӑн милицин ача-пӑча уйрӑмӗнче ӗҫлекен инспекторӗ ятлани халӗ те хӑлхара янӑрать. Ҫак самантра Исмаль ниепле те тӗрӗс хак параймарӗ Пишерсеме.

Сӑмахран, акӑ, Исмаль текех инкек ҫыхӑннӑ ҫемье ачи шутланмасть. Ҫавӑнпа юлашки вӑхӑтра Пишерсем ун патне килсе тухман.

Иртнӗ кунсенче улшӑнусем пулса иртрӗҫ.

Чи малтан ырри ҫинчен.

Акукпа Исмалӗн халӗ опекун пур. Вӑл Мария Никитична, ачасене телей парнелекен. Тӑлӑхсен чи ҫывӑх тусӗ пулса тӑчӗ вӑл. Ӑна анне тесен те ҫылӑх мар.

Почта урлӑ пенси, алимент килчӗ. Ачасен куҫ умӗнчех Мария Никитична алӑ пусса укҫине илсе юлчӗ. Вара сӗтел хушшине ларсах мӗн-мӗн туянмалли пирки сӳтсе яврӗҫ, манасран хут ҫине ҫырчӗҫ, вара ушкӑнпа магазин тӑрӑх кайрӗҫ.

Ӗнтӗ учебниксем, ҫуллахи кӗпесем, майка-труҫиксем сумкӑра. Шкула ҫӳремелли костюмлӑх укҫа юлнӑ-ха. Вӗсене тепӗр магазинра сутаҫҫӗ. Акукпа Утиҫ тем курнӑ, лавкка умӗнчен ниепле те хӑпаймаҫҫӗ.

— Анне, кил-ха, — чӗнет Утиҫ, кӑчӑк туртса. — Ҫивӗте яма

шурă капрон хăю пур кунта. Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче шкула шукăль каймалла пирĕн.

Хĕрачасен кăмăлне татма юрать-и вара?

Ҫиле пурте ҫуталса таврăнчĕҫ.

Тепĕр сăтăрăмра вара урана тăхăнмалли пушмак-ҫăматăсем туянас тесе сăмах татрĕҫ.

Чуна тарăхтармалли те пулчĕ ҫакă хушăра.

Пĕррехинче ачасем патне «ашшĕ» текенни пычĕ. Пушă алăпа пырса кĕме мĕнле хăйнă-ши, мăнтарăн. Ҫонфетпа сăйласчĕ иҫмасса. Ывăлĕпе хĕрачи мĕнле пурăннипе те кăсăкланмарĕ ҫын.

— Хваттер пайлама тивет, — пĕлтерчĕ хайхискер.

Хăраса ӳкнĕ ачасем ҫийĕнчех сăмах хушма та анрарĕҫ. Кăшт сывлăш ҫавăрсан, Исмаль тин ҫапла קаларĕ:

— Эпир сире палламастпăр. Пире пăхакан хĕрарăм пур, унпа калаҫăр.

— Ах, чĕлхӳ ытла вăрăм-ҫке сан. Ăна касса татмалла санне, — ҫиллес куҫĕсенчен вут тăкăнчĕ «ашшĕн».

Акук Мария Никитичнăна чĕнсе каҫрĕ.

— Сире Утиҫ кĕтет, — куҫ хĕсрĕ вăл ачасене. Тухса кайрĕҫ вара Акукпа Исмаль.

«Ашшĕпе» калаҫнă хыҫҫăн Мария Никитичнăн каллех чупма тиврĕ. Шĕкĕр турра, теҫҫĕ вара ун пек чух: ачасен хваттерĕнче пай шырасси «ашшĕн» тахҫанах вăхăт иртнĕ. Хваттерне амăшне ĕҫленĕ ҫĕртен панă. Ордерĕ те ун ячĕпех. Халĕ ĕнтĕ ҫемьере чи асли — Акук. Ордере вăхăт ҫитсен ун ҫине куҫарĕҫ.

Виҫҫĕмĕш — Тит амăшне суд туни. Ăна ҫын хваттерне сĕмсĕрле ҫĕмĕрсе кĕнишĕн, унта пуҫсăрланнăшăн айăпларĕҫ.

Судра тепĕр ĕҫ тăрă шыв ҫине тухрĕ. Пушара та Тит амăшĕ йĕркеленĕ. Вăл хушнă иккен ывăлне Мария Никитична алăкне вут тĕртме. Ку хăйĕн тĕллевне пурнăҫлама кирлĕ пулнă имĕш. Тискер ĕҫе Исмаль ҫине йăвантарса, ăна ача ҫуртне е колоние ăсаттарма шутланă. Ҫапла майпа тăлăхсен пушаннă хваттерне ҫăмăллăнах йышăнма пулатчĕ-мĕн.

Тит амăшĕсĕр тăрса юлчĕ. Никам та ĕнтĕ ăна тăтăшах пăхса, сыхласа тăмасть. Ашшĕ ĕҫре ун. Таврăнсан та, машинипе аппаланать те уйри ҫулсем тăрăх ҫил хăвалама чуптарать. Пишерсемшĕн ку шăпах меллĕ те, уншăн тус-юлташ хатĕр.

Тăрать-ха халь Пишерсем Исмаль ҫумĕнче, сăмах тапратаймасăр. Вара ҫапла каласа хучĕ:

— Эсĕ, Исмаль, мана парăмлине манман-и?

— Мĕнле парăм пирки калатăн эсĕ?

— Пилĕк тенкĕ таврса памарăн.

— Хăҫан илнĕ эпĕ санран?

— Çавăн чух ара.

— Ан суй. Эсĕ мана нихăçан та пĕр пус паман.

— Кăлăхах кутăнланан, — унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ Пишерсем. — Енчен те хăв ирĕкӳпе памастăн пулсан, милицие сĕтĕрсе каятăп. Тит ашшĕн машининчен инструментсем йăкăртрăн. Ахаль каçармаççĕ куншăн.

— Мантăн-и? Ăна эсĕ вĕскĕртнипе илтĕм, — тарăхнипе ăнлантарма тытăнчĕ Исмаль. — Çурт хыçне тухсан, инструментсене хăв илтĕн. Пĕлместĕп тетĕн-и эсĕ вĕсене сутнине. Эпĕ ун чух, айванскер, сана ĕненнĕ. Халĕ мĕн калăн? Милицинче тăм писменсем лармаççĕ.

— Юрĕ, каймăпăр милицине, — шăл витĕр чăрт! сурчĕ Пишерсем. — Пилĕк тенкĕ укçа пар та иртнине манăпăр.

— Укçа çук ман.

— Тараса патĕнче ĕçлетĕн ху, сумки-сумкипе пуçтаратăр, укçа çук тетĕн.

— Вăл патшалăх укçи, ман мар.

— Памасан, асту!— аллине чăмăртаса кăтартрĕ те çурт кĕтесĕнче кĕтсе тăракан Тит патнелле утрĕ. Унтан иккĕшĕ те пăч çухалчĕç.

* * *

Сочинени çырнă май Исмаль амăшĕпе калаçма хăнăхсах çитрĕ. Вăл ăс парать пекех туйăнать ăна. Халĕ, ав, ун пит-куçĕнче пăшăрхану пуррине асăрхарĕ. «Анне, эсĕ хĕрхенместĕн пулĕ те мана? Пишерсемрен эпĕ ним чухлĕ те хăраман. Ĕçлени хăват панă».

13

Сар çупа танлаштараççĕ çуллахи ăшă çанталăка. Мĕншĕн-ши? Тен, сар çу ирĕлсе юхса пĕтнĕн кунсем те пĕрин хыççăн тепри хăвăрт иртсе кайнăран? Пулĕ. Исмаль, ав, кантăк умĕнче ӳсекен лăстăркка хурăнăн симĕс çулçисем хушшинче саралнисене курчĕ. Кам çапла ашкăнать симĕс тума пăсса? Никам та мар, кĕр ĕçĕ ку. Çав ытараймасть сарă-кĕмĕл тĕссене. Вăл, çу вĕçленмесĕрех, хутран-ситрен, ир-каç çынсем сисиччен, симĕс çулçăсене сарă сăрпа сăрласа илет.

Атăл шывĕ те ерипен сивĕнет. Кăна ватă çынсем çеç туяççĕ-ха, вĕсем ĕнтĕ шыва кĕме пăрахрĕç. Ача-пăча вара çаплах шывран тухмасть, чӳхенеççĕ çаплах хур-акăшла, чăмаççĕ çăрттан пулă пек.

Шкул, ав, хăйĕн йышне кĕтет. Вăл çĕнелсе капăрланнă.

Август уйăхĕн юлашки кунĕсем... Чунра тем хуçаланать, ăнланма хĕн. Уяв умĕнхи пек кăмăл çĕкленет.

Виçӗ ача — Исмаль, Акук, Утиç — ӗç тилхепине алӑран ямарӗç-ха, мӗн шкула кайиччен ӗçе çӳреме пӑрахасшӑн мар.

Акӑ августӑн вӑтӑрмӗшӗ çитрӗ.

Шупашкар пристанне аялтан та, çӳлтен те пӑрахутсем килсе йӑпшӑнаççӗ. Мӗн чухлӗ турист! Таçтан-таçтан килнӗ çын та пур вӗсем хушшинче. Пурте вӗсем Чӑваш çӗршывӗн тӗп хулипе паллашасшӑн. Курмалли, çӗнӗрен пӗлмелли пур. Вӗсем Чапаев музейне, Шупашкар ГЭСне, космонавт çуралса ӳснӗ яла çитсе курасшӑн.

Туристсем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн çыранран хӑпарса аслӑ урама тухаççӗ. Вӗсен пӗртен-пӗр çул — парк çумӗпе иртмелле.

Космонавт çӗр çине вӗçсе аннине кӑтартакан пысӑк плакат çумӗнче — тараса. Те унпа ӗçлекен йӑлтӑркка пит-куçлӑ ачасене ытараймасӑр черет тӑрсах виçӗнеççӗ туристсем. Исмалӗ аран укçа илсе ӗлкӗрет.

Кам кӑна çук-ши туристсем хушшинче? Хӑшпӗрисем хуп-хура ӳтлӗ. Шӑлӗсем вара шап-шурӑ. Çӳçӗсем кӑтра.

— Африканецсем, — тет вӗсем пирки Исмаль.

— Африка питӗ аякра-çке, унтанах килмен-тӗр, — иккӗленет Утиç.

— Эпир венгрсем, — тет пӗри. Вӑл тарасаçӑсене значоксем парнелет.

Виçӗннишӗн виçӗ пус тӳлет кашни. Шутласан, виçӗ пус çав тери пӗчӗк укçа. Анчах ушкӑн сурсан, кӳлӗ пулать, тенӗн, кун каçа пысӑк хутаç тулать.

Исмаль малтанхи кунсенче укçа хума, магазинти пек темиçе ещӗклӗ касса ӑсталарӗ. Халӗ ун пӑхӑр укçасем: пилӗк, виçӗ, икӗ, пӗр пус — кашни расна выртать. Кӗмӗл укçасем валли икӗ пӳлме. Пӗрне вунӑ пуслӑххисене, теприне çирӗм пуслӑххисене пӑрахать. Капла ваклама та, шутлама та меллӗ.

Çак асӑннӑ августӑн вӑтӑрмӗшӗнче юлашки кунсенчи пекех кӑнтӑрла киле каймарӗç, килте пурпӗрех Мария Никитична çук, вӑл — заводра. Тата вӗсем вӑхӑта шеллерӗç. Укçа ытларах пухасшӑн, çынсене те ырӑ тӑвас килет.

Тарасаçӑсем, хӑйсемпе илсе килнӗ апата çырткаласа, термосран юхтарса вӗри кофе ӗçрӗç. Хырӑм выççан, кирек мӗн те питӗ тутлӑ.

Ӗнтӗ вӑй кӗчӗ, эппин, каллех — ӗçе!

Тараса пушӑ тӑмасть. Ывӑсси çине хӑпараççӗ, анаççӗ, кашни хӑйӗн виçине пӗлет, виçӗ пус тӳлет.

Тепри-тепри ӗненмест ачасене. Акӑ кӑвак чечеклӗ кӗпе тӑхӑннӑ, пуçне шурӑ тутӑр çыхнӑ ватӑрах хӗрарӑм виçӗннӗ хыççӑн та пӑрахса каймарӗ, хӑюсӑррӑн пӑхкалать ачасем ӗçленине. Юлашкинчен çапла каларӗ:

— Атьсемӗр, эсир йӑнӑшмарӑр-ши? — Ачасем ун ҫине чӑрр пӑхса илчӗҫ.— Тупата, хам виҫене ӗненместӗп, ытла нумай. Ҫав таранччenex йывӑрланни аван мар, тетӗп.

— Йӑнӑшаканах марччӗ те,— йӑпатнӑн сӑмах хушрӗ Акук.

— Аппа, иккӗленен пулсан, атя ҫӗнӗрен виҫӗпӗр,— Исмаль хӗрарӑма тараса ывси ҫине хӑпарма пулӑшас шутпа хулӗнчен ярса тытрӗ.

— Уншӑн укҫа илместпӗр,— килӗшет Утиҫ те.

Ачасем сатурланнипе хӗпӗртенӗ хӗрарӑм ӑшшӑн кулкаласа илчӗ. Вара урисене йывӑррӑн пускаласа улӑхрӗ. Тӑрать хускалмасӑр.

Акукпа Утиҫ кире пуканӗсене каллӗ-маллӗ шутарма тытӑнчӗҫ. Исмаль вӗсен аллисене куҫ илмесӗр сӑнать. Тараса хулли, сехет йӗппи сулланма чарӑннӑн, тӳп-тӳр шайлашрӗ.

— Тӑхӑрвун тӑваттӑ! — терӗ Исмаль.

— Тӗрӗсех, эппин,— йӑвашшӑн килӗшрӗ хӗрарӑм.

— Маттур эсир, ҫепӗҫскерсем,— мухтать вӗсене хӗрарӑм.— Ҫын кӑмӑлне хуҫмастӑр, аллӑрсем — ылтӑн. Халех паллӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, ӗҫчен ҫын пулса ӳсетӗр. Аҫӑр-аннӗрсен савӑнӑҫӗ эсир.

Ҫынпа вӑрахчен сӑмах ваклама май та ҫук ачасен. Хӗрарӑм, ҫакна чухланӑскер, хӑй ҫулӗпе уттарчӗ.

Ӗҫ кунӗ вӗҫленсе килет. Тараса ҫаплах пушанмасть.

Виҫе ҫинчен аннӑ кашта пек вӑрӑм арҫын Исмале укҫа тӑсать. Лешӗ, пур, пуҫне парк еннелле пӑрнӑ та кӑн-н пӑхать. Вӗрене айӗнче каллех Титпа Пишерсем тӑнине асӑрхарӗ вӑл. Эрнипех ӗнтӗ вӗсем, ҫак вӑхӑтра, вӗрене ҫумне пырса тайӑнаҫҫӗ. Кама кӗтеҫҫӗ-ши?

— Тусӑм, васка-ха,— илтрӗ вӑл. Ун умӗнче вӑрӑм ҫын тӑрать.

— Каҫарӑр, тете,— ҫепӗҫҫӗн каларӗ Исмаль.— Сирӗн вунӑ пус-и? Ҫичӗ пус каялла тухать сире. Халех...

Исмаль пӗр ещӗкрен пилӗк пус, тепринчен — икӗ пус илсе пачӗ ҫынна.

Унччен те пулмарӗ Титпа Пишерсем тараса патне пырса тӑчӗҫ. Сӑмах-мӗн чӗнмеҫҫӗ. Вӗсем касса ҫине чӑрлаттарса пӑхнӑн туйӑнчӗ Исмале. «Ы-х-х, ҫӑткӑнсем,— ӑшра ятларӗ вӗсене.— Иртсе кайӑр!»

Лешсем Исмаль шухӑшне вуланӑнах куҫран ҫухалчӗҫ. Ан та кала, пӑч ҫухалма ӑста ҫав Пишерсем.

Ӗҫпе варӑннӑ Исмаль часах манчӗ вӗсене. Сахал-и кун каҫа куҫ тӗлне пулакан этемсем.

Халиччен Исмаль, кирек хӑш пуссене те пӗр тенкӗне ҫитерсе, хут татӑкӗпе чӗркесе ҫыхаканччӗ. Паян ниепле те вӑхӑт ҫитереймерӗ, ҫаплах ҫынсем виҫӗннӗшӗн укҫа тыттараҫҫӗ.

Парк çумĕпе çÿрекен çынсем сайралансан, виççĕшĕ те укçа чĕркеме тытăнчĕç. Укçи нихăçанхинчен те нумай пухăннă.

Укçа чăмаккисене пысăк сумкăна хурсан, Акук шăллĕне:

— Кантура пĕчченех каймалла пулать сан,— тесе пĕлтерчĕ.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ Исмаль, мĕн халиччченех укçа леçме пĕрле çÿренĕрен.

— Ирина Павловнăна чечек çыххи кĕрсе парнелесшĕн. Ун паян çуралнă кунĕ.

— Хăвăрăн класс руководительницине-и?

— Ахă.

— Кайран юрамасть-и? Ман сирĕнсĕр каяс килмест.

— Акук, вăл пĕччен хăрать!— тхик! кулса илчĕ Утиç.

— Эх, хăравçă.

— Эпĕ-и? Мана пĕчĕк ача вырăнне хуратăр-и?

Укçа сумкине ярса тытрĕ те унăн вăрăм чĕн тыткăчне хулпуççи урлă çакрĕ. Вара сывпуллашса уттарчĕ Исмаль.

Пăхăр, кĕмĕл вак укçа тултарнă сумка ай-ай йывăр, хулпуççи шăммине тÿсмелле мар касать. Арçын ача пурпĕрех уямасть, утнă çĕрте утать, чупнă çĕрте чупать. Хăвăртрах пушанса вăл Атăл хĕррине çитесшĕн, кăнтăрлахи шăрăхра тарланă ÿт-пĕве шыва кĕрсе усăлтарасшăн.

Кас умĕнхи сывлăшпа киленме ватти-вĕтти пурте тухнă пулас. Урамра халăх хĕвĕшет кăна. Умра та, хыçра та, юнашар та çын утать. Мĕн шухăшлă-ши вĕсем? Мел пулсан, Исмаль кашнин шухăшне вулĕччĕ. Чăнах, пĕлме мĕн тери кăсăклă.

Исмаль урам урлă каçрĕ. Сулахайра — тăкăрлăк. Ун вĕçĕнче, кĕтесре, укçа парса хăвармалли кантур. Кассир тухса кайиччен çитес тесе, уттине хăвăртлатрĕ вăл. Ку тăкăрлăкра çынсем пачах çÿремеççĕ.

Асфальт сарнă ансăр тротуар çÿллĕ хÿме çумĕпе тăсăлать. Вĕçне çитиччен хÿме миçе хăмаран тăнине Исмаль пĕр хут çеç суман. Çитмĕл виççĕмĕш хăма çумĕнче пысăк юпа. Хапха юпи ку. Хапхи ялан тенĕ пекех уçă. Шалта, карташĕнче, пысăк сарай пур. Склад вăл. Унта темле тавар тытаççĕ пулас. Склад умĕнче час-час машинăсем тăраççĕ. Ун пек чух çыннисем шав тăрмашаççĕ: е тиеççĕ, е пушатаççĕ.

Пырать тротуарпа хулпуççи урлă укçа хутаççи уртса янă этем. Темле юрă ĕнрешет, хушăран шăхăркалать те. Кăмăлĕ çĕкленÿллĕ ун. Пĕлсех тăрать, паян ăна кассир мухтать, ара, кунашкал укçа нумай пухни пулман та.

Хĕвел анасси аякра-ха. «Унччен шыва кĕме ĕлкĕрĕп»,— шухăшлать Исмаль. Хапха тĕлне çитрĕ. Вăл темшĕн хупă, калинкки вара яриех уçă. Картишĕнче машинăсем курăнмаççĕ, кайса пĕтнĕ пулас.

Қалинкке тĕлĕнчен кăшт иртрĕ çеç, «Стоп!» тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Ирĕксĕрех çаврăнса пăхрĕ Исмаль. Қалинккерен Титпа Пишерсем пуçне кăларнă та кăчăк туртаççĕ.

— Қил-ха, кил! — чĕнет Тит.

— Эпĕ васкатăп,— тавăрчĕ Исмаль.

— Хăратăн-и-мĕн? Çисе ямастпăр, сана кирлĕ пĕр-ик сăмах çеç калатпăр,— илĕртет Пишерсем.

Лешĕ ĕненчĕ, пырса тăчĕ вĕсем умне.

— Мĕн каламалли пур сирĕн? — ыйтрĕ вăл.

— Қалинкке урлă калаçма хушман ваттисем, кĕр кунта, карта çумĕнчи симĕс курăк çине ларăпăр.— Пишерсем Исмале аллинчен ярса тытрĕ те ирĕксĕрлесех сĕтĕрсе кĕчĕ склад картишне. Унтан вăл калинккене хупрĕ, ун çумне тайăнса, куçне хĕскелесе, çăварне уçрĕ: — Тăванăм, сан парăм тавăрса парас самант тинех çитрĕ.

— Ан суй! Сан умăнта эпĕ нихăçан та парăмлă пулман! — çирĕппĕн аларĕ Исмаль.

Пишерсем ахăлтатса кулса ячĕ те ăшшăн йăпăлтатма пуçларĕ:

— Юрĕ-çке, хирĕлмĕпĕр. Эпĕ сана юрататăп. Астăватăн-и хамăрăн туслăха? Пулнах çутă кунсем, пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланнисем...

Чарăнмасăр палкать Пишерсем. Вăл Атăл тăрăх ăшă çĕрелле çул тытма йыхăрать Исмале. Тараса умĕнче кĕлмĕçленсе тăрасси пачах арçын ача ĕçĕ мар.

Ним те шарламасть Исмаль.

— Эсĕ манран юлманнине пĕлетĕп,—тет Пишерсем, ун умĕнчи ача сăмах чĕнменнине кура. Хирĕçлемест пулсан, эппин, çын килĕшет. Çакна ĕненсе вăл аллине тăсрĕ: — Кӳр хутаçна, сана çĕклесе пыма йывăр. Эпĕ санран аслăрах, апла пулсан, вăйлăрах.

Халĕ ĕнтĕ Исмаль чăтаймарĕ, шăлне çыртса шат! çапрĕ Пишерсемĕн тăснă аллинчен.

— Ай-яй! — чашкăрчĕ Пишерсем, те ыратнипе, те кăна кĕтменнипе.— Эсĕ капла-и?

Йĕри-тавралла пăхкаларĕ, тем шыранăн. Тен, патак ярса тытасшăнччĕ. Пичĕ-куçĕ çав тери тискер хăйĕн. Куç тĕлне юлташĕ лекрĕ. Ўхĕрсе ячĕ вара:

— Ти-и...т! Мĕн пăхса тăран? Тытса ил сумкине!

— Çывхарнă ан пул, йĕксĕк! — хăратать Тита Исмаль. Хăй укçа хутаççине хырăм çумне пăчăртарĕ. Шĕвĕр мăйракине тăратса килекен вăкăра тапса ывтăнтарма хатĕрленнĕн кăкăрне каçăртрĕ мăнаçлăн.



3. Нӑл кулсан.

Сĕмсĕркке Тит боксер евĕр пĕкĕрĕлчĕ те ал шăнăрĕсене хытарса ярса пусрĕ.

— Пар теççĕ сана укçа хутаçне! — ĕрлет вăл.

— Ку укçа патшалăхăн. Ăна тытса илме сирĕн права çук!

— Мĕнле ухмах ĕнентĕр укçуна кам та пулин тытса илнине. Вăрра хăвна хушаççĕ,— тет Пишерсем.

Тит укçа сумкине ярса тытрĕ, ăна Исмалĕн пуçĕ урлă хывса илесшĕн тапаçланать, анчах ниепле те çĕнтереймест.

— Тит, пар ăна чĕре анинчен! — вĕрентет Пишерсем, хăй темшĕн пырса тытмасть-ха.

Исмаль маларах чышкине чăмăртарĕ, панк! тутарчĕ Тита хырăмĕнчен, вăл анкă-минкĕленсе авăнса анчĕ, анчах та тăрăнса ўкмерĕ шеремет, çĕнĕрен тапăнчĕ тулхăрса.

Пĕр-пĕрне çатăрласа тытрĕç хайхискерсем. Эх, кĕрешеççĕ.

— Тит, маххă ан пар! Эсĕ мăнтăр, явса чик ăна хăвăн айна, юлашки сывлăшĕ пăш-ш тухтăр! — хĕтĕклет Пишерсем.

Çакăн хыççăн Тит ура хурса ўкересшĕн тапаçланчĕ. Анчах сиссе те юлмарĕ хăйне Исмаль çĕклесе çапнине. Месерле кайса ўкрĕ вăл. Парăнтараймарĕ, укçа хутаççи лекеймерĕ.

— Ых-х, мемме! — сас пачĕ Пишерсем, усал сăмахсемпе ятларĕ тусне.— Халех кăтартса парап шĕпĕне мĕнле кăкламаллине!

Пишерсем кĕпе çаннине таврăрса, упа пек лăп-лап пусса çывхарчĕ. Часах аллисем çил арманĕ çуначĕсем евĕр хăлаçланма пуçăнчĕç. Çапать, тапать вăл Исмале. Хушăран хăй те туянкалать. Ĕнтĕ Тит та ура çине тăчĕ.

Пĕччен иккĕне ăçтан çĕнтерен? Чунĕ хурланчĕ Исмалĕн. Ыратнипе мар, йăх-яхсен мăшкăлне тўсеймен енне куççулĕ тухрĕ.

Урараан, çурăмран кўпкеççĕ, пуçран та çапаççĕ. Акă ăна ўкерчĕç. Сăмсаран юн палкаса тухрĕ.

Тит хутаç кантрине туртать. Исмаль мĕнпур вăйне пухса укçа хутаççине кăкăрĕпе хупларĕ.

Сисет Исмаль, халь-халь тăн çухатать.

Сасартăк йытă вĕрни илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ тахăшĕ кăшкăрса ячĕ:

— Эй, эй! Мĕн хăтланатăр эсир? Ха вĕсем, иккĕн тан хĕнеççĕ. Чарăннă пулăр!

Ачасем патне йытă çавăтнă мăйăхлă çын çывхарать. Пишерсем айккинелле чупма пикенчĕ.

— Дези! Каялла тавăр сĕмсĕре! — терĕ мăйăхлă çын, анчах та хăй йыттине чĕлпĕрĕнчен вĕçертмерĕ. Йытти таракан ачана хăратса хăрлатрĕ.— Ачи, кунтарах кил, унсăрăн тем пуласси пур, йытти ман хаяр.

Исмаль тăрса ларчĕ, пуçĕ çаврăнать.

— Ай-яй, хытах лекнĕ-çке сана! — тĕлĕнчĕ йытăллă çын, Исмаль питне юн хĕвĕннине курсан.— Мĕншĕн хĕнеççĕ вĕсем сана?

— Çакă сумкăна тытса илесшĕн.

— Мĕн унта сан?

— Укçа.

— Суять вăл, ан ĕненĕр ăна, пичче. Вăл хăй тытса илчĕ çав хутаçа манран,— кастарать Пишерсем.

— Тĕрĕс калать. Эпĕ те куртăм вăл мĕнле тытса илнине,— чĕнмесĕр тăмасть Тит та.

— Темĕскер пакăлтататăр эсир,— пуçне пăркаласа илчĕ мăйăхлă тете. Унтан йыттине çапла хушрĕ: — Дези, эсĕ вĕсене сыхла, эпĕ халех...

Қашкăр пек пысăк йытă пурне те ăнланать, вăл урисене хўрипе витсе ларчĕ. Ачасем çине шăтарасла пăхать хăй. Хуçи склад патнелле утрĕ.

Çакă çын йытăпа картишĕнчи склада сыхлать. Вăл телефонпа ачасем пирки милицине шăнкăравларĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, икĕ милиционер çитрĕç те.

— Қам кама хĕненĕ кунта? — ыйтрĕ милиционер.

Ачасем пaçăрхи пекех кашни хăйĕнне каларĕ.

— Халех милици уйрăмне пыратăр,— терĕ иккĕмĕш милиционер.

— Ман кантура халех укçа леçсе памалла, унсăрăн кассир тухса каять. Пирĕн укçана хамăрта хăварма юрамасть,— хутаçне кăтартрĕ Исмаль.

— Мĕнле укçа кунта сан?

Исмаль ăнлантарчĕ.

— Э-э, ара, эсĕ, чăнах та, тараса патĕнче ĕçлекен ача-çке? Қурнă, курнă... Хам та темиçе кун каялла виçĕннĕччĕ-ха. Ай-яй сана палламалла мар хитрелетнĕ вĕсем, куç айĕсене юн мĕнле хĕвĕннĕ.

Исмале кайма ирĕк пачĕç.

Милицин ача-пăча уйрăмне çитмеллех пулчĕ. Вĕсем унта тăваттăн: Исмаль, Мария Никитична, Акук, Утиç пĕрле пырса кĕчĕç.

Чылай вăхăт калаçрĕç вара, уйрăмах Исмале, Мария Никитичнăна каçса кайсах тăнларĕç.

* * *

— Анне, кала-ха, пĕчĕклех килĕштернĕ ĕç ĕмĕр юратнă ĕç пулĕ-ши? — ыйтрĕ Исмаль.— Қам аллинче курса ăмсантăм-ши çав ĕçе?

## 14

Сентябрĕн пĕрремĕшĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ.

Шкулта чуна савăнтараканни нумай çав. Учителе урок ыйтнине лайăх каласа пани, «пиллĕк»-е «тăваттă» паллă илни чун уявĕ мар-и вара?

Исмаль пур предметпа та отлично вĕренесшĕн тăрăшать. Çавăнпа та учительсене тимлĕн итлет. Вĕсем кашниех çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче хăй предмечĕпе мĕн-мĕн вĕренмеллине ăнлантарчĕç. Пуринчен ытла ĕç урокĕ мĕнле пуласси килĕшрĕ.

— Ĕç урокне эпир тăтăшах заводра ирттерĕпĕр,— терĕ учитель Сергей Сергеевич.

Урок — заводра. Тĕлĕнтермĕш мар-и ĕнтĕ ку?

Исмаль хула тăрăх çӳренĕ чух сахал утман завод хӳмисем çумĕпе. Шалта, хӳме леш енче, мĕн пур-ши? Çынсем мĕн ĕç тăваççĕ-ши унта? Шутсăр пĕлес килнĕ ун. Анчах завод хапхисем яланах хупă. Пĕррехинче вăл Карл Маркс урамĕнчи завод умĕнче чарăнса тăнăччĕ. Шăп смена улшăннă вăхăт ĕнтĕ. Хăшпĕрисем тухаççĕ, теприсем кĕреççĕ. Исмаль заводалла юхакан юхăма путрĕ. Алăкран кĕчĕ чиперех. Умри çула пӳлнĕ-мĕн. Кунта хурал. Пропуск ыйтаççĕ. Çук япалана кăтартаймăн. Ирĕксĕрех каялла тапма тиврĕ.

Акă ĕç урокĕн учителĕ Сергей Сергеевич завода каясси пирки пĕлтерчĕ.

Ачасем чи малтан ниме те мар, хурçă мĕнле шăратнине курасшăн. Вăл чуна çывăх пек туйăнать, мĕншĕн тесен вĕсем завод валли сахал мар тимĕр-тăмăр пухнă, сталеварăн йывăр та кăсăклă ĕçĕ çинчен нумай илтнĕ.

Хыпалансах строя тăчĕç ачасем. Пурте хаваслă, шавлаççĕ. Часах команда янăрарĕ: малтан шăпланма, вара малалла утма. Хирĕç пулан çыннисем ăшшăн пăхса ăсатаççĕ, путех вĕсем ачасен питĕнче савăнăç йăлкăшнине асăрхарĕç.

Строй, салтаксем пек марш утса, завод умне пырса чарăнчĕ. Кунта речĕпех ĕçре чапа тухнă рабочисен портречĕсем.

Исмаль портретсен ретĕнче паллакă çыннăн сăнӳкерчĕкне курчĕ. Чупса пычĕ те портрет айне мĕн çырнине вуларĕ: «Коммунизмла ĕç ударникĕ Мария Никитична Степанова сталевар».

— Заводра та ырă çын иккен эсĕ, Мария Никитична,— терĕ вăл сасăпах. Ăна тата ытларах хисеплес килчĕ.

— Икшерĕн тăрăр! — чĕнчĕ Сергей Сергеевич шала кĕрсе тухнă хыççăн.

Ачасемшĕн алăк уçăлчĕ.

— И-и, миçен вĕсем заводăн пулас хуçисем,— ăшшăн кулкаларĕ пропуск тĕрĕслекен хĕрарăм.— Хăюллăрах пулăр, иртĕр.

Завод картишне тухрĕç «пулас хуçасем». Кунта паркри пекех. Çурчĕсем те йывăç айĕнче. Урлă-пирлĕ выртакан çулсемпе сукмаксем айккипе илем кӳрекен лутра тĕмсем. Чечек йăранĕсем те пур. Хура-кĕрен чечек пуçĕсем вăштăр çилпе юлхавлăн сулланаççĕ. Çак чечексене час тăм тивмест, мĕн хура кĕркуннеччен куçа илĕртсе лараççĕ.

Картишĕнчи пĕр кĕтесре тăракан ачасем патне пĕри утса пычĕ.

— Паллашăр, хурçă шăратакан цехри бригадир Иван Петрович,— терĕ Сергей Сергеевич.

Ачасем ăна сывлăх сунчĕç.

— Атьăр,— чĕнчĕ вăл,— цеха кайăпăр.

Цеха кĕрсен вĕсене кашнине сталеварсем тăхăнакан чăн-чăн куçлăх парнелерĕç. Тĕттĕм чакăр кантăклă вăл.

— Тăхăнăр ĕнтĕ,— хушрĕ ачасене Иван Петрович, унсăрăн куçăрсене пăсма пултаратăр. Пăхăр-ха, кусем пĕтĕмпех хурçă шăратакан кăмакасем.

— Ай-уй, миçе кăмака! Пĕрре, иккĕ...— шутларĕ Утиç.

— Мĕн эсĕ завода пĕрремĕш хут килнĕн чĕвĕлтетен? — тĕртсе илчĕ ăна Çемен.

— Малтанхи хут килтĕм. Мĕн вара,— кăмăлсăрланчĕ Утиç.

— Хăвăн аннӳ кунта ĕçлет, ку таранччен килеймен. Ман атте кунта ĕçлес-мĕн пулсан, эпĕ заводран тухас çук.

— Мухтанчăк эсĕ,— питлерĕ Çемене Утиç.

Шкул ачисене темиçе утăм маларах сикме хушрĕç.

Çак вăхăтра Исмаль хăйсен кӳршĕ хĕрарăмне Мария Никитичнăна курах кайрĕ. Сарлака çунатлă шлепкепе хăй. Вăл аллине сулласа саламлать.

— Анне! — кăшкăрса ячĕ Утиç, хăй те аллипе сулласа.

— Мария Никитична! — чĕнчĕ Исмаль те.

— Ĕçлекен çынна ан чăрмантарăр,— астутарчĕ Сергей Сергеевич.

Мария Никитичнăн ачисемпе юмахлама вăхăт çук. Вăл куçлăхне антарчĕ те кăмака ани патне пычĕ, питлĕхне уçрĕ.

Кăмакаран тухнă вĕри сывлăш хăйĕн вăрăм чĕлхипе ачасене çуласа илчĕ.

— Ачасем, эсир халĕ кăмака умĕнче тăрмашакан Степанова сталевара куратăр. Вăл цехри чи лайăх ĕçлекенсенчен пĕри.

Мария Никитична вăрăм авăрлă алтăр илчĕ те мăн хурантан тем ăсрĕ.

— Шăратнă хурçă ăсрĕ алтăрпа, унăн пахалăхне тĕрĕслеме.

— Ай-уй, ара, хурçă сĕт пек шурă-и вара вăл!— тĕлĕнет Исмаль.

— Ачам, хурçă тĕсне улăштаркаласах тăрать,— тет кулкаласа Иван Петрович.

Сталевар алтăрти шĕвек хурçăна хăйăр çине йăвантарать.

— Чăнах-иç, курăр-ха, хурçă шурă тĕсне çухатрĕ! — хăлаçланать тĕлĕннипе Исмаль.

— Мĕн каларăм сана. Çапла вăл хурçă.

— Хытса ларчĕ тем,— чĕнмесĕр тӳсеймерĕ Исмаль.

— Мĕнле çирĕплĕхпе хытнинчен хурçă хатĕррипе хатĕр маррине пĕлеççĕ,— ăнлантарать бригадир.— Ав хурçă катăкне илсе кайрĕç. Экспресс-лабораторинче анализ туса пĕлеççĕ.

Вара Мария Никитична тепĕр рабочипе пысăк тимĕр кĕреçе тытрĕç те кăмака çăварне тем ыватма пуçларĕç.

— Руда ывăтаççĕ,— пĕлтерет бригадир.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртрĕ — кăмакана тайăлтарчĕç те, ансăр та вăрăм такана пек савăта шĕвĕ хурçă юхма пуçларĕ.

Унччен те пулмарĕ — пушаннă, пӳрт пысăкăш кăмака рельссем тăрăх шуса кайрĕ. Унтан чарăнчĕ, çитес çĕре çитрĕ пулас. Пысăк кран ăна сыхласа тăнă тейĕн, тимĕр-тăмăра ытамлаытамла кăмакана пăрахать. Кирлĕ таран тултарчĕ-тĕр. Вара кăмака каллех рельса тăрăх шуса цеха, хăй вырăнне, килсе ларчĕ.

— Кам çапла çӳретет çакă пысăк кăмакана? — пурин çинчен те пĕлес килет Исмалĕн.

— Ав, унта,— будкăна тĕллесе кăтартрĕ бригадир,— тин çеç профтехучилище пĕтернĕ çамрăк хĕр — пультовщица ларать. Вăл электроприборсен кнопкисене пусать те кăмака ярăнса çӳреме тытăнать.

— Мĕнле пултаруллăскер,— ăмсанать Утиç.

Кĕр-кĕр кĕрлеççĕ электрокăмакасем, çурхи юханшыв кашланăн кашлаççĕ. Çыннисем чарăна пĕлмесĕр тĕркешеççĕ.

— Ачасем, ĕç урокĕ вĕçленчĕ,— пĕлтерет Сергей Сергеевич,— шкула каймa вăхăт, ботаника кĕтет.

— Мĕнле питĕ час? — кăмăлсăрланать Исмаль. Вăл кунта кунĕпех пăхса тăма хатĕр.

Бригадир вĕсене урама тухичченех ăсатрĕ. Сывпуллашрĕç.

Исмаль шав лăпланаймасть, хурçă мĕнле шăраннине курни ăна çĕклентерет. Тӳсеймен енне учительтен ыйтать:

— Сергей Сергеевич, тепĕр урокра килетпĕр-и кунта?

— Килессе килетпĕр, анчах тепринче мар. Курса çеç çӳрени çителĕксĕр, ĕçе вĕренмелле. Çитес çулсенче вара кашни ĕç урокне кунта, заводра, ирттеретпĕр.

Тĕлĕнмелле ĕç урокĕ пирки сăмах-юмах мĕн тепĕр хут завода кайичченех пычĕ.

Шкул пурнăçĕ чуна темпе те савăнтарать.

Эрне вĕçĕнче, шăматкун, уроксем хыççăн пионерсем дружина сборне пухăнчĕç. Кун йĕркинче çакăн пек ыйту: «Кулленхи кунра паттăра тухма пулать-и?» Хăнасем те пычĕç. Вĕсен шутĕнче Степанова сталевар, милицин ачасен пӳлĕмĕнче ĕçлекен инспекторĕ — Сусланов юлташ.

Мария Никитична хăйĕн ĕçĕ пирки пуплерĕ. Сусланов инспектор вара ачасен пурнăçĕнчи пăтăрмахсем çинчен сăмах тытрĕ. Темиçе ачана аса илсе, вĕсене питлерĕ. Хăшпĕрисем пĕчĕккĕллех ямăттине хапсăнса вăрра тухаççĕ, теприсем — урамсенче ашкăнса çӳреççĕ, виççĕмĕшсем, хăйсен айванлăхне пула, усал çынсемпе çыхланса каяççĕ.

— Ун пеккисем сахаллăн,— тет инспектор,— вĕсенчен хăрама юрамасть. Сирĕн шкулти Измаил Кураков пионера эпир мухтатпăр. Вăл сирĕн хушăрти чăн-чăн паттăр.

Исмаль сборта хăйĕн ятне илтессе сунманччĕ, çавăнпа ăна пĕçертсе пăрахрĕ.

— Исмаль — паттăр, тетĕр-и?— иккĕленсе ыйтрĕ Çемен. Вăл...— Пуçланă сăмахне вĕçлеймесĕрех çăварне хупрĕ. Хăрарĕ тем килсе тухасран.

— Тĕрĕс, Исмаль — паттăр пионер,— çирĕплетрĕ инспектор.— Вăл патшалăх укçине хурахсене çăмăллăн тыттарса яман.

Сусланов юлташ тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрĕ. Исмаль тараса патĕнче ĕçлени, çул çинче Пишерсемпе Тит ăна тытса чарса хĕнени çинчен йăлтах пĕлчĕç сборти пионерсем.

— Пишерсемпе Тита айăпланă-и? — ыйтрĕ тахăшĕ.

— Унсăр мĕнле? Иккĕшне те ачасен колонине юсанма ăсатнă.

Çак сборта Исмале милицин районти уйрăмĕ тав туса çырнă хут та пачĕç. Каярахпа çакăн пирки хаçатра та çырса кăларчĕç.

* * *

«Анне,— терĕ Исмаль унăн портречĕ çине пăхса. Хальхинче амăшĕ темшĕн ытла шухăшлă пек туйăнчĕ,— эпĕ кăçал саккăрмĕш класс пĕтеретĕп, кĕркунне профтехучилищĕне вĕренме каясшăн. Утиç та пырать манпа пĕрле. Вăл заводри хурçă шăратакан цехри пультовщицăна вĕренесшĕн. Эпĕ, паллах, сталевар пулатăп. Мария Никитична пире профтехучилищĕне вĕренме кайма чармасть. Паха хурçă шăратма хам хăнăхтаратăп,— тет вăл».

Ку хутĕнче амăшĕ ăшшăн йăл кулнăн туйăнчĕ.

«Эсĕ те, эппин, ман шухăша ырлан. Итле-ха, ман сана питĕ вăрттăн сăмах каламалли пур».

«Итлетĕп, ывăлăм».

«Кӳр хăлхунтан пăшăлтатам: мана темшĕн Утиç питĕ килĕшет, эпĕ ăна юрататăп».

«Ăнланатăп. Ӳсетĕн, ывăлăм».

Исмаль вăтаннипе куçне тартрĕ.

15

Чугун çул станцинче халăх хĕвĕшет. Рельса çинче Мускава каякан пуйăс.

— Кĕртме тытăнчĕç! — кăшкăрчĕ пĕри.

Çынсем кăпăр! черете тăчĕç хăйсен кĕрес вакунсем умне. Чугун çул çинче ĕçлекенсен формине тăхăннă проводницăсем пассажирсен билечĕсене тĕрĕслесе вакуна кĕртме тытăнчĕç.

Исмаль Утиç аллине тытнă та, иккĕш перрон тăрăх утса кайрĕç. Иккĕшин те пĕчĕк чăматансем. Вĕсен ларас вакунĕ хыçалта.

— Май çук, ытла туслашнă-çке çаксем, кунта та пĕр-пĕринчен уйрăлмаççĕ, çавăтăнсах пыраççĕ,— кӳлешсе илчĕ Çемен.

— Исмаль вырăнĕнче эсĕ те пулма пултарнă. Сочинение лайăх çырмаллаччĕ. Уссăрах кĕвĕçен,— йĕплесе илчĕ ăна Тамара.

Утиçпе Исмаль çырнă сочинение шкулта пысăк хак пачĕç. Çак вĕсене республикăри литература уявне хутшăнма çул уçрĕ. Конкурс нихăçан манмалла мар иртрĕ.

...Пӳлĕмре вăтăр-хĕрĕх çын. Вĕренекенсем, учительсем, писательсем те пур. Сĕтел хушшинче жюри членĕсем. Трибуна умне пĕри те тепри тухать. Кусем вырăнти конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăннисем. Кашниех хăйĕн сочиненине вулать.

Акă Исмалĕн ят тухрĕ.

— «Йăл кулсан...» ят панă вăл хăйĕн ĕçне,— пĕлтерчĕ семинаре ертсе пыракан жюри председателĕ.

Исмаль вулама тытăнчĕ. Вăл пĕр хĕрелет, пĕр шуралать, çамки çинче тар пĕрчи шăрçаланать. Сасси те хăйĕн мар, е хулăн, е çинçе илтĕнет.

Çынсем шăп, пурте тимлĕн итлеççĕ. Эппин, япăхах та мар-и, тен. Исмале ку майĕпен лăплантарчĕ, ун сасси тикĕсленсе картне ларчĕ.

Вулать, вулать. Тахăшĕ ассăн сывласа илчĕ. Мĕскĕн ачан шăпи хурлантарчĕ ĕнтĕ. Юрать-ха, пурнăçĕнче чăн-чăн çын тĕлне пулать. Унсăрăн тем кĕтетчĕ-ха ăна. Ахаль каламаççĕ çав «çут тĕнче ырă çынсăр мар» тесе.

Исмаль вуласа пĕтерсен алă çупрĕç.

— Лайăх çырнă! — илтĕнчĕ сасă.

Утиҫ та амăшĕ — Мария Никитична коммунист — ҫинчен ҫырнă. Вăл амăшĕн ырă кăмăлне, чун-чĕрине, ĕҫри хастарлăхне чăннипех уҫса пама ăсталăх ҫитернĕ.

Вуласси икĕ куна пычĕ.

Исмале акă, вăрҫă инваличĕ, колхоз бригадирĕ, ватă рабочи ҫинчен ҫырнă сочиненисем килĕшрĕҫ, вĕсен шухăшĕсем те пуян, чĕлхи те илемлĕ.

Ĕнтĕ пурне те итленĕ. Жюри тепĕр пӳлĕме каять. Тавлашма та лекмерĕ жюри членĕсене, вĕсем ытла та пĕр шухăшлă пулчĕҫ.

Қаллех конкурс irттернĕ пӳлĕме пухăнчĕҫ. Қашнинех пĕлес килет хăйĕн ĕҫне мĕнле хак панине. Қамăн мала тухас ан килтĕр.

Жюри председателĕ протокол вулать. Пĕрремĕш вырăна Исмале панă. Питĕ хĕпĕртерĕ вăл ҫакăншăн.

Мĕнпурĕ пилĕк ача ĕҫне суйласа илнĕ. Ҫав шутра Утиҫ сочиненийĕ те пур.

Халĕ, ав, мала тухнисем Пĕтĕм Союзри конкурса хутшăнма Мускава каяҫҫĕ.

Исмальпе Утиҫе ăсатма Мария Никитична, Акук, учительсем, пĕр класра вĕренекен ачасем килнĕ.

— Ах, телейлĕ те вара Утиҫпе Исмаль,— ăмсанать Ҫемен.— Вĕсен каникул Мускавра пуҫланать.

— Ан кулян, Ҫемен,— йăпатать ăна Тамара,— тата виҫĕ кунтан пирĕн те ҫуллахи каникул ҫитет, Атăл леш енне похода каятпăр.

Хĕвел хĕртсе пăхать, шăрăх.

Станци умĕнчи пĕчĕк чан хăйĕн янăравлă сассине пачĕ те, тепĕр самантран пуйăс тапранчĕ.

— Сывă пулăр! Телейлĕ ҫул пултăр!



## УРОКРАН ЙЫВӐРРИ

Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче пахча ăшĕнче ларакан пысăк çуртра илĕм-тилĕмпех алăк уçăлса хупăнма тытăнчĕ. Уйрăмах пĕри вĕтеленсе çӳрет. Тĕкĕр умне пырса тăнăччĕ çеç вăл, илтех кайрĕ хăйне ашшĕ ячĕпе чĕннине: «Ольга Ивановна!» Шартах сикрĕ

вăл. Хыçра чугун çул çинче машинистра ĕçлекен пиччĕшĕ тăра парать.

— Пичче! Ма хăратан? Чун тухсах ӳкетчĕ.

— Çапла чĕннине хăнăхма тивĕç, йăмăкăм,— тет пиччĕшĕ, кулкаласа.— Паянтан эсĕ — учительница.

Амăшĕ те пырса тăчĕ.

— Манăн апат хатĕр,— тет вăл, сĕтел хушшине ларма чĕнсе. Ытарайми пăхать хăйĕн хĕрне. Хĕрĕ хура костюм тăхăннă та, ытла килĕшӳллĕ. Çивĕчĕ вăрăм ун, пилĕк таран. Пăхнă май, амăшĕ ассăн сывласа илет. Çав вăхăтрах савăнать те. Сăлтавĕ пур: Ольга чи кĕçĕнни, унăн та паян ĕçе пуçăнма вăхăт çитрĕ.

— Анне, эпĕ пĕрре те учительница пек мар, итлĕç-ши вĕсем мана? — тет Ольга.

— Ача-пăча тени — чĕвĕлти кайăк. Аçталла илĕртен, çавăнталла туртăнать. Вĕсем сана итлесси пĕтĕмпех хăвăнтан килет. Хăв ырă кăмăллă пул.

Пăхать, сăнать амăшĕ хĕрне. Юлашкинчен çапла сĕнет:

— Тен, çивĕтне пуç тавра хурса çыхан? Унашкал килĕшӳллĕ пек туйăнать.

Ольга амăшне тав тăвать те çӳçне пуç тӳпине чăмаккаласа хурать.

Çемье сĕтел хушшине ларчĕ. Нихăшин те апат анмасть. Амăшĕ сăйлать. Хĕрне аран пĕр стакан сĕт ĕçтерчĕ.

Шкула кайма вăхăт. Ана амăшĕпе пиччĕшĕ ăсатаççĕ. Хапха умĕнче тăрса юлнă май, ырă сунаççĕ:

— Ĕçӳнте телей пултăр!

Утать çамрăк учительница. Уя тухрĕ. Çулĕ кĕскех мар. Вăл вĕрентес шкул ансăр вăрман леш енчи, чугун çул хĕрринчи ялта.

Сывлăш уçă. Хĕвел тухать саралса. Тӳпе тăп-тăрă, ниçта пĕр пĕлĕт татăкĕ çук. Шăп çуллахи кун темелле. Анчах, вăрмана пырса кĕрсен, такăр сукмак çине ӳкнĕ сарă çулçăсем кĕркунне çитнине систереççĕ.

Тарăн çырмана анса хăпарчĕ вăл. Ав, шкул! Пĕр класлă çурт. Курчĕ çеç, чĕри ун хыттăн тапма пуçларĕ.

Чăнах, ăçтан лăпкă пулăн? Çын хăйĕн пурнăçĕнче шкула малтанхи хут учительница пулса кĕрет-çке, çитменнине тата, пĕрремĕш класа та мар, тӳрех тăваттăмĕшне. Килсе тухаççĕ хушăран пурнăçра кĕтмен япаласем.

Çак класра халиччен ватă учитель Константин Кириллович вĕрентнĕ. Вăлах кунти пуçламăш шкулăн заведующийĕ. Пенсие кайма та çитнĕ хăйĕн, çапах кĕрешет. Хăнăхнă шкултан уйăрălма хал çитерейместь. Анчах вăйсăрланнă сывлăха шав чир-чĕр çыпçăнать. Курорта каймаллах, теççĕ ăна. Урапа та çу сĕрме-

сӗр чупмасть. Хавшакланнӑ чӗрене те сиплӗх кирлӗ. Путевкине шӑп вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн параҫҫӗ. Ҫаймалла. Текех турткаланса тӑма май килмен. Тавӑрӑнсан тек вӗрентмест, заведующи кӑна пулать. Ҫапла калаҫса татӑлчӗ вӑл аслисемпе.

Ватӑ учитель уйрӑлас умӗн Ольга Ивановнӑпа нумайччен калаҫрӗ.

Ҫласра ҫирӗм пилӗк ача. Ҫирӗм пилӗк тӗлӗнтермӗш калав итлерӗ ҫамрӑк учительница. Вӑл ачасене курман-ха, анчах кашнине витӗр пӗлнӗн туйӑнать. Ҫапах та чун темшӗн пӑшӑрханать, ҫурӑм сӑрлатать. Мӗншӗн хӑрамалла? Педагогика училищинчен мухтав хучӗпе вӗренсе тухнӑ. Уроксене мӗнле йӗркелемелли план пур. Ӑна Константин Ҫириллович пулӑшнипе тӗплӗн туса хатӗрленӗ. Вӗрент те вӗрент. Ачисен вара мӗнпур ӗҫӗ те учитель каланине тимлӗн итлесе ларасси кӑна.

Шухӑш вӗҫтерсе пынипе сиссе те юлмарӗ, шкул карти хӗррине пырса та тухрӗ. Ольга Ивановна пуринчен малтан ҫитме ӗмӗтленнӗччӗ, кая юлнӑ. Ачасем, вӗрентекенӗн шухӑшне пӗлнӗн, ӑмӑртмалла тейӗн, пуҫтарӑннӑ та, ав. Выляҫҫӗ урамра. Лапта ҫапаҫҫӗ, кантра урлӑ сикеҫҫӗ, теприсем кӗнеке вуласа тӑраҫҫӗ.

Вӗренекенсене курсан, учительницӑн пӑшӑрханни таҫта кайса кӗчӗ. Хӑй пурпӗрех вӗсен умӗн иртмерӗ, шкула картиш енчи алӑкран кӗчӗ. Ҫласс алӑкне уҫсан, куҫа тӳрех сӗтел ҫине савӑтпа лартнӑ чечек ҫыххи курӑнчӗ. Пӳлӗме тутлӑ шӑршӑ сарӑлнӑ, пыл тути калать. Чечек савӑчӗ ҫумӗнче хӗрлӗ питлӗ икӗ панулми. Ҫама савӑнтармӗ ӗнтӗ ку? Эппин, ачасем вӗрентекене кӗтеҫҫӗ.

Шӑнкӑрав. Ачасем парта хушшине ларса вырнаҫаҫҫӗ.

Акӑ, малтанхи тӗлпулу.

— Мана Ольга Ивановна тесе чӗнеҫҫӗ,— тет учительница.

Унтан вӑл список тӑрӑх чӗнсе кашни ачапа паллашать. Юлашки парта хушшинче лараканнин ҫӳҫӗ юр пек шурӑ. Парнелет ҫав ҫутҫанталӑк этеме тӗрлӗ тӗс. Ӑна ку ача пирки Ҫонстантин Ҫириллович каласа пани асне килчӗ: «Амӑшӗпе ашшӗ тӳрӗ пурӑнмаҫҫӗ, ялан ҫапӑҫаҫҫӗ, вӑрҫаҫҫӗ. Ятлаҫу эрни-эрнипе тӑсӑлать. Ҫав самантсенче Иҫук чунтан тарӑхать, тем тума хатӗр. Тепӗр чух ирӗке тухнӑн туять пулас та, хӑйне хӑй хуҫа, таҫта та ҫӳрет. Шкулта та начар вӗренме тытӑнать».

Ассӑн сывласа илчӗ Ольга Ивановна. Иҫукпа тачӑрах ҫыхӑнас, килне ҫитсе курас тесе шут тытрӗ.

Тӗрӗслерӗ. Список вӗҫне ҫитрӗ. Ачасем пурте вӗренме килнӗ. Аван. Учительница татах пӑхса ҫаврӑнчӗ, кашни ачана витӗр курма тӑрӑшать. Парта хушшинче ларакансем те чӑрлаттарса пӑхаҫҫӗ хӑйсен ҫӗнӗ учительницине. Вӗсен ҫав тери пӗлес килет: ырӑ кӑмӑллӑ-ши? Юратӗ-ши? Усал мар-ши?

Юрĕ-ҫке, пурнăҫ кăтартĕ тенĕн, ачасем те, учительница та чăрмавлă шухăшсене сирсе пĕрремĕш урока тытăнчĕҫ.

Кун вĕҫĕнче вара пурте ҫăмăллăн сывласа ячĕҫ: учительници те, ачисем те.

Киле кайнă чух, ҫул ҫинче, шавларĕҫ пĕр кана тус-тантăшсем:

— Мана ҫав тери килĕшрĕ ҫамрăк учительница,— терĕ ушкăнра пĕри, янрав сасли.

— Кăмăлласкер! — пĕлтерет хăй шухăшне иккĕмĕшĕ.

— Урока лайăх ăнлантарать.

— Мĕнле илемлĕ вăл!

— Мана вулама лайăх кĕнеке тупса пама пулчĕ!

Кăна Иҫук каларĕ.

Ҫапла мухтарĕҫ ачасем хăйсен ҫĕнĕ учительницине. Ольга Ивановна вара ҫакă ырă сăмахсене илтмен. Апла пулин те, вăл туйнă. Киле таврăнсан, ватă амăшне ача чухнехи пек ыталаса илчĕ те ҫапла каларĕ:

— Аннеҫĕм! Ман класри ачасем мĕн тери лайăх! Эпĕ калананине пурте шăкăрах итлесе ларaҫҫĕ.

— Саламлатăп, хĕрĕм! Мухтама иртерех.

— Мĕншĕн? Ырă кăмăллă ачасем-ҫке. Вĕсен лайăх енĕсене аталантарма вăйăм-халăма хĕрхенмĕп.

«Лайăх учительница пулатăн пулĕ,— шухăшларĕ амăшĕ хĕрĕ пирки.— Асăрхаттарни пăсмĕ».

— Асту, хĕрĕм, кашни ҫыннăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур, кашнинех пĕр турапа турама юрамасть.

— Вĕсене — ҫын теме иртерех-ха, черчен чунлă ачасем ҫеҫ-ха.

— Ырă лаша тăвас тесен, тихаранах лайăх пăхса ӳстермелле.

Хĕрĕ шухăша каять.

* * *

Иртрĕ сентябрĕн пĕрремĕшĕ, иккĕмĕшĕ, виҫҫĕмĕшĕ, тăваттăмĕшĕ... Класс пурнăҫĕ такăр ҫулпа чупать. Пионерсем суйлав сборĕ ирттерчĕҫ. Халĕ отряд совечĕн председателĕ — Куҫка.

Уроксем вĕҫленчĕҫ. Ольга Ивановна тухса каякан ачасене кăмăллăн пăхса юлчĕ.

Пĕчченех. Шухăшлама, ĕҫлеме никам та чăрмантармасть. Курорта кайнă ватă учитель ҫыру кĕтет-тĕр. Ҫырмалла. Хут листи илсе ларчĕ ҫамрăк учительница.

«Хаклă Константин Кириллович! — ҫырчĕ вăл.— Хĕвел пек хĕрӳллĕ салам йышăн пирĕнтен!

Мĕн çĕнни пур пирĕн пурнăçра? Иртнĕ тапхăр пĕр-пĕринпе паллашмалли, хăнăхмалли тапхăр пулчĕ. Сире пултаруллă ачасем хăварнăшăн пысăк тав. Курасчĕ сирĕн класс журналне! Тупата, савăнăттăр».

Малалла вăл пионер сборĕ пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

Иçука аса илмесĕр хăварма юрамастех. Класс пурнăçĕн ăнăçлăхĕ унран килессĕн туйăнать.

«...Иçук шкула пĕр сиктермесĕр çӳрет. Эппин, килĕнче йĕркеллех. «Уржум ачи» кĕнеке вулама патăм».

Юлашкинчен алă пусрĕ те çырăвне адрес çырнă конверта чикрĕ. Почта ещĕкĕ шкул хапхи умĕнчех.

— Вĕç-вĕç, çыру, вĕç, çыру, çитес çĕре çит, çыру,— терĕ вăл, конверта ещĕке ярса.— Каялла хăвăрт çаврăнса кил!

Тăкăрлăкра ушкăн хĕрарăм пырать. Пурте çĕрелле пăхса утаççĕ, шавлаççĕ хăйсем. Мĕн çухатнă-ши? Часах паллă пулчĕ: Кĕтесри Альтук инке пăрăвĕн урине такам çапса амантнă. Вырьăх чĕлхи каламасть, юн юхтарса киле таврăннă. Айăплине шыраса йĕр тăрăх каяççĕ.

— Мĕн сăлтава пула амантнă-ши пăрăва? — ыйтрĕ учительница.

— Ашкăнса пулĕ.

— Пахчана кĕнĕшĕн-ши?

— Ялта усал чунлă этем пурри тарăхтарать.

Ольга Ивановна хăй сукмакĕпе пăрăнчĕ. Кăшт тăхтамаллаччĕ, вара пĕтĕмпех пĕлетчĕ вăл.

* * *

Чӳрече уçă. Класа кĕркуннехи сулхăн сывлăш кĕрет. Кантăк умĕнчех пысăк переменăна тухнă ачасем савăнăçлăн выляççĕ. Ольга Ивановна сĕтел хушшинчех ларать-ха, питĕ васкаса тем çырать. Унччен те пулмарĕ, ун хăлхине хыттăн калаçни илтĕнсе кайрĕ:

— ...Эсĕ куртăн-и? Çын сăмаххи хыççăн кайсан, карта хушшине хĕсĕнĕн.

— Йышăн айăпна! Унсăрăн Ольга Ивановнăна каласа паратăп!

— Элекçĕ эсĕ, йăпăлти! Сана учительница мĕншĕн «пиллĕк» лартса панине те пĕлетпĕр. Эсĕ ăна кĕтсе илме çул çине тухатăн!

Ольга Ивановна хăйне хĕртнĕ тимĕрпе тивертнĕнех туйрĕ. Ручки тухрĕ ӳкрĕ ун аллинчен. Çу-у-ук, вăл çиллессĕн кантăк патне пымарĕ, ахалех чухлать. Ку ачана вăл сассинченех уйăрчĕ: Мишша, кӳпшек питлĕ хура ача. Паян урок пĕлмен пирки

асăрхаттарса хăварма тиврĕ-ха. Мишша кама çапла «йăпăлти» тесе калани те паллă. Куçкана ĕнтĕ.

Ольга Ивановнăна виç-тăватă кун каялла пулса иртнĕ ĕç асне килчĕ: çав каç çумăр чĕресрен тăкнăн çĕрĕпех çурĕ. Ольга Ивановна ирех шкула кайма тухрĕ. Умра вăрман кати. Унта тарăн вар пурри хăратать чуна. Ав, епле шавлать! Çумăр шывĕ анса тулнă пулас. Каşлани таçтан илтĕнет.

Çырма хĕрринелле çитнĕ çĕре тул яриех çутăлса çитрĕ. Шикленсе пăхрĕ учительница аялалла. Çак вăхăтра курах кайрĕ: Куçка тăра парать. Аллинче унăн вăрăм хăма.

— Мĕн тăватăн эсĕ кунта, Куçка? — кăшкăрчĕ вăл аякранах.

— Сире кĕтсе илме тухрăм,— çапла пулчĕ сăмахĕ Куçкан.— Çырма урлă каçнă чух урана йĕпетме пултаратăр.

Çуллахи шăрăх вăхăтра çак çырма тĕпĕнче пите йĕпетмелĕх шыв тупаймастăн, халĕ вара шарлаттарсах юхать.

— Ольга Ивановна, сире халех каçă туса паратăп,— терĕ Куçка, аллинчи вăрăм хăмана шыв урлă учительница еннелле тăсса.

Тăп-тăп пĕчĕк кĕпер. Учительница ним шикленмесĕр утса каçрĕ. Ура та тип-типех. Куçка каçă хуман пулсан, унăн чĕркуççи таран шывра ашмаллаччĕ. Вĕрентекенĕн кăмăлĕ вĕçсе каймалла çĕкленчĕ, чуна çурхи хĕвел шевли кĕнĕ пекех савăк.

Çак вăхăтрах Куçкасен ялĕ енчен пĕр хĕрарăм пырса çитрĕ тарăн вара.

— Каç, каç, Анук аппа. Ан хăра,— сĕнет Куçка ăна.

— Куртăм-ха, куртăм эсĕ учительницуна шыв урлă хăма хурса каçарнине,— сăмахларĕ хĕрарăм.— Ăслă ача. Ман Мишша тин вырăн çинчен тăрса юлчĕ, ав.

Анук аппа çырма урлă каçса ферма еннелле кайрĕ. Куçкапа учительница шкулалла уттарчĕç.

Куçка учительницăна хирĕç тухса илни çинчен амăшĕ Миششапа юмахланă ĕнтĕ. Анчах мĕнле каласа кăтартнă-ши? Шухăша темле те пĕлтерме пулать-çке. Тен, вăл Куçкана мухтаса илнĕ, тен, ывăлне юлхавшăн ятланă?

Епле чăрсăрланать Мишша! Ун енче икĕ юлташĕ. Пĕри — Кунни, яка пуçлăскер. Тепри — Толя.

Класри ытти ачасем — Куçка майлă.

Икĕ ушкăн хушшинче тавлашу хĕрсех пырать. Чышкăсем те чăмăртанчĕç. Халь-халь тытăçса ӳкетчĕç пулĕ, çав вăхăтра шăнкăрав янраса кайрĕ.

Ольга Ивановна йĕп çинчи пек ларчĕ. Вăл пурне те илтеймен. Куçка Мишшана мĕнле айăпне йышăнма хистенине ăнланаймарĕ. Тен, ним усалли те çук? Ача-пăча хушшинче тавлашу-

сем сиксе тухаççех, чĕрĕ çынсем-çке вĕсем. Тепĕр енчен илсе пăхсан, пăшăрханмалли пур. Класс икке пайланни килĕшмест. Çапах та вăл вырăнтан тапранмарĕ. Вĕсем хушшине кĕрсе кайма пулатчĕ ĕнтĕ. Халĕ те кая юлман. Ав, вĕсем кăрах парта хушшинче лараççĕ. Миçе мăшăр куç сăнать ăна. Пурте учительница мĕн каласса кĕтеççĕ. Мишша та кунтах. Ашă куçлă хăй. Усал ача теме хăяймăн. Ăна халĕ, ура çине тăратса, кирлĕ мара пакăлтатнăшăн, тӳпелешме пăхнăшăн класс умĕнче ятлама юрать. Анчах пулĕ-ши усси? Темĕн çав. Çук, çук, ăнланмĕ. Хăйĕн йăнăшне йышăнас вырăнне татах тарăхĕ. Çапах та ĕçе çакнашкал хăварма юрамасть. Куçкана хӳтĕлемелле. Çынна «йăпăлти» тесе хурлани ырă мар. Элеке сирмеллех.

Кăмăлĕ пăсăлнине кăтартасшăн мар тăрăшрĕ учительница. Питех те асăрханса калаçрĕ вăл. Шанчăк та çухалмасть-ха, тен, ачасен хушшинче хирĕçӳсем тӳлек çил пек чарăнĕç те.

Урок пĕтсен, Куçка алă тăратрĕ.

— Мĕн каласшăн эсĕ, Куçка?

— Ольга Ивановна, Мишша ирсĕр ĕç тунă. Вăл Альтук инке пăрăвĕн урине патакпа персе суранлатнă.

— Мĕн, мĕн? — терĕ учительница, тĕлĕнсе.

Ĕнер хĕрарăмсем йĕр хыççăн утса пыни куç умне тухса тăчĕ. Ĕненме май çук. Çӳçентерет. Хыпăнса ӳкнипе çийĕнчех ним калама та пĕлмерĕ.

Ачасем шăпăрт пулчĕç. Вĕсем хăйсен учительници мĕн каласса кĕтеççĕ ĕнтĕ.

— Мишша, тĕрĕсех-и ку? — ыйтрĕ аванах Ольга Ивановна.

Лешĕ ни тунмасть, ни тавлашмасть. Вăкăр евĕр куç айĕн пăхать. Мишша тавлашманни пушшех хăратса пăрахрĕ учительницăна.

— Мишша, эсех...

Çак вăхăтра пĕри алăка шаккаса пуçне кăтартрĕ.

— Каçарăр-ха та... Кĕтсе тăраймарăм,— терĕ алăкри çын.— Ольга Ивановна, йăпăртлăха тухаймăр-ши?

Канаш çулĕ çинче çӳрекен шофер ку. Ольга Ивановнăсен ял çынни.

— Халех,— пĕлтерчĕ учительница. Шофер мĕнле сăлтавпа килнине тавçăрасси асра та çук. Чун, йывăр асапран çăлăнса, самант хаваспа тулчĕ. Ачасем енне çаврăнчĕ те вăл, çапла каларĕ: — Киле кайăр! Мишша пирки ӳлĕм калаçăпăр.

Айăплăн, пуçĕсене усса, шăв-шавсăр саланчĕç вĕсем.

Шофер класа кĕчĕ.

— Ларăр,— сĕнчĕ ăна Ольга Ивановна, пукан парса.— Итлетĕп, мĕнле ĕçпеччĕ?

— Ĕçпех мар-ха,— терĕ лешĕ, пуçĕнчи карттусне хывса,—

сирĕн шкул ачисем кăшт тарăхтаркаларĕç те, кĕрсе тухам-ха терĕм, уншăн ним те пулмĕ терĕм.

— Тарăхтарчĕç?

— Ытлашши тарăхтарсах мар-ха. Ларса çӳрекенсем сире калама хушрĕç. Вăрмантан чупса тухаççĕ те чулпа ывăтаççĕ, автобус кантăкне тивертесшĕн. Виçĕмкун пĕри лектернĕ. Юрать, кантăкĕ чанкăрах ванман, кĕтесрен кăна чĕрпĕкленнĕ.

— Ачисем йышлăччĕ-и? — ыйтрĕ учительница.

— Те иккĕн, те виççĕн. Қалăр-ха, тек ун пек ан ашкăнччăр, аван мар апла, тейĕр. Ытлашши ан ятлăр, кантăкĕ хаклă япалах мар, лартма пулать.

Тухса кайрĕ шофер. Ольга Ивановна тăрса юлчĕ тăр-пĕччен. Вун тĕрлĕ шухăш хунларĕ. Мĕн тумалла? Қамсем-ши ашкăнаканнисем? Халь-халь шкула, акă, Альтук инке килсе тухĕ. Тен, автобуса чулпа ывăтакан та Мишшапа ун юлташĕсем? Кĕтмен инкек килсе капланчĕ. Мĕн калĕç çынсем? Паллах, тиркесе калаçĕç: вĕрентекенĕ мĕнле, ачисем те çапла... Чи хăрушши çакăши? Темĕн. Ача-пăча хытă чĕреллĕ, теççĕ. Ниме те хĕрхенме хăнăхман, имĕш. Ӳссен мĕн пулĕ унран? Учителĕн тĕп тĕллевĕ ачана лайăх пĕлӳ панисĕр пуçне, ун чĕрине илем кӳмелле, ырă кăмăл парнелемелле. Қалама çăмăл, анчах çакна мĕнле тумалла-ши? Ку — кирек мĕнле урокран йывăрри.

Хĕрхенчĕ çамрăк учительница хăйне хăй. Ĕçлеме пуçланăранпа нумай та вăхăт иртмерĕ, хăйне «Ольга Ивановна» тесе чĕннине те хăнăхса çитеймен-ха, ачасен йĕркесĕр ĕçĕсем ума килсе те тухрĕç.

«Учительница пулма пӳрмен мана»,— хурланать Ольга Ивановна. Тӳрех тăваттăмĕш класра ĕçлеме килнĕшĕн те ӳпкелешрĕ. Пĕрле вĕренсе тухнисем, ав, ĕçе пĕрремĕш класран пуçăнчĕç. Вĕсене, паллах, çăмăл. Пĕчĕк ачасем, вулама, çырма пĕлменскерсем, кама кӳрентерччĕр?

Чарăнайми ăш вăркать. Çырас Константин Қириллович патне. Ас паратех. Тепĕр тесен, чăрмантарни те килĕшӳсĕр. Қанăçне çухатĕ те, сывалаймĕ те. Эппин, кампа калаçас?»

* * *

Паян диктант çырмалла. Ачасен çыру тетрачĕсем шкапра. Пысăк купа. Портфеле илсе чикнĕ чух, куç тĕлне Қуçка тетрачĕ пулчĕ. Уçса пăхрĕ те учительница, курчĕ: «Пиллĕк». Нихăш сăмахра та йăнăш çук. Тап-таса çырнă. Мишшинне те тупса пăхасшăнччĕ, вăхăт сахал юлнă. Тепĕр тесен, мĕн пăхмалли пур, унсăрах — асра. Унăн «виççĕ» паллă.

Халиччен Ольга Ивановна çĕкленӳллĕ туйăмпа шкула тух-

са каяканччĕ. Хăвăртрах ачасене курас килетчĕ ун. Иçука хăйне курма мĕне тăрать. Урок вăхăтĕнче час-часах шухăша кайса чӳречерен пăхать вăл. Юнашарах—Манюк. Унăн çӳçĕ хуп-хура. Иккĕмĕш парттăра ларакан вăрăм çивĕтлĕ Кĕтерин, çав тери канаш, сĕнӳ пама юратакан хĕрача. Акă тата Мишшанах илес. Вăл пуринчен ытла алă çĕклет. Ыйтсан, хăй нимех те пĕлмест. Çак ачасене вĕрентессинчен ырăрах ĕç тĕнчере урăх ним те çук-тăр.

Паян шкула каяс килмест унăн. Ачасем ним чухлĕ те илĕртмеççĕ. Мĕне пĕлтерекен туйăм ку? Çамрăк учительница хăйĕнчен хăй хăраса шартах сикрĕ. Пĕчĕк кăлтăках чуна шкултан сивĕтме вăй çитерет-ши? Пулма пултараймасть!

— Ан хăй нăйкăшма! — сасăпах каларĕ вăл хăйне. Вара тетрадьсем чиксе тултарнă портфельне хăпăл-хапăл илчĕ те шкул çулĕ çине тухрĕ. Тӳпе тăхлан пĕлĕтпе катрамланнă. Хĕвел шевлисем пытаннă. Сивĕ çурăма çӳçентерет. Вăш-ш, вăш-ш вĕрет çил пите хирĕç. Пулин, вĕртĕрех. Тен, çапла кирлĕ те. Шухă çил шăлса тасаттăр чунри халсăрлăха, кăмăла уçăлтартăр.

Амăшĕпе калаçни асне килчĕ.

Тĕнчере аннерен çывăх çын тупăнаймĕ çав. Хыпса çуннине пĕрре пăхсах чухлать вăл.

— Ольга, куçусем сĕлкĕш,— асăрхарĕ амăшĕ киле пырса кĕрсенех.— Ытлашши ывăнтăн-и е мĕн те пулин сиксе тухрĕ?

Учитель ĕçĕ питĕ йывăр. Çавна пĕле тăркачах амăшĕ хĕрне вĕренме педагогика училищине хăй янăччĕ. Çынна юратниех хĕрне вĕрентекен тума хистенĕ ăна. Хăй вăл ĕмĕр тăршшĕпех больницăра сестрара ĕçленĕ. Чир-чĕре сирсе, çынна çăмăллăх пани — пархатарлă ĕç. Пенсие кайнă вăл, апла пулин те, ĕçлет.

Шкулти хыпарсене йăлтах каласа пачĕ хĕрĕ амăшне. Йĕрсе те илчĕ.

— Айван-ха эсĕ,— терĕ амăшĕ.— Куляннинчен мĕн усси? Ку хуйхă мар, пурнăçри пĕчĕк кăлтăк çеç. Паллах, ăна та якатмалла.

Амăшĕ ăна Альтук инке патне кĕрсе тухма сĕнчĕ.

Альтук инке çурчĕ çул хĕрринчех. Кĕчĕ. Хапăлласах йышăнчĕ хĕрарăм. Калаçма ухатаскер. Пĕртен-пĕр ывăлĕ ун — салтак. Çар службин отличникĕ. Çар чаçĕ тав туса янă çыру илнĕ амăшĕ.

Урăх сывлăшпа, çĕнĕ шухăшпа тухрĕ учительница хăнаран. Альтук инке салтак амăшĕ. Çав ятпа хушас Мишшана ăна пулăшкалама.

Çул çинче Ольга Ивановна шкула каякан Куçкапа Фениçе хуса çитрĕ.

— Куçка, Фениç,— чĕнчĕ вăл,— пионерсен сборне туса ирт-

терер-и? Хӑнана Альтук инкене, шофер юлташа чӗнер. Юрӗ-и?

— Irrтеретпӗр! — килӗшрӗҫ лешсем.

Куҫка учительница аллинчен портфельне илчӗ.

Шкула ҫитсен, класа виҫҫӗн пырса кӗнине пурте курчӗҫ тӑваттӑмӗш класс ачисем. Куҫка портфеле сӗтел ҫине хучӗ. Шӑвшав вара лӑпланчӗ самант.

— Тавтапуҫ сире, иксӗре те,— тет учительница Куҫкапа Фениҫе пӗтӗм ача умӗнче. Хӑй пурне те сӑнать.

— Фениҫ та кӗтсе илме пынӑ-и? — персе ячӗ Мишша тӗлӗннипе. Хӑйӗн куҫӗ — шӑп алтӑр.

Ольга Ивановна ҫапла каларӗ:

— Кирек кам та мана тухса илме, ӑсатса яма пултарать. Мишша сиксе тӑрасла пӑркаланать, сак хӑми витӗр пӑта вӗҫӗ шӑтарса тухнӑ тейӗн.

— Мӗн вара портфельте?— ыйтать вӑл каллех.

Вӑл ҫеҫ пӗлмест. Ыттисем учительницӑшӑн каларӗҫ:

— Пирӗн тетрадьсем!

— Паян вырӑс чӗлхипе диктант.

— Каллех-и?— йынӑшса ячӗ Мишша.

Лекрӗ те вара куншӑн Мишшана. Карах ярса илчӗҫ:

— Мӗнле каллех?

— Эсӗ ҫыраймасран хӑраӑтӑн-им?

— «Иккӗ» ҫаклатсан, пӗл вара мӗн пуласса!

Ачасем Мишшана ҫапла туслӑн хӑтӑрни килӗшрӗ учительницӑна.

Татах шавлатчӗҫ пулӗ, шӑнкӑрав сасси янӑрарӗ, лӑпланма вӑхӑт.

Диктант ҫырма тытӑнчӗҫ.

* * *

Яланах йывӑрпа иртет юлашки урок. Ывӑнса ҫитсен, тимлӗх сӗвӗрӗлет. Учительницӑн ачасен кӑмӑлне ҫӗклеме, ывӑннине сирсе яма пӗлмелле. Вӑл шкапран илемлӗ коробкӑсем кӑларса кашни парта ҫине пӗрер хурса тухать. Арҫын ачасемпе хӗрачасен куҫӗсем ҫӑлтӑрла ҫиҫсе илчӗҫ. Такам чӗрӗ вӑй вӗрсе кӗртрӗ.

— Ай-уй! Мӗн чухлӗ кӑранташ! — чӗнкӗлтетсе янрарӗ Фениҫ сасси.— Тем тӗсли те пур!

— Ӳкерчӗксем тӑвӑпӑр. Тетрадӗрсене кӑларӑр,— хушать Ольга Ивановна.

Вӗренекенсем тетрачӗсене парта ҫине уҫса хуриччен шарламасӑр тӑхтаса тӑчӗ хӑй. Вара тӳрӗ лармалли ҫинчен асӑрхаттарчӗ те каларӗ:

— Халĕ эпĕ «Разлив кӳлли хĕрринче» калав вуласа паратăп. Итлĕр те, мĕн асăрхаса юлнине хут çине ӳкерĕр.

Калавĕ вăл пурĕ те икĕ страница çеç.

Умлă-хыçлă икĕ хут вуланă хыççăн мĕн ăнланнине ачасене калаттарчĕ.

— Мĕнле ӳкерчĕксем тума пулать тин çеç вуланă калав тăрăх? — ыйтрĕ Ольга Ивановна.— Владимир Ильич сăнне чăнчăн художник çеç ӳкерме пултарать. Унсăр пуçне мĕн асра юлчĕ, çавна ӳкерĕр.

— Мĕн ӳкерес-ши? — тет Иçук.

Вăрăм çивĕтлĕ Кĕтерин сиксе тăчĕ те темиçе сĕнӳ пачĕ:

— Ӳкер: кӳлĕ, кимĕ!

Учительница ăшра йăл кулать. Класра Кĕтерин пеккисем — ялан «ăс параканнисем» те — кирлех, унсăрăн кичем пулĕ.

Мишша та алă çĕклемесĕр тӳсеймерĕ.

— Ну, Мишша, сана итлетпĕр.

— Кӳлĕ, кимĕ! — пат татса калать ача.

— Юрĕ, юрĕ. Кашниех хăй мĕне кăмăллать, çавна ӳкертĕр.

Класс лăпланать. Пурте ĕçе пикенчĕç.

Илĕртӳллĕ шухăшсем çуралчĕç пулас ачасен. Толя, ав, чĕлхине çыртсах хут çине кăранташпа чĕркелет. Куçка ытлашшипех пĕкĕрĕлнĕ. Витĕрех кураймасть-ши? Куçлăх тăхăнмалла, тен, ун? Шкула тухтăрсем килмелле те, анчах хăçан çитеççĕ? Тӳрĕ ларма хушас, апла ăна шухăшĕнчен уйăрма пулать. Кĕтерин шăл хушшине кăранташ хĕстернĕ. Шухăша путнă.

Ольга Ивановна сĕтел хушшине пырса ларчĕ. Çыру вуласшăн. Константин Кириллович янă. Мĕн çырнă-ши?

«Хисеплĕ Ольга Ивановна!

Çырушăн тав. Кунта çыру илсе вулани вăй-хăват кĕртет. Ĕçĕр ăнăçлă пырать мĕн-ха. Мухтатăп. Çула тухиччен калама маннă: ачасем урок хыççăнхи вăхăтне усăллă ирттерме пĕлмеççĕ. Тупса парăр-ха вĕсене пĕрле тĕрмешмелли, чун илĕртекен ĕç. Унсăрăн ашкăнса çӳреме пăхĕç. Кайран чăрмавĕ пысăк пулĕ. Ача-пăча лара-тăра пĕлмен халăх. Чăн-чăн шыв пулли вĕсем.

Сывлăх юсанать пек.

Пурне те салам!

Сирĕн çывăх тусăр — КК».

Çамрăк учительницăна çыру шухăша ячĕ. Тĕрĕсех çырать Константин Кириллович. Уроксем хыççăн ачасем пурте пĕрле нихăçан та пуçтарăнман. Тен, çавăншăнах вĕсем усал ĕçе ерчĕç: пĕри пăру урине амантать, тепри тĕл пеме пултарнипе мухтанасшăн автобус кантăкне чулпа ыватать.

Сбор ирттерсен, тимуровецсен команди ĕçлеме тытăнĕ-ха.

Ку сахал. Пурин валли те чуна ҫӗклентерекен пӗр ӗҫ тумалла. Мӗнле ӗҫ?

Ольга Ивановна, сӗтел хушшинчен тухса, партӑсем ҫумӗпе утрӗ. Кам мӗн ӳкерет-ши? Кӗтерин, мӗн ӳкермеллине сӗнчӗ пулин те, хӑй пачах урӑххи ӳкерет: ӳпле, ав. Ун умӗнче кӑвайт ҫунать.

Мишша умӗнче чарӑнса тӑчӗ учительница. Хӑвӑрт ӗҫлет ача. Кӑранташ тытнӑ пӳрнисем вылянаҫҫӗ кӑна. Тӑхта-ха, ку ачан ӳкерес енӗпе ӑсталӑх пур мар-и? Ытармалла мар ӳкерчӗк! «Ҫаврака кӳлӗ. Хӗрринче симӗс хӑмӑш ӳсет. Акӑ, йывӑҫ. Вуллине пӑхсан тӳрех тавҫӑран, ку йывӑҫ — хурӑн».

— Хӑмӑш хушшинче кимӗ пулать. Халех ӳкеретӗп кимме,— пӗлтерет Мишша.

— Маттур. Кӳлӗ йӑлтӑртатса выртнине, хурӑн кӑтраланса ларнине, хӑмӑш кашланине ӗненмелле,— тет учительница. Чылайччен пӑхса тӑрать вӑл Мишша ӳкерчӗкне. «Художника кӑтартса пӑхмалла мар-ши? Унӑн пултарулӑхӗ шӑпах, тен, ҫак ӗҫре?..»

Шӑнкӑрав янраса кайрӗ коридорта. Кӗтменччӗ кӑна. Ӗҫ никамӑн та вӗҫленмен-ҫке. Ҫавӑнпа та ачасем ахлатсах ячӗҫ.

Учительницӑна ачасем кулянса илни килӗшрӗ. Вӑл ачасене пуҫланӑ ӗҫе тепӗр урокра туса пӗтересси ҫинчен пӗлтерчӗ. Лешсем хӗпӗртерӗҫ вара, вӗҫсе кайманни кӑна.

Манюк — класс старости. Ӑна учительница тетрадьсене пухса шкапа хума хушрӗ. Ыттисем те пулӑшрӗҫ. Кӑранташ коробкисене, тетрадьсене шкапа вырнаҫтарса хурсан, киле кайма юрать.

Кӗтмен-туман ҫӗртен Куҫка учительница сӗтелӗ патне утса пычӗ те каларӗ:

— Ольга Ивановна, эпӗ ӑсатма пыратӑп сире. Юрӗ-и?

Ҫамрӑк учительница сасартӑк мӗн кирлине тупрӗ!

— Ҫук, Куҫка, сана ман япаласене пӗччен йӑтса пыма йывӑр пулать,— терӗ вӑл, ачасем ҫине пӑхса.

Пӗтӗм класс самантлӑха шӑп тӑчӗ. Унтан чӗрӗ сывлӑш кӗнӗн чӗвӗлтетме тытӑнчӗ. Фениҫ чупса пырса учительницӑн портфельне илчӗ. Ҫак вӑхӑтра Кӗтеринӗн уҫӑ сасси янраса кайрӗ:

— Эпӗ те пыратӑп!

Учительницӑна ӑсатма пыракансен йышӗ хӑвӑрт ӳсрӗ. Вӗсем портфеле пӗри те тепри ҫӗклесшӗн пулчӗҫ. Тавлашӑва аслин хутшӑнмасӑр ӗҫ тухмасть. Вӑл пӗрне хаҫатпа чӗркенӗ тетрадьсене тыттарчӗ.

Мишша хӑйне ним илтменле, курманла тыткалать. Тантӑшӗсем портфельшӗн тӗрмешни ӑна пӗртте пырса тивмест. Пуҫне карттус тӑхӑнса ҫурӑм хыҫне сумкине ҫаксан, тусӗсене, Куннипе

Тольăна, куç хĕссе, пуçне сĕлтрĕ. Ку ĕнтĕ команда панине пĕлтерчĕ: ман хыçран! Хăй тӳп-тӳррĕн утса тухса кайрĕ класран. Куннипе Толя унталла та кунталла чупкаларĕç. Мишшан хăвачĕ вăйлăрах-мĕн, ун хыççăн тухса ыткăнчĕç-ыткăнчĕçех.

Ольга Ивановна пĕтĕмпех курать, çапах та хăй ним те шарламасть. Паян уйрăммăн тухса кайрĕç, ыран пурпĕрех йышлисен ушкăнне пырĕç.

Ăсатакансем учительницăпа пĕрле кĕшĕлтетсе тухрĕç шкултан. Шавлаççĕ. Савăнăçлă. Пахча хыçне тухрĕç. Акă аслă çултан йӳпленсе вăрман еннелле сукмак выртать. Ку вăл — Ольга Ивановна çӳрекен çул. Хăй сукмакĕ çине тухрĕ вăл. Çук, никам та тăрса юлмасть. Харăссăн утаççĕ пурте малалла. Вĕсем учительница çумĕнче, умра, хыçалта, айккинче. Пĕлесчĕ аслă тусне мĕн тери хĕпĕртеттернине. Чи малтанхи чи пĕчĕк çĕнтерӳ! Виçĕ ачасăр пуçне пĕтĕм класс вĕрентекен енче. Кун хыççăн Мишша текех Куçкана «йăпăлти» тесе айăплаймĕ. Мĕншĕн тесен пĕтĕм ача учительницăна ăсатать.

Çул вăрăм мар. Чугун çул урлă каçсан — вăрман. Çырма хĕрринче ачасемпе уйрăлмалла. Ольга Ивановна сăмах пуçлама васкарĕ:

— Ачасем, сире хам ĕмĕте пĕлтерем-и?

— Мĕнле ĕмĕт? — ыйтрĕç темиçен пĕр харăс.

— «Разлив кӳлли хĕрринче» калав тăрăх чи лайăх ӳкернĕ сирĕн картинăсенчен Октябрь уявĕ тĕлне выставка йĕркелесен мĕнле-ши?

— Ай-яй!

— Питĕ лайăх пулать!

— Йĕркелетпĕр выставка!

— Мĕнле чаплă пулать!

— Пĕлсех тăратăп: манăн ӳкерчĕк выставкăна юрăхлă пулать.

— Манăн та!

— Сан юрăхсăр!

— Юрăхлă!

Ольга Ивановна ачасене шавлама чармарĕ, чунра мĕн пуррине уçса пама ирĕк пачĕ.

— Чимĕр-ха, чимĕр,— асăрхаттарчĕ вăл пĕр хушă чĕнмесĕр пынă хыççăн,— эпĕ каласа пĕтерейммерĕм. Пĕлетĕр-и мĕн? Атьăр Ленин кĕтесĕ йĕркелĕпĕр! Унта хамăр тунă макета лартăпăр.

— Макет?

— Макет. Çур метр сарлакăш хăма çине чăн-чăн пĕчĕк ӳпле, ун умĕнче тунката çинче вуласа ларакан Ленин, айккинерех — патаксем çине çакнă котелок. Хуран айĕнче кăвайт çунать.

Çакăн пек сăмах хыççăн ачасен калаçăвĕ тепĕр хут чĕрĕлсе



кайрĕ. Çĕр ыйту! Ĕлкĕр кăна ăнлантарса пама. Вăрăм çивĕтлĕ Кĕтерин кунта та сĕнӳ памасăр тӳсеймерĕ:

— Рамăсем ытларах ăсталамалла, сăвăсем çырмалла!

Юлташĕсем ахăлтатса кулса ячĕç. Ахалех унăн канашне сивлерĕç. Халлĕхе пурпĕрех камăн мĕн тумаллине чухлаймаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Фениçăн йĕс шăнкăравлă сасси чĕнкĕлтетрĕ:

— Эпĕ мĕнле пулăшу пама пултарăп-ши?

Майĕпен калаçу шăпланчĕ. Кашниех шухăша путрĕ.

— Мĕн эсир, хыпăнса ӳкрĕр те-и? — кулкалать учительница.— Паянтан пуçласах Ленинăн сăнӳкерчĕкĕсене пухма тытăнмалла.

— Открытка та юрать-и? — ыйтрĕ Иçук.

— Юрать. Кам каскалама ăста, çавсем ӳпле тăвĕç. Пурте шухăшлăр! — сĕнчĕ аслă тус ачасене.

Илĕртӳллĕ калаçу пуçлансан, темшĕн вăл вăрăм çул та кĕскелет. Тем чул хирĕçлесен те, тарăн варта ачасен хăйсен учительниципе сывпуллашма тиврех.

* * *

Отряд сбора пухăнчĕ. Тĕп тĕллев — тимуровецсен ушкăнне йĕркелесси. Çавна май сбора салтак амăшне — Альтук инкене — тата иртнĕ кунсенче, пĕринче, шкула кĕрсе тухнă шофера чĕнчĕç. Шофер тем сăлтава пула пыраймарĕ.

Альтук инке пычĕ, калаçрĕ. Халĕ вăл ялти ытти хĕрарăмсенчен нимпе те уйрăлса тăмасть. Ун çийĕнче икĕ аркăллă пурçăн кĕпе. Умлă саппун çыхнă. Пуçĕнче тутăр. Çак ăшă сăн-питлĕ хĕрарăм тахçан салтак тумĕ тăхăнса, пăшал çакса, тĕнче хĕррине çитнине ниепле те ĕненес килмест. Анчах та ку тĕрĕс. Ачасене кăтартма вăл сбора салтак тумне тутăрпа çыхса илсе килнĕ. Тĕссĕрленерех панă гимнастерка çумĕнче Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, медальсем. Пионерсем ытарайми пăхаççĕ вĕсем çине. Альтук инке сăмахĕнче совет салтакĕсем фронтра тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçни çинчен, пулас ăрусен телейлĕ пурнăçĕшĕн çапăçу хирĕнчех выртса юлнă çынсем çинчен асăнчĕ.

«Вăрçă тухиччен эпĕ колхоз бригадирĕччĕ. Пахчаçимĕç туса илессишĕн тăрăшаттăмăр. Ĕç паттăрĕсем тетчĕç пире. Фронтра та ята яман. Ялан малта пынă. Çавăнпа çĕнтерӳпе таврăнтăмăр.

Хамăрăн юратнă Совет çĕршывне халĕ те куç шăрçине упранă пек упрамалла. Сирĕн те, ачасем, çара кайма вăхăт çитет. Çарти паттăр ывăлсемшĕн эпир, амăшĕсем, чунтан савăнатпăр тата мăнаçланатпăр. Хăвăрах пĕлетĕр, ман ывăл, Антун — çарта. Вăл унта лайăххисен шутĕнче. Пĕр пытармасăр калатăп:

эпĕ, амăшĕ, хĕпĕртетĕп. Эпĕ çакăншăн та телейлĕ: иртнĕ эрнере Антун тăракан чаçран çыру илтĕм. Маттур ывăл ӳстернĕшĕн тав тăваççĕ мана. Эсир те, ачасем, пионерсем, аслă Тăван çĕршывăмăра юрăхлă пулса ӳсĕр!»

Çартан килнĕ çыру алран алла çӳрерĕ.

Ольга Ивановна ытларах тӳрĕ кăмăл пирки, чыса упрас пирки чарăнса тăчĕ. Шофер мĕнле ӳпкелешӳпе шкула кĕрсе тухнине аса илмесĕр хăвармарĕ. Пăру инкекĕ çинчен Альтук инке шарлама хушмарĕ.

Пионерсем те пĕр-пĕрин йĕркесĕр ĕçĕсене сивлесе калаçрĕç.

Сборта пионерсем Антунпа, унăн çарти юлташĕсемпе çыхăну тытма йышăнчĕç. Çыруне пĕрремĕш чĕрĕке ыррăн пĕтерсен çеç Октябрь уявĕ хыççăн, çырмалла.

Юлашкинчен пионерсем тимуровецсен ушкăнне ертсе пыракансене суйларĕç. Пионерсем пурте — тимуровецсем. Унтан Куçка сĕнӳ пачĕ:

— Альтук инке вăрçăра пулнă. Унăн ывăлĕ те салтак. Халĕ вăл пĕчченех пурăнать темелле. Пионер-тимуровецсем ăна пулăшса пыма тивĕçлĕ.

— Мишша çӳретĕр,— тет Альтук инке.

Мишша сиксе тăчĕ те татăклăн каларĕ:

— Эпĕ килĕшместĕп!

Пионерсем ирĕксĕрлемерĕç тантăшне. Манюка хушрĕç.

Учительница каллех ним те тавçăраймарĕ.

* * *

Октябрьти социализмла Аслă революци уявне ачасем ыр тĕслĕхсемпе кĕтсе илесшĕн. Унсăрăн салтаксем патне çыру çыраймаççĕ-çке. Пĕрремĕш чĕрĕке лайăх паллăсемпе вĕçлемелле. Ленин кĕтесне туса пĕтермелле тата концерт хатĕрлемелле. Хастар тытăнчĕç ĕçе.

Концерт тенĕрен, учительницăн куçĕ умне темшĕн хăй вĕрентекен ачасем шăкăр-р тухса тăчĕç. Кам мĕн тăхăнман-ши? Пĕрин кĕпи хĕрлĕ чечеклĕ, теприн — хăмăр, виççĕмĕшĕн — кăвак. Хĕрачасен кĕпи вăрăм, шалпар. Çавна пулах ятусăр курăнаççĕ. Сцена çине мĕнле тухмалла тĕрлĕ тĕслĕ тумпа? Килĕшӳсĕр. Ачасен вĕлтĕрти лĕпĕш евĕр илемлĕ курăнмалла. Çĕлесе тăхăнтарас вĕсене пурне те пĕр пек тум. Хĕрачасен кĕске чакăр юбка, шурă кофта, мăйĕнче пионерсен хĕрлĕ галстукĕ. Мĕн тери чаплă пулмалла! Вара концерт пынă вăхăтра сăн çаптарас, çар чаçне ярса парас.

Ольга Ивановна ачасене хăй шухăшлана çĕнĕ тумпа яр-уççăн курчĕ. Савăнăçĕ ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр çĕкленчĕ.

Йекел, ҫӗрулми пухса панӑшӑн шкула укҫа уйӑрса панӑ. Вара вӑл мӗн кирлине туянчӗ.

Тепӗр кунне, уроксем пуҫланиччен, хӗрачасене кашнинех юбкӑпа кофта ҫӗлеме сантиметрпа виҫсе, тетрадь ҫине ҫыра-ҫыра хучӗ. Хӗрачасене лайӑх тум ҫӗлесе парас пирки иккӗленмест. Мӗн пӗчӗкренех хӑй валли хӑй ҫӗленӗ кӗпе таврашне. Арҫын ачасене шӑлавар ҫӗлеме ҫӑмӑл мар-тӑр. Амӑшӗ пулӑшӗ. Ун пирки иккӗленмест.

— Халӗ вӗренес пирки шухӑшламалла. Малтанхи урок пирӗн арифметика. Тӗрӗслӗпӗр, киле парса янӑ задачӑсене паян мӗнле шутланӑ? Мӗнлеччӗ-ха пирӗн пӗрремӗш задача?

Пӗри те тепри алӑ ҫӗклет. Ачасем задачӑна мӗнле шутласа тупсӑмне тупнине каласа параҫҫӗ. Ентӗ ҫӗнӗ задача шутлама вӗренмелле. Пӗри доска умне тухнӑ.

Класс аванах ӗҫлет. Анчах Ольга Ивановнӑна кассӑн-кассӑн кичем пусать, темӗскер ҫитмест пек. Мӗскер ара? Сасартӑк вӑл паян Мишша алӑ ҫӗклеменнине асӑрхарӗ. Пӑхрӗ. Ача хӑй вырӑнӗнче. Йӗркеллех. Яланхи пек мар Мишша паян, шӑп ларать вӑл. Акӑ мӗнле иккен йӑлана кӗнӗ хӑнӑху. Унсӑрӑн ӗҫ кӗвве лармасть-мӗн. Ҫӗкле эсӗ аллуна, Мишша, ҫӳлерех ҫӗкле, пӗлетӗн-и урокна, пӗлместӗн-и, пурпӗрех ҫӗкле. Чим-ха, мӗншӗн вӑл шӑпах?

— Мишша, эсӗ мӗн пит сӗлкӗш ларан? — тет Ольга Ивановна.

Тӑп тытрӗ тутине ача. Куҫра — курайманлӑх, хаяр хӗлхемсем ҫиҫсе илчӗҫ.

Шӑнкӑрав шӑнкӑртатрӗ. Те кӗтнӗрен, хӑшпӗр чух ҫав тери илемлӗн илтӗнет ун сасси. Ачасем класран тухрӗҫ. Темиҫе ача юлчӗ, вӑл шутра — Мишша та. Ольга Ивановна ун ҫумне пырса ларчӗ. Ача партӑн тепӗр вӗҫне шурӗ.

— Эпӗ кӳрентермерӗм пулӗ те сана?

Лешӗ чӗнмест. Пуҫне айккинелле ҫеҫ пӑрать. Чармак куҫӗ шывланчӗ.

Ача йӗме пикенет пулсан, ӑна тӗкӗнмесен авантарах. Куҫҫулӗпе хуйхӑ-суйхӑ та юхса тухаканччӗ. Тӑрса кайрӗ вара вӗрентекен.

Сад пахчинче уткаласа ҫӳрет каллӗ-маллӗ учительница. Ҫапах та Мишша асран тухмасть. Чӑнах, мӗнле хуйхӑ-ши ҫав пӗчӗк ҫыннӑн? Нумай пулмасть Ольга Ивановна ун патӗнче килте пулнӑччӗ. Амӑшӗпе иккӗшех пурӑнаҫҫӗ. Илемлӗ ҫамрӑк хӗрарӑм Мишша амӑшӗ — Анук аппа. Вӑтанаканскер пулас, сӑмах каламассерен хӗреле-хӗреле каять. Кил-ҫуртӗнче таса. Ывӑлӗ ӑна ҫав тери юратни сисӗнет. Унсӑрӑн мӗнле пултӑр? Амӑшӗ ӗнеферминче ӗҫлени ҫинчен Мишша мухтанса калаҫать.

Шел, ачан ашшĕ çук. Ырă кăмăллă çын пулнá, теççĕ. Ĕçлессе колхозра ĕçленĕ, шофер. Анчах та çамрăклах çĕре кĕме пӳрнĕ çынна...

Ывăлĕ пăру урине çапса суранлатнине амăшĕ ĕненмест. Ольга Ивановна та иккĕленет, ара, халĕ Мишша чиперех çӳрет, усал ĕçпе палăрмасть.

* * *

Ленин кĕтесĕ тăвасси пурне те тыткăнларĕ. Класра та калаçу пĕр çакăн çинчен çеç. Мишша та вĕтеленсе çӳрет. Уйрăлмарĕ класран. Ăслă турĕ.

«Разлив кӳлли хĕрринче» макет ăсталанă çĕре хăшпĕр ашшĕ-амăшсем те хастар хутшăнчĕç. Мĕн чухлĕ тата халап-юмах çӳремерĕ-ши? Çăл хĕрне шыв ăсма пырсан та, хĕрарăмсем сăмах тапратмасăр ирттермеççĕ. Вĕсен калаçăвĕ уйрăмах Ольга Ивановна учительница пирки пырать:

— Ырă çын аллине лекрĕç пирĕн ачасем.

Кĕнекесем вулаттарать.

— Манăн ывăл килте «пирĕн учительница» тесе çеç тăрать.

— Ленин кĕтесĕ йĕркелеттерет-ха ачасене шкулта.

— Çапла, çапла. Питĕ кирлĕ ырă ĕç.

— Манăн ывăл картинкăсем питĕ нумай пухрĕ, шкула Ленин кĕтесĕ валли илсе каять.

— Эпĕ хĕрĕме картинкăсем хам тупа-тупа паратăп.

— Пирĕн ашшĕ хăй çӳрет шкула ачасене пулăшма.

Учительница нумай ачасен ашшĕ-амăшĕсен ăшă кăмăлне аван туять.

Макет... Чи хакли, чи пахи кунта — Ленин. Ильич ӳпле умĕнчи тунката çинче ларса вуланă, çырнă. Çакна макетра мĕнле ăсталаса вырнаçтармалла-ши? Ачасем шутсăр тăрăшрĕç, сахал мар тар юхрĕ. Хутран та, фанертан та, пластилинран та ăсталама пикенчĕç. Çав таранах ăсталăх çуккине аван пĕлет Ольга Ивановна, çапах та чармасть. Ĕçлеччĕр. Вĕсем çине пăхса савăнса кăна тăрать. Тăрăшакансен пурнăçĕ ялан ăнать. Манюкăн ашшĕ Шупашкарта пурăнакан тăванĕ художник патне ятарласа кайса килчĕ. Ленин сăнне ӳкерсе пама пулнă художник. Тӳсейми кĕтеççĕ ăна халĕ ачасем. Ӳпле тума йывăрах мар. Сахалтан та ĕнтĕ вунпилĕк хут туса пăхнах. Кашнинчех лайăхран та лайăх тухать. Кĕске каштасем, çапăсем илсе килнĕ. Пĕчĕк хутаçра тутлă шăршлă утă. Вăл ӳпле çине витме те, утă капанĕ купалама та çитет. Иçук ĕçĕ ку. Çавăнпа та вăл шкула килсенех чи паха япалана сыхланăн тĕрĕслет ăна. Мишша чутлать. Фанертан хурăн йывăçĕ тăвать. Ку яхăнта Куçкапа хирĕçмест, тӳпелешмест вăл. Ку çеç те мар, тата вăл хăй йăнăшне

ӑнланчӗ пулӗ. Пур ача та вӗрентекене ӑсатма, кӗтсе илме пултарать. Мӗнпурӗ те ҫакӑ аслине хисепленине кӑна пӗлтерет. Нимӗн чухлӗ те йӑпӑлтатни мар. Ҫакна тавҫӑрса илме ӑс ҫитерчӗ ӗнтӗ. Макет тӑвас ӗҫе хутшӑнчӗ. Аллисем унӑн чӑнах та ылтӑн. Вӑл ӗҫленине пӑхса тӑма теме тӑрать. Тутине ҫавӑрса ҫыртать те мӑшлатса сывлать. Хурӑн вулли унӑн хатӗр. Шурӑ, хура сӑрсемпе сӑрланӑ. Симӗс ҫулҫӑсем те пулмалла. Тӑватех. Иккӗленмелле мар.

* * *

Ачасем ӗҫленӗ чух, вӗсен хушшинче ялан пӗр ҫынна куран, ку — Куҫка ашшӗ, Петр Петрович. Вӑл ҫамрӑксене ӗҫе хӑнӑхтарать. Куҫка ашшӗ — электрик. Унӑн пӗлӗвӗ питӗ хаклӑ ачасемшӗн. Ӳпле умӗнче Ильич котелокра чей вӗретет. Кӑвайт ҫунса тӑнине мӗнле кӑтартмалла-ха? Чылай хушӑ пуҫа минретнӗ пионерсем. Куҫка ашшӗ вара вӗрентрӗ мӗн тумаллине. Макет хӑми айне электричество батарейи вырнаҫтармалла-мӗн. Хӗрлӗ сӑрпа сӑрланӑ электричество лампочкине шӑп котелок айне, хӑмана шӑтарса, лартас пулать. Ҫиеле пӗчӗк ҫапӑ татӑкӗсем купаласан, котелок айӗнче кӑвайт ҫуннӑ пекех курӑнать.

Ку хутӗнче те ҫаплах: уроксем пӗтнӗ хыҫҫӑн ачасем ӗҫе тытӑнма ӗлкӗрчӗҫ кӑна, Куҫка ашшӗ пырса та ҫитрӗ. Ӗнтӗ ачасемшӗн пӑшӑрханасси ҫук. Анчах та учительница чун-чӗрине ыраттараканни пур. Мишша шкула килмен. Ӗнер кунӗпех уроксенче ҫиллес ларчӗ. Пӗчӗк этем. Унӑн хӑйӗн пурнӑҫӗ. Хуйхисуйхи те, вӑрттӑнлӑхӗ те хӑй ҫумӗнче. Ольга Ивановна, ачасене Куҫка ашшӗпе шанса хӑварса, Мишша патне кайса килме шутларӗ. Тин ҫеҫ тухса кайма пуҫтарӑннӑччӗ, тултан Кӗтерин чупса кӗчӗ.

— Сире Мишша коридора тухма чӗнет,— пӗлтерчӗ хӗрача учительницӑна.

Васкаса тухрӗ класран Ольга Ивановна. Мишша, чӑнах та, кӗтессе тӗршӗннӗ те, тӑрать.

Сӗм вӑрманта аташса ҫӳренӗ хыҫҫӑн пӗр-пӗрне тупнӑнах кӑшкӑрса ячӗ учительница:

— Мишша, эсӗ-и?

Унӑн сассинче пӑшӑрхану, ӳпкелешӳ, савӑнӑҫ хӗлхемӗсем илтӗнчӗҫ.

Мишши те, хӑрушӑ танатаран учительница кӑна ҫӑлма пултарнӑн, куҫран тилмӗрсе пӑхса, чуна мӗн туланине, ним кӗттермесӗр пӗр пуплевпе шатӑртаттарчӗ:

— Ман анне Альтук инке шӑлнӗне, Сантӑр пиччене, качча кайрӗ.

— Мĕн, мĕн?

Учительница хăй илтнине ăнланмарĕ. Унтан самантрах тавçăрчĕ. Çапах та ĕненмерĕ. Тепĕр тесен, мĕншĕн ĕненмелле мар? Пулма пултаракан япала-çке. Ывăлĕн амăш çумĕнче мĕн ĕç пур? Тен, ăна пысăккисен ĕçне хутшăннăшăн вăрçмалла-ятламалла?

Ольга Ивановна çамрăк хĕр, çирĕм урлă каçман. Анчах унăн пысăк туйăмлă чун пур. Çавă кăна, хăйне тӳрех алла илсе, ача хуйхине ăнланма, кăмăлне хăш йĕрпе юхтарма кирлине чухлаттарчĕ. Вара вăл йăвашшăн çапла ыйтрĕ:

— Ҫачча кайрĕ, тетĕн, эппин, аннӳ?

— Çапла. Иккĕмĕш кун Сантăр пирĕн патăмăртан тухмасть.

— Куншăн сан, Мишша, савăнмалла çеç,— тет учительница, ачана çурăмĕнчен лăпкаса.

— Эпĕ ăна кураймастăп!

— Мĕншĕн? Çынни аван пулма кирлĕ-çке. Альтук инке хăй, ав, мĕнле паттăр. Шăлнĕ япăх пулма кирлĕ мар.

— Аван сана. Эпĕ ăна тахçантанпах кураймастăп.

Аслă тусĕ ăнланать. Мĕн чухлĕ тарăху Мишшан. Мĕн таран кĕвĕçӳ! Амăшĕн юратăвне никампа та пайласшăн мар, хăй çеç йăпанасшăн. Амăшĕн пурнăçĕ уншăн аякра.

— Шухăшла-ха, Мишша,— ăнлантарасшăн калать татах учительница,— килте вăйпитти арçынсăр пурăнма аннӳне питĕ йывăр-çке. Хăй фермăра ĕçлет. Килте — выльăхсем.

— Выльăхсене яланах хам пăхатăп,— парăнасшăн мар ача.

— Аçу пулсан сана та хаваслăрах. Килте икĕ арçын! Мĕн тери савăнăç ку аннӳшĕн. Кинона виççĕн каятăр. Пăх-ха эсĕ Куçкана, ашшĕсĕр шит шитлемест. Ялан пĕрле. Паян та, ав, класра пĕрле ĕçлеççĕ, макет ăсталаççĕ. Атте вăл — телей. Ачан ашшĕ пулмаллах.

Учительница çутă телее кăтартма пикеннĕн Мишшана çавăтрĕ те класа утрĕ.

— Кĕр те ĕçле юлташусемпе. Килте пурте йĕркеллĕ пуласса шансах тăр.

Сăнасарах пăхрĕ Ольга Ивановна ачана. Вара çапла ыйтрĕ:

— Аннӳ килте-и?

— Фермăна кайрĕç.

Йӳçĕхсе хăпарнă кĕвĕлĕх сĕвĕрĕлчĕ. Ача кăмăлĕ çурхи хĕвел пекех. Çапла çав вăл, чунри йывăр шухăшсене çывăх çынна каласа парсан, çурăм çинчи чул катрамĕ татăлса ӳкнипе пĕрех. Çăмăллăн сывласа яран.

Мишша хыçĕнчен класс алăкĕ хупăнсанах, Ольга Ивановна урама тухрĕ.

* * *

Çанталăк сисĕнмеллех сулхăнланнă. Кĕрхи çил касса татмаллах витĕр вĕрет. Хăватлăскер. Йывăç тăррисене те пĕр шелсĕр авать, турат çинче типсе пĕрĕннĕ юлашки çулçăсене силле-силле тăкать. Вĕртĕрех, тата хытăрах вĕртĕр çилĕ, ывăннă пуçа уçăлтартăр. Кĕтсех тăр ун пек чух ӳт-пĕве çĕнĕ вăй кĕрессе.

Утать çамрăк учительница. Пальто аркипе шав çил ачи вылять. Хирĕç пулан çынсем пуç тайса иртеççĕ. Сахал ĕçлет пулин те, ун пирки ырă ят сарăлма ĕлкĕрнĕ. Акă юлашки çуртсем. Кунта урам вĕçленет. Лере, çырма хĕрринче — ĕне вити.

Ферма çурчĕн кантăкĕнчен хĕрарăм курăнчĕ. Ку — Мишша амăшĕ. Вăл та çывхарса килекен учительницăна асăрхарĕ. Ахальтен çӳремест. Çавăнпа хирĕç тухрĕ те.

Сывлăх сунчĕç икĕ хĕрарăм пĕр-пĕрне.

— Сисетĕп, ывăлăм тем кирлĕ-кирлĕ мара каласрĕ пулĕха,— тет Мишша амăшĕ, хăй мăкăнь чечекĕ пек хĕрелет.

Кун хыççăн учительницăна сăмах пуçлама та çăмăл. Вăл хăйне кăшт каялла ăсатма чĕнет. Шкулта ачасем кĕтеççĕ-çке. Лешĕ килĕшрĕ.

Вĕсен хушшинче хĕрӳ калаçу. Учительница сăмахĕ пĕрре: ачапа амăшĕ хушшинчи çыхăну пирки.

Икĕ хĕрарăм. Пĕри — ача амăшĕ, тепри — вĕрентекен. Пурнăçĕсем вара пĕлĕтпе çĕр пекех расна. Анчах та вĕсене куçа курăнман япала юнашар çыхса тăрать. Вĕсен ачаран чăн-чăн çын туса ӳстермелле. Мишша халĕ кунĕ пуласси амăшĕнчен нумай килет.

Кĕпер çине пырса кĕреççĕ. Учительницин пур мĕн-ха каламалли:

— Эпĕ сирĕн тусăр. Пырса çӳрĕр. Пĕрле тупсăмне тупма çăмăлтарах.

Уйрăлаççĕ. Ăсатаканнин сукмакĕ каялла, хăнин — малалла. Кашнин хăйĕн ĕмĕт-шухăш.

* * *

Ольга Ивановнăн амăшĕ ирех тăчĕ. Унăн хĕрĕн паян, уроксем хыççăн, ачасен концерт костюмĕсене виçе-виçе пăхмалла. Çĕлеме хатĕрлесе çиппе ярт-ярт туртса тухнă юбкăсене, кофтăсене чăматана майла-майла хучĕ амăшĕ. Кашни юбка, кофта çумне ят çырнă хут çыпăçтарнă. Арпаштарас çук.

Часах хĕрĕ те вăранчĕ, вырăн çинчен сиксе тăрса хăвăрт тумланчĕ.

— Мĕнле çĕклесе кайăн-ха,— асăрхаттарчĕ амăшĕ, тулли чăматан çине пуç сĕлтсе.

— Ан пăшăрхан. Эпĕ вăйлă çын,— тавăрать хĕрĕ, кулкаласа. Чăматана çăмăллăнах çĕклерĕ вăл.

* * *

Ачасем концерт костюмĕсене тăхăна-тăхăна виçнĕ вăхăтра Иçук вакунра чи çӳлти çӳлĕк çинче выртса пычĕ. Телее, пĕр хутчен те билет тĕрĕслемерĕç. Ăçта каять вăл шкулта вĕренес чух? Мĕнле нуша килтен хăваласа тухнă ăна çак йĕпе-сапаллă кĕрхи çанталăкра? Пĕчĕк çыннăн та нуша пур-ши вара? Пур, мĕншĕн ан пултăр? Икĕ кун тӳсрĕ вăл ахаль те. Шкула çӳремен пулсан, тен, тахçанах çула тухса кайнă пулĕччĕ. Учительницăпа тантăшĕсене ытараймасăр, вĕсене чунтан савнипе тытăнса тăчĕ. Малтанхи çулсенче те кунашкал инкек пулкаланă час-часах. Анчах та темĕн чул тарăхнă пулин те, пĕчĕк ăспа килтен хăпайман. Çавăнпа та ашшĕпе амăшĕ пĕр-пĕринпе çапăçнине, хăйне нихăшĕ те юратманнине пĕтĕмпех тӳснĕ. Халĕ ĕнтĕ Иçук хăйĕнче вăй пуррине, пысăкланнине сисет. Текех ниçта кайсан та хăрас çук.

Çула тухиччен темиçе кун маларах ашшĕпе амăшĕ каллех çапăçса кайрĕç. Амăшĕ вара килтен çухалчĕ. Ăçта çывăрса пурăнать-тăр? Иçук чухлаймасть. Иккĕмĕш кун вăл çинĕ-çимен пурăнать. Шкулта та çиес килнипе хырăм çаплах чăрлататчĕ. Вĕри яшкасăр чун канмасть. Ольга Ивановнăна каланă пулсан, вăл хăй пĕçерсе çитернĕ пулĕччĕ. Вăтанни касать Иçука çăвар уçма. Мĕнле калăн-ха?

Шкултан аран сулланса çитрĕ Иçук. Выçă чух хăвна тĕнчере чи телейсĕр пек туятăн. Куççулĕ юхса анасшăн, сас та хурлăхлăн тухать. Çавăн пек вăхăтра чуна хытарма пĕлмелле.

Пӳрте кĕрсен, Иçук тӳрех кăмака умне иртрĕ. Хуран ывăсне уçса пăхрĕ вăл. Хуран тĕпĕ ĕнерхи пекех тип-типĕ. Амăшĕ тавăрăнман, эппин. Тирĕкре пиçнĕ темиçе çĕрулми пурччĕ. Иккĕшне ирхине шкула илсе кайнă. Юлашкине кам илнĕ-ши? Иçук сĕтел сунтăхне алă чиксе ярса хыпашларĕ. Телей! Çур çăкăр! Кĕтесре — хытса кайнă чăкăт.

— Ура! — хавасланчĕ Иçук. Анчах çийĕнчех сас илтрĕ:

— Кам унта?

Йăлт! пăхрĕ ача сасă илтĕннĕ çĕрелле. Курах кайрĕ: урайĕнче ашшĕ выртса парать.

«Ӳсĕр каллех»,— шухăш мĕлтлетсе иртрĕ Иçук пуçĕнче.

— Эпĕ! — пĕлтерме тиврĕ ирĕксĕрех ун.

— Мĕн шыран эсĕ унта, йĕксĕк! Е аннӳ мĕн те пулин усал ĕç тума хушса ячĕ?

Сасси хăйĕн çиллес. Кун пек чух ыррине ан кĕт унран. Амă-

шĕ тĕлне пулнă пулсан, Иçук пĕлсех тăрать, вăл та çапла калатчĕ: «Аçу усал ĕç тума хушса ячĕ пулĕ-ха...» Сахал илтмен вăл ашшĕ-амăшĕнчен пĕр-пĕрин çине çапла йăвантарса калаçнине.

Иçука ăшри темле вăй çирĕппĕн çапла хушрĕ: «Чик çур çăкăрпа чăкăта сумкуна!» Ним хирĕçлемесĕр пурнăçларĕ вăл. Шăп çак вăхăтра ашшĕ тепĕр хут кĕрлерĕ:

— Чуп! Эрех кайса ил!

— Çынсем ачисене эрех илме ямаççĕ! — хирĕçлерĕ Иçук ашшĕне хăюллăн. Ашшĕ урсах кайрĕ.

— Э-э, аçуна хирĕç калама-и?! Ăçта ман чăпăркка! Вĕтменни чылай пулать!

Урайĕнче выртаканскер çĕкленме хăтланать.

Шкул сумкине хулпуççи урлă çакрĕ те Иçук, пўртрен вăшт! тухса сирпĕнчĕ. Тыт ун хўрине!

Иçук такам илĕртнĕн вĕçтере пачĕ чугун çул хĕрринелле. Чупсан-чупсан, пĕчĕк кĕпер патне пырса тухрĕ. Вăл пĕр хут çеç пăхса тĕлĕнмен çак кĕпертен. Шăп çак кĕпертен чугун çул икĕ еннелле тăсăлса кайнăн туйăнать. Карлăк çине тăчĕ, тайăнса. Çĕлĕк айĕн тухнă çўç пайăрки тăрăх тар юхса анчĕ. Чупнипе ку. Çул юппинче шухăшлакаларĕ те, ун-кун пăхкаласа, вара хĕвеланăç еннелле кайрĕ шпал тăрăх. Лере-лере — разъезд.

Утать Иçук пĕр-пĕччен. Поездсем те иртмеççĕ. Катрам-катрам хура пĕлĕтсем çĕр çине йăтăнса шăваççĕ. Çумăрпа кĕрпе пек юр пĕрчи питрен çапать, куçа уçма памасть. Ахальтен каламаççĕ: çавнашкал усал çанталăкра ырă хуçа йыттине урама кăлармасть. Ларасчĕ килте халĕ кăмака çумĕнче. Амăшĕ пырса ачашлĕччĕ. Ашшĕпе çапăçман вăхăтсенче вăл ырă кăмăллă. Шкула кайнă чух та канфет пырса тыттарать. Çапăçу тухсан иккĕшин хушшинче, Иçук — чи мĕскĕн çын тĕнчере. Нихăшне те кирлĕ мар вăл. Мечĕке пĕр-пĕрин енне ывăтнăнах икĕ çын хушшинче çапкаланать. Сăр-р сăрлатрĕ Иçукăн çурăмĕ. Вăл чĕтренсе илчĕ. Тарланипе йĕпеннĕ аçлăк шăнтать. Сивĕ. Ача мулаххай хăлхисене янах айĕнченех çыхса лартрĕ. Хăвăрт куçакан сăрă пĕлĕтсем пĕтĕм тавралăха хупăрларĕç. Çывăхри вăрмансем те чăмрĕç тĕттĕме. Хăрушă пĕччен. Юрать-ха, умра çутă пăнчăсем йăлтăртатаççĕ. Разъезд çутисем. Кăна Иçук тўрех чухларĕ. Уттине хăвăртлатсан çитрĕ часах. Ав, билет сутакан пўлĕм. Алăкран никам та тухса çўремест. Пурте ларса кайрĕç-ши? Иçук пўлĕме вăтанарах кĕчĕ. Кунта çутă. Мĕнпурĕ те старик çеç ларать. Пĕччен вăл та тунсăхланă пулас. Хаваспах калаçма тытăнчĕ:

— Эсĕ, ачи, хулана каятни?

— Хулана,— тет Иçук, ăçта каяссине хăй те пĕлменскер.

— Хут-кăранташ туянма каятăн пулĕ-ха?

— Ия.

— Ыран ирччен кĕтме тивет. Эпĕ сухан сутса пулмĕ-ши тесе килтĕм те, иранччен тăхтас пулĕ. Эсĕ вырт сак çине, çывăр.

Çапла турĕ те Иçук. Ыйхăран тутли тĕнчере нимĕн те çук. Çывăрчĕ те çывăрчĕ. Çапах та хăй çăмăл ыйхăллă. Шăв-шав тапрансанах, куçне уçрĕ. Тул çутăлнă-мĕн. Çынсем билет туянаççĕ. Апла пулсан, тула тухмалла. Чăнах та, поезд çитсе чарăнчĕ, Иçук вакуна кĕрсе ларсан, вăл тапранчĕ.

* * *

Ольга Ивановна уроксенче лăпкă пулаймарĕ, Иçук çаплах пуçран тухмасть. Мĕн сăлтава пула шкула килеймерĕ-ши? Чирлерĕ-ши е килте каллех пăтăрмах? Ун патне кайса килмеллех пулать. Анчах та уроксем хыççăн шкулта тытăнса тăма тиветха. Ленин кĕтесĕ тăвас ĕç хĕрсе кайрĕ. Ачасен çĕкленĕвĕ пысăк. Ана вăхăтра йĕркелесе пĕтермеллех.

Юлашки шăнкăрав хыççăн класа Куçка ашшĕ кĕрсе тăчĕ. Ытла та лайăх çын вăл, мĕн чухлĕ пулăшрĕ ачасене. Манюк ашшĕ Ленин сăнне илсе килнĕ. Пурте хĕпĕртерĕç куншăн.

— Ачасем, тухса уçăлăр кăшт,— пĕлтерет учительница.

— Чур! Киле каймалла мар,— хушса хурать Манюк ашшĕ.

— Каймастпăр!

— Часах кĕретпĕр! — шавлаççĕ ачасем.

— Халь нихăшне те киле ăсатаймăн,— тет, йăл кулса, вĕрентекен.

Тĕрĕсех ку. Ачасем Ленин кĕтесне туса пĕтересшĕн çав тери тăрăшаççĕ. Октябрь уявĕ аякра мар-çке. Çакă та васкатать. Тата хăйсен аллипе тунă экспонатсем илĕртеççĕ. Мухтанмаллах куншăн.

Хăйсен сăмахне тытрĕç, часах каялла пуçтарăнчĕç ачасем. Çамрăк йыш ĕçе пикенсен, Ольга Ивановна Куçка ашшĕпе — Петр Петровичпа — Иçук пирки канашласа пăхма шутларĕ. Йĕркеллĕ çын, пулăшатех. Алкумне чĕнсе тухсан, сăмахюмах çапла тапранчĕ:

— Иçук шкула килмерĕ. Ун ашшĕ ĕçке ярăннă. Инкек-синкек ан пултăрах.

— Пĕлетпĕр. Çемье çăпанĕ вăл,— тавăрчĕ Куçка ашшĕ.— Хытарма хăяймастпăр çав.

— Ялйыш калани тивĕçлĕрех пулассăн туйăнать.

— Тĕрĕс. Кĕрсе тухăп-ха. Арçын арçынпа калаçнă пек калаçăп.

Ольга Ивановна хăй Иçукăн амăшĕпе тĕл пулса пуплеме пулчĕ.

Çак вăхăтра почтальон çыру парса хăварчĕ.

Петр Петрович ачасем патне кĕчĕ, учительница конверта уçмасăр тӳсеймерĕ. Константин Кириллович çырать. Сывлăхĕ ун аванлансах пырать иккен. Çапах та санаторине тепĕр уйăх хăвармалла тунă.

«...Октябрь уявне Ленин кĕтесĕ йĕркеленипе кĕтсе илме хатĕрленнине ырлатăп,— тесе çырать Константин Кириллович.— Тимуровецсен йышĕ мĕн тăвать? Обществăна усăллă ĕçе хутшăнма ан манăр. Анчах та астăвăр, чи кирли — лайăх вĕренесси. Пурсăра та салам!..»

Шухăшра ун патне çыру çырчĕ те Ольга Ивановна.

«...Тимуровецсен команди ĕçлет-ха. Вĕсем ватă çынсене, салтак амăшĕсене килти ĕçсене тума пулăшаççĕ».

Иçук пирки ку хутĕнче апла та, капла та шарласшăн мар, япăх хыпар ватă чирлĕ çынна вĕрĕлтерĕ тата. Аслă тус шкулта ашшĕ пекех кирлĕ. Часрах таврăнтăрччĕ.

* * *

Ольга Ивановна Иçук амăшне урамра курчĕ.

— Пĕркун килсен те ашшĕпе çеç калаçнăччĕ. Сирĕнпе тĕл пулни питĕ аван.

— Иçук ашкăнчĕ пулĕ-ха шкулта.

— Ăçта сирĕн Иçук? Вăл шкула пыман.

— Пыман? Ы-ых! Ашшĕ хăраххи. Ашшĕнчен ыйтрăн пулĕ? Кил хуçи вăл. Ачи ăçтине унăн пĕлмелле.

— Эсир амăшĕ-çке! — хыттăнах munarĕ Ольга Ивановна.

— Ытлашши нумай пĕлсен, час ватăлан! — Çапла патлаттарса хучĕ те хĕрарăм, малалла утрĕ.

Учительницăн чунĕ кӳтсе килчĕ. Иртсе каян ял çыннисем, кӳршĕ-аршă тавраш, чарăнса, калаçкаласа илчĕç учительницăпа. Пĕрисем упăшкине, теприсем арăмне айăпларĕç. Анчах та ăçта вара Иçукĕ?

— Иçук ĕнер чугун çул хĕрринелле чупрĕ,— пĕлтерчĕ пĕчĕкçĕ хĕрача.

Учительницăн чĕри шартах сикрĕ. «Тен, вăл килтен тарнă?»

Кун хыççăн кӳршĕри ачасенчен, ватăсенчен ыйтрĕ.

— Курман паян Иçука! — çапла тавăрчĕç пурте.

Çитрĕ хуйхă учительницăшăн. Киле таврăнсан, вăл пурин çинчен те хăйĕн амăшĕпе сӳтсе яврĕ.

— Хĕрĕм,васкасах милицине пĕлтермелле,— ăс пачĕ амăшĕ.

Ольга Ивановна вара милицие çитермелли хут хатĕрлерĕ. Ачан ятне, хушаматне, хăçан тата ăçта çуралнине, миçемĕш класра вĕреннине çырчĕ.

Самант куç умне тухса тăчĕ Иçук. Çинçешкерех те тăсланкăрах. Ушкăн ача хушшинче те палласа илме çăмăл. Ăна аякранах асăрхама пулать. Мĕншĕн тесен вăл купăста пуçлă. Çӳçĕ шап-шурă кăтра. Хĕвел çутинче ун çӳçĕ йĕтĕн çурăмĕ евĕр йăлтăртатать. Куç харпăкĕсем сарă. Вĕсем вăрăм та çăра, çӳлелле авăнмаççĕ, тӳп-тӳрĕ. Сенкер куçĕсем выляççĕ кăна. Куç шăрçи хӳтлĕхре, пĕр тусан пĕрчи вĕçсе кĕреймĕ. Яланах тап-таса икĕ тăрă кӳлĕ. Икĕ питçăмартийĕ шăп икĕ çерçи çăмарти. Ытла та чăпар. Мĕнле ӳркенмен-ши çутçанталăк художникĕ çав териех кук тĕрри лартса тухма? Сăмси тăррине те хăмăр пăнчăсемсĕр хăварман.

* * *

Хута милицие леçсе панăранпа кунсем самаях иртрĕç. Иçук пирки пĕр сас-чӳ те çук. Кĕтнипе чирлесех кайăн. Анчах вăхăт мар пуçа усма. Пурăнăç, ав, хăйĕн урапи çинчен каллех кăмăла хуçакан кĕтмен инкек ӳкерсе хăварать.

* * *

Йăлана кĕчĕ ĕнтĕ Ольга Ивановнăн класа пурте кĕрсе ларсан кашнинех куçпа хыпашласа тухасси. Ку хутĕнче те çаплах. Куççем парта тăрăх чупрĕç. Йĕркеллĕ пек. Чим, Мишша куçне мĕншĕн тартать?

Хĕрĕх пилĕк минут иртет. Мишша, чăнах та, пĕр хутчен те алă çĕклемерĕ.

Ачасем урама тухаççĕ. Мишша парта хушшинчех. Учительница юнашар пырса ларать.

— Мĕншĕн эсĕ кичем? Аннӳпе аçу чиперех-и?

— Пĕчченех тăрса юлтăм. Аннене сасартăк больницăна хучĕç,— тавăрать Мишша хурланчăк сасăпа.

— Аçу ăçта?

— Вăл командировкăра.

— Эсĕ хыпăнса ан ӳк-ха,— лăплантарать ачана учительница.— Паян киле пĕрле кайăпăр, çул çинче канашлăпăр.

Ольга Ивановна ачасене киле ирттерех салатрĕ çак кун.

Мишша хăйĕн аслă юлташне — учительницине — ăсатать. Учительница унпа пĕрле амăшĕ патне больницăна кайма пулать. Қалаçса пынипе тарăн вар урлă та, вăрман витĕр те тухрĕç. Умра — ял. Ача тӳрех ăнланчĕ, Ольга Ивановна пурăнаканни. Укăлча хапхи витĕр кĕрсен анаталла утрĕç. Ытлашши аяккках та кайма тивмерĕ, пĕр калинкке тĕлĕнче чарăнчĕç. Пӳрчĕ шалта, пахча варринче-мĕн, çаралнă йывăççем хушшинче ларать.

— Çитрӗмӗр,— тет учительница.— Кӗр, кӗр, хăюллăрах пул.

Итлет Мишша аслă тусăн сăмахне. Килтен каялла кăларса ямарӗç ăна, çывăрмах юлчӗ.

— Аннӳ тавраниччен пирӗн патăртах пурăнăн.

Вăтанчӗ Мишша. Çавăнпа та вăл:

— Темле,— текелет.

— Мана пулăшасшăн мар-и вара эсӗ? Ирсерен шкула тетрадьсем çӗклесе каймалла.

Апла пулсан, Мишша килӗшет.

Апатлансан, киле парса янă ёçсене тусан, Мишшана вырăн сарса пачӗç. Хăтлă, таса, ăшă кунта. Килти пекех.

Учительница çывăрма час выртмасть.

Амăшӗпе хӗрӗ чылайччен тем çинчен пăшăлтатса калаçрӗç. Мишшан куç хупăнать, тӳсме çук ыйхă пусать. Ольга Ивановна тетрадьсем тӗрӗслеме ларсан, вăл çывăрса каять.

* * *

Ачасем вăрман хӗрринчи юман айӗнче тӗрмешеççӗ. Ура айӗнчи хăшпӗр хăрăк çулçăсем юрпа витӗннӗ. Ку паттăрсене йӗкел пуçтарма нимӗн чухлӗ те чăрмантармасть.

Учительница паçăртанпах сукмак çине чупа-чупа тухса пăхать. Кама кӗтет-ши?

— Эпӗ пӗлетӗп,— тӳсеймерӗ Кӗтерин калаçмасăр,— Иçука кӗтет.

— Иçук килтен тарнă, ăна ăçтан тупчăр? — пӳлчӗ Толя хӗрача сăмахне.

— Сукмакпа амăшӗ кунталла çывхарать. Эпӗ куртăм аякранах,— мухтанарах каларӗ Мишша.

— Эсӗ ăçтан паллан ун амăшне? — ыйтрӗ Кӗтерин.

— Эпӗ халӗ вӗсем патӗнче пурăнатăп. Çав тери ырă кăмăллă çынсем,— терӗ Мишша.

Мишша сăмахне илтсен, тӗлӗнчӗç те, ёненмерӗç те хăшпӗр ачасем.

— Тӗрӗс калать. Ăна çӗнӗ ашшӗ кашни кун чăпăрккапа вӗтет,— шăл йӗрчӗ юлташӗ Кунни.

— Вăл мана пӗрре те вӗтмен-ха! — хирӗçлерӗ Мишша.

— Пăрахăр шавлама!— чарчӗ Куçка.— Ольга Ивановна илтсен мӗн калӗ?

Пăхрӗç те курчӗç: вӗсен учительници, чăнах та, амăшӗпе калаçса тăрать. Питех те кирлӗ хыпарсем илсе килнӗ: Иçук тупăннă. Ку — пӗрре. Тата Мишша амăшне больницăран çак кунсенчех кăларaççӗ.

Амăшне ăсатсан, Ольга Ивановна хăпартланнă кăмăлпа пычӗ ачасен ушкăнне.

— Ачасем, пĕлетĕр-и,— тет вăл ăшшăн-ăшшăн,— сирĕнпе акă мĕн çинчен калаçса татăласшăн эпĕ: ыран е тепĕр кун Иçук шкула килет. Эпир ăна ним пулман пек кĕтсе илĕпĕр. Ним çинчен те ыйтмăпăр. Юрĕ-и? Килĕшетпĕр-и?

— Килĕшетпĕр! — пĕр харăс тавăрчĕç ачасем.

* * *

Эрнере çичĕ кун. Çичĕ тăванах ĕнтĕ. Ячĕсем те пур: тунтикун, ытларикун... Çутçанталăкăн хуралçисем. Ылмашăнса виçеççĕ вăхăта. Çĕр тĕттĕмĕ сирĕлет те, çутă кун пуçланать. Ĕнер те, виçĕмкун та, паян та çаплах. Кашни килен кун çынна мĕн те пулин парнелет. Çынсем ытларах савăнăç кĕтеççĕ. Кĕтсен-кĕтсен, кĕтсе илетĕнех, Ольга Ивановна учительница пек. Ăна хăшпĕр кунсем чăннипех те савăнăç кӳреççĕ. Мĕн-ха вăл савăнăç? Çакă мар-и вара?

— Ольга Ивановна, юнкун — манăн менелник. Çав ятпа анне хăна пухать. Сире пыма чĕнеççĕ вĕсем.

— Тавтапуç, Мишша. Çуралнă кун ячĕпе малтанах саламласа хуратăп!

Мишша амăшĕ больницăран тухсан никам чĕнмесĕрех шкула хăй пычĕ. Ку хутĕнче итлекенĕ учительница пулчĕ, калаçаканĕ — вăл:

— Эсир, Ольга Ивановна, маншăн чăн-чăн çын пултăр. Сире пуриншĕн те чун-чĕререн тав тăватăп. Ан айăпласамăрччĕ. Мишшашăн текех пăшăрханмалли пулмĕ.

Ĕненет ача амăшне учительница. Астăвать-ха, пĕркунхине Мишша шкулта хаваслă çӳрерĕ.

— Ольга Ивановна мана купăс туянса пачĕ. Халĕ калама вĕрентет,— терĕ Мишша.

— Кам?

— Вăл.

Сăмах кам пирки пынине вĕрентекен чухлать. Çапах та, юри, ăшшăн ыйтрĕ:

— Аçу-и?

— Çавă.

Кун пек чух ырламасăр ирттерсе яма юрамасть:

— Ырă кăмăллă сан аçу. Пире, ав, хора юрлаттарма музыкант питĕ кирлĕ. Тăрăшса вĕрен купăс калама.

— Вĕрентет вăл мана.

Ольга Ивановна Мишша хăнана чĕннĕшĕн çав тери савăнчĕ. Эппин, çемьере лăпкă. Ахальтен мар, каллех, хыçалти парта хушшинче лараканскер, аллине çӳлтен çӳле çĕклет.

Мишша татах тем каласшăн, аялалла-çӳлелле пăхкалать, сурчăкне çăтать.

— Итлетĕп,— тет учительница ачана сăмах пуçлама пулăшса.

— Мĕн, э-э... Альтук инке пăрăвĕн урине эпĕ çапса амантнă.

— Мĕншĕн?

— Ну, эппин, вăл Альтук инке шăлнĕ-çке. Пирĕн пата пыма манран хăратăр терĕм.

— Айван эсĕ, Мишша. Питĕ ирсĕр ĕç тунă эсĕ.

— Пĕлетĕп.

— Йăнăшна та йышăнмарăн ун чух.

— Вăтантăм,— тет Мишша, хĕрелсе.— Халĕ ĕнтĕ Альтук инкене пулăшма çӳрĕп. Пăрăвне çитерме ĕнер те васана илсе кайрăм. Ури тӳрленнĕ.

Ольга Ивановна путсĕр ĕçе Мишша тунине тахçанах пĕлет. Ача хăй айăпне йышăнасса кĕтнĕччĕ вăл.

Ытла ĕçлĕ пулнипе, учительницăна хăнана кайма тивмерĕ. Апла пулин те, Мишша хăйĕн çуралнă кун ячĕпе Ольга Ивановнăран тата пĕр класра вĕренекенсенчен парне илчĕ.

Иçук таврăнни тата çĕнĕ кун парни мар-и? Ленин кĕтесне туса пĕтерни? Унăн хуçи Иçук пулать. Унăн чĕлхе-çăвар çыпăçуллă. Тĕрĕссипе илсен, тĕлĕнмелле ырă ача. Тантăшĕсене те мухтамалла. Қалаçса татăлнă сăмаха пăсмарĕç. Пĕри те пĕр сăмах тĕпчемерĕç унран. Иçук хăйне айăплă туйрĕ, вăрттăн кулянчĕ. Вара, юлашкинчен, вăл тӳсеймерĕ.

— Ольга Ивановна, мĕншĕн-ха эсир манран ним те ыйтса пĕлместĕр?

Ун чухне учительницăпа ачасем Ленин кĕтесне вырнаçтарма ӳкерчĕксенчен стенд тăватчĕç.

— Хăв каласа парасса кĕтетпĕр. Ăçта, мĕнле тупрĕç сана?

— Эпĕ Арзамаса çитнĕ!

Юлташĕсем Иçук çавăнтах çитнинчен тĕлĕнсех кайрĕç.

— Ай-яй!

— Аякка çитнĕ.

— Çухалса каясран та хăрамарăн-и?

Учительница ачасем çине пăхса илет те çапла ыйтать:

— Қалăр-ха, Арзамас хули мĕнпе паллă?

— Арзамас çинчен эпĕ унччен пĕлнĕ,— тет Иçук.

— Қаласа пар ĕнтĕ, вăтанса ан тăр! — итлесшĕн пулчĕç ачасем.

— Арзамас — питĕ пысăк станци, темиçе еннелле чугун çул тăсăлса каять. Тата кунта Аркадий Гайдар писатель çуралса ӳснĕ.

— Тĕрĕс! — çирĕплетрĕ Ольга Ивановна Иçук сăмахне,— мĕн-мĕн куртăн-ха эсĕ Арзамасра?

— Поезд чарӑнчӗ. Ӑҫта ҫитрӗмӗр-ши, тетӗп. Пӑхрӑм чӳречерен: «Арзамас» вулатӑп. Тухрӑм вакунтан. Ҫынсем хӗвӗшеҫҫӗ. Хӗсӗнкелесе малалла шӑватӑп. Курах кайрӑм: ҫар ҫыннисем! Юрататӑп, кӑмӑла килеҫҫӗ вӗсем манне. Утрӑм вӗсем хыҫҫӑн. Вокзалӗ пысӑк, вӗҫне-хӗрне тупас ҫук. Пӑхкаласа ҫӳресен, тухрӑм. Анчах нимӗн те пӗлеймӗн, тахӑшӗ эпӗ ларса килнӗ поезд. Кунтах, вокзалрах, ҫӗр выртрӑм вара.

Килтен илсе тухнӑ ҫӑкӑрпа чӑкӑта ҫисе ярсан, столовӑйне кӗтӗм. Мана ҫавӑнтах асӑрхарӗҫ. Пӗр лайӑх ҫипуҫлӑ этемех кӑчӑк туртса илчӗ. Пытӑм. Ларма хушать сӗтел хушшине, апат ҫиме. Итлерӗм кун сӑмахне. Ҫӗлӗке чӗркуҫҫи ҫине хывса хутӑм. Апат илсе килессе кӗтсе ларатӑп, шӑнкӑрч чӗппи евӗр унталла-кунталла пӑхкаласа. Ӑҫтан шӑтса тухрӗ пирӗн сӗтел умне милиционер? Тӳрех чӗнчӗ: «Э-э, Иҫук! Салам!» — «Салам хӑвӑра та»,— тетӗп. «Купӑста пуҫ, кайрӑмӑр».— «Ӑҫта?» — «Атя, атя. Кайран пӗлӗн».

Илсе кайрӗ вара хӑйӗнпе. Милицин ача-пӑча пӳлӗмӗнче ним ыйтманнине хӑвармарӗҫ. Апат ҫитерчӗҫ. Мунча та кӗртрӗҫ. Гайдар музейне илсе кайса кӑтартрӗҫ. Унтан ҫула тухрӑмӑр. Киле ҫитиччен ӑсатрӗҫ.

— Мӗнле палласа илнӗ-ха милиционер сана тӳрех? — тӗпчет Кӗтерин.

— Анне милицине кайнӑ та пӗтӗмпех каласа панӑ: «Ывӑлӑм — купӑста пуҫлӑ, сартутлӑ...» Татах темтепӗр. Ҫавӑнпа та ҫӑмӑллӑнах палланӑ.

Ольга Ивановна, Иҫук каласа панине итлесе, хӑй ӑшӗнче ӑшшӑн кулса илчӗ.

Айван Иҫук, милицине хӑйне кам шыраттарнине те пӗлмест. Юрать-ха, халлӗхе пӑтӑрмахӗ ӑнӑҫлӑ иртрӗ. Анчах ачан килӗнче ашкӑрнӑ пиҫен тымарӗ хӑрман. Акӑ мӗн пӑшӑрхантарать ҫамрӑк учительницӑна.

* * *

Пионерсем Аслӑ Октябрь ячӗпе ирттерекен чаплӑ сбора пухӑнчӗҫ. Хӑнара ялти ятлӑ ҫынсем, ватӑ коммунистсем, вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсем. Уяв умӗн санаторинчен Константин Кириллович та таврӑнчӗ.

Икӗ учитель нумайччен калаҫрӗҫ. Ытларах ватти ҫамрӑккине итлерӗ. Вӑл вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе ахӑлтатсах кулчӗ е пӑшӑрханнӑн чӗнмесӗр ларчӗ. Кӑштах асӑрхаттарса та илчӗ: «Кун пирки ахалех ман пата ҫырман. Ӳлӗм пӗрле тӑрӑшса, ӗҫе йӗркелесе ярӑпӑр. Иҫук ашшӗ пирки калаҫса пӑхӑпӑр».

Уяв... Чаплӑ уяв. Ҫыслӑ уяв.

Савăнмалли сахал мар. Уяв умĕн пĕрремĕш чĕрĕк вĕçленчĕ. Ачасене ырламалла, пурте аван вĕренчĕç. Пĕрремĕш чĕрĕк — шкул пурнăçĕшĕн кĕске вăхăт. Ольга Ивановна учительницăшăн ку пĕрремĕш тĕрĕслев, хăйне евĕр экзамен пулчĕ.

Паллах, чи кирли — ачасене лайăх пĕлӳ парасси. Анчах урокран йывăрри пур вĕрентӳре.

Хăнасемпе ачасем Ленин кĕтесне пуçтарăнчĕç. Ольга Ивановна та кунтах. Вăл та ыттисем пекех савăнăçлă. Хушăран пăлханса илет.

— Аван. «Разлив кӳлли хĕрринче» макет кăмăла каять. Хăварах майлаштарма ăс çитертĕр-и? — ыйтать пĕри.

Пурне те Иçук ăнлантарать.

Вĕренӳре ачасем мĕн таран пултарнине курчĕç хăнасем. Тетрадьсем те выставкăра-çке.

Часах сигнал янăраса кайрĕ шкул тăрăх. Хĕрлĕ галстуклă пионерсен аллинче труба вăй вылять.

Салам сăмахĕсене итлесе пĕтерсен, сцена çинче пионерсен хорĕ йĕркеленсе тăчĕ. Юрăçсем пурте пĕр пек тăхăннă. Вĕсен çийĕнче — пионер костюмĕ. Мĕнле килĕшет вĕсене çĕнĕ тум! Хĕрачасен çийĕнче кĕске чакăр юбка, шурă кофта, арçын ачасен те шурă кĕпе. Мĕнешкел савăнăçлă вĕсем, хăйсен тăрăх пăхса çеç тăраççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем шалт! тĕлĕннĕ. Вĕсем хăйсен ачисене пăхса ытараймаççĕ.

— Вăл пирĕн ачасен чăн-чăн учительници,— пăшăлтатса калать класс пурнăçне тĕплĕн пĕлсе тăракан Куçка ашшĕ юнашар ларакан, çак кунсенче çеç санаторирен таврăннă Константин Кирилловича. Лешĕ те, мĕн илтнипе килĕшсе, пуçне сĕлтет.

Ольга Ивановнăн пиччĕшĕ, машинист, Мускавран магнитофон туянса таврăннă. Вĕсем пленка çине ачасен концертне çырса илесшĕн. Ку савăнăçлă хыпар хăвăрт сарăлчĕ.

— Çар чаçне çырупа пĕрле хамăр концерта ярса паратпăр! — пĕлтерчĕ Куçка тусĕсене.

Шăп. Дирижер хор умне тухса тăчĕ те пĕчĕк çеç патакне сулласа ячĕ. Черчен чĕресенчен çепĕç юрă юхрĕ:

Ахаль мар эпир хаваслă,<br>Кашниех маттур та ăслă.<br>Пире парти ӳстерет,<br>Кунран-кун телей кӳрет.

# ИЛЕМЛĔХЕ КУРМА ПӲРНĔ АЧА

Энтьука урама тухма памаççĕ тантăшĕсем, таçтанах кăшкăраççĕ вара: «Тымар Энтьукĕ! Тымар Энтьукĕ!»

Ăçтан пуçланчĕ-ха çак пăтăрмах?

Çуркунне, пĕр канмалли кун, Энтьуксен отрядне колхоз пахчине илсе кайрĕç. Чие йывăççи ытлашши хунанă имĕш. Йывăççи чăнах çапласкер ĕнтĕ, ирĕк парсан пĕтĕм сад пахчине пусать. Колхоз пахчаçи кăклама шутланă чие тĕпĕсене. Çавăнпа та чĕнтерет те вăл шкулти чи хастар пионер отрядне.

Часах хĕрӳ ĕç пуçланчĕ пахчара. Хăшĕсем чиене çинçешке хунав вуллисенчен тытса çаплипех тăпăлтарса кăлараççĕ, теприсем — кĕреçепе чаваласçĕ, виççĕмĕшсем — кăкланă тĕмсене çырма тĕпне йăтса тăраççĕ.

Энтьук аллинче кĕреçе вылять. Çамки çине тар тухиччен ĕçлерĕ вăл. Урапа тапса кĕртнĕ чух, пĕррехинче, кĕреçе нăч! турĕ. Энтьук тăпăлтарса кăларнă тымара чăр-р пăхрĕ. Тимĕр кĕреçе тымар хуппине сӳсе антарнă. Сăнаса пăхрĕ Энтьук тымара. Темиçе йӳп. Сасартăк çак тымар темшĕн упăте çури пекех туйăнчĕ. «Жанна!»— чĕнчĕ вăл каркаланчăк тымара.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче Шупашкарта Энтьук куçса çӳрекен зоопарка кĕрсе курнăччĕ. Пысăк читлĕх умĕнче юлташĕсемпе нумайччен кĕпĕрленсе тăнине халĕ те астăвать. Читлĕхре пĕчĕкçеç упăте урлă-пирлĕ карнă пăявсем тăрăх савăнăçлăн сиккелесе çӳретчĕ. Ăна пурте «Жанна!» тесе чĕнчĕç.

— Ме канфет, Жанна!— терĕ тахăшĕ. Чăлт пăхрĕ упăте. Читлĕхĕ икĕ хутлă пулин те, ăслă чĕрчун пралуксем хушшипе аллине тăсрĕ. Пылака юратать пулас. Йăпăр-япăр çӳле хăпарчĕ, канфета хутран тасатрĕ. Канфета хучĕпех çиме юраманнине ăнланать. Читлĕхе темшĕн тата пĕчĕк тĕкĕр лартса панă. Канфет çинĕ хыççăн, çутă тĕкĕрпе тытăнчĕ выляма Жанна; ăна хӳри çине те, хырăмĕ çине те, алли çине те хурса пăхать. Нумайччен култарнăччĕ упăте куракансене.

Энтьук пăхса ытараймасть тымара. Йывăç тунинчен касрĕ. Савăннипе кăшкăрса ячĕ:

— Ачасем, килĕр-ха курма! Упăте чавса кăлартăм!

Карах пухăнчĕç тантăшĕсем.

— Ăçта упăте? Кăтарт!— кĕрлеççĕ.

Юлташĕн аллинче мĕнпурĕ те тымар çеç.

— Тăнтан сулăннă вăл!— ĕрлешет пускил Çитăрĕ.

Чĕлхи çивĕч Çитăрăн, усал ят туртса кăларма та ăста вăл.

— Тымар Энтьукĕ, Тымар Энтьукĕ! Ха-ха-ха.

Нихăшĕ те тымарта упăте кĕлетки курасшăн пулмарĕ. Çитменнине, ахăлтатсах кулчĕç пурте унран.

Энтьук тымара пĕтĕм ачасем умĕнчех кĕсъене чиксе хучĕ шаларах.

Мĕн хăтланнă-ха вăл киле таврăнсан? Тымара çуса тасатнă шывпа. Ку пĕрре. Чăпăл тунă хыççăн упăте ĕнĕк тĕслĕрех курăнма тытăннă. Қаскаламасăр калăп та пулмасть. Тĕрĕс. Палăрса çитеймен хăлхисене çĕçĕпе, ийĕпе, йĕкевпе ӳстерчĕ. Қуçĕсене уçмалла. Амăшĕн арчинче вĕтĕ шăрçа нумай. Қуç лупашкисене чавса тарăнлатсан, çилĕм сĕрсе пĕчĕк кăна шăрçа çыпăçтарчĕ. Упăтен халĕ ытармалла мар хура йăлтăркка мăшăр куç.

Шакла пуçа юратмаççĕ вара чăвашра. Қукша пуç вата сăн парать. Илемлĕ калпак — чиперлетет. Йĕкел курланки шăпах уншăн — чаплă тухъя.

Асламăшĕ курчĕ те шарт çапрĕ икĕ пĕççине.

— Ара, ку упăте çурине ăçтан тупрăн?— тет тĕлĕннипе.

Савăнчĕ Энтьук. Вата куç пулин те, тӳрех уйăрса илчĕ, юлташĕсем вара чухлаймарĕç. Вăл йăлтах каласа пачĕ асламăшне. Ачасем хăйĕнчен кулнă саманта та пытарса хăвармарĕ.

— Э-э, ачам, ан кулян. Вĕсем кулнине йывăра ан ил. Илеме курма кашнине пӳрмен.

Ывăлĕ асламăшĕпе калаçнине илтсен, амăшĕ те пырса тăчĕ.

— Мĕн пит хатарлă пуплетĕр?

— Қур-ха, ывăлу мĕн ăсталанă! Чăн-чăн упăте. Тымартан.

— Ха, пăх-ха эсĕ ăна. Чаплă пике тейĕн, тухъяллă,— мухтать амăшĕ. Вара ывăлне çӳçĕнчен ачашшăн тытса ласкарĕ.

Çакăн хыççăн Энтьук кашни тымартах мĕн те пулин: е йытă пуçĕ, е кăвакал курчĕ. Çын кĕлеткине аса илтерекен тымарсем те тупăнчĕç. Тăпăлтарса пăрахнă пĕр хăрăк тымара тытса пăхмасăр иртеймест вăл. Вăл çырма-çатра тăрăх, анкарти хыçĕсемпе хăрăк тымар пуçтарса çӳренине ачасем час-часах курчĕç. «Тымар Энтьукĕ» тесе чĕннинчен хăтăлаймарĕ вăл, çак ят çирĕпленсе юлчĕ. Ку çеç-и? Амăшĕн ятне те манчĕç этемсем; «Тымар Энтьукĕн амăшĕ» теççĕ. Çапла чĕнме тытăнчĕç ялти ятлă хĕрарăма. Қу ята та пускил Çитăрех туртса кăларчĕ.

Теплерен амăшĕ ял çинче хăйне çĕнĕ ятпа чĕннине пĕлет. Лекрĕ вара ывăлне: кил-çуртра пĕр тымар юлмарĕ.

— Аллу тытнă ан пултăр тек тымар таврашне! Çитет! Мăй таран намăса кĕртрĕн,— терĕ вăл ывăлне.

Энтьукăн тымара чун кĕртмесĕр кăмăлĕ тулмасть. Амăшĕ ĕçре тытăнса тăни уншăн — уяв. Вăрттăн, шикленкелесе нумай ăсталăн-и? Çапах та хыпăнса ӳкмерĕ вăл. Часах çуллахи каникул пуçланмалла. Пионерсен лагерьне кайĕ. Унта никам та чăрмантармĕ. Вăрманта тымарĕ те тупăнать тем тĕрли.

* * *

Ҫама савӑнтармӗ ӗнтӗ ҫуллахи каникул. Ачасем пӗлеҫҫӗ: пионерсен лагерӗ ешӗл вӑрман уҫланкинче, ҫавра кӳлӗ хӗрринче, вырнаҫнӑ. Хӑйӗн хуҫисене йышӑнма хатӗр вӑл. Йышпа канма мӗн тери ырӑ.

Ажӑ, вӑхӑт ҫитрӗ. Пионерсен лагерьне ӑсатаҫҫӗ ачасене. Энтьуксен килӗнче те тӗпӗртетӳ. Амӑшӗ, ятарласа ӗҫрен ыйтса таврӑннӑскер, ывӑлӗн кӗписене ҫуса типӗтрӗ. Асламӑшӗ кӑмака умӗнче кӑштӑртатать.

Амӑшӗ ывӑлӗ сак ҫине илсе лартнӑ чӑматанне уҫрӗ те утюгпа якатнӑ кӗпе-йӗмне хума пикенчӗ. Пӑхрӗ те ҫӗлен курнӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Энтьук! Ҫаллех ҫак ӑпӑр-тапӑра лагере илсе каятӑн-и? Унта та хӑвӑн айванлӑхна кӑтартма шутлатӑн-и?

— Мӗн хунӑ, ара, чӑматанне?— хутшӑнмасӑр юлмарӗ асламӑшӗ.

— Хӑйӗнчен ыйт,— ҫиллессӗн каларӗ кинӗ.

— Нимех те мар,— хӑюсӑррӑн ҫӑвар уҫрӗ Энтьук.— Ҫӗҫӗ, ҫилӗм, лак, ийе, йӗкев. Тен...

— Тымар тупӑп, тетӗн-и? Эх!— хӑтӑрчӗ амӑшӗ.— Мӗн тума кирлӗ текех кӗлеткесемпе аппаланма? Тантӑшусем йӗкӗлтенине мантӑн-им? Вула кӗнеке ытларах. Вӗрен, ҫынна тухӑн.

Энтьук амӑшне хирӗҫлемест.

— Куҫӑм ан куртӑр, тасат чӑматанна,— хытарсах каларӗ амӑшӗ.

Ывӑлӗ хӑрамаллипех хӑрарӗ. Ӗмӗтленни сая кайма пултарать. Пӗлет вӑл амӑшӗн кӑра ҫиллине.

Яланхи пекех халӗ те асламӑшӗ мӑнукӗ хутне кӗчӗ:

— Вылятӑр-иҫ, ача чухне кӑна выляни. Вӑйӑра вӗсен ырӑ кӑмӑл, илемлӗх туйӑмӗ аталанать. Ҫаскалатӑр. Ҫаскалама пӗлмен алӑ-уран чӗрни вӗҫне шӑрпӑк кӗрет.

— Ҫилӗшместӗп. Илтес килмест «Тымар Энтьукӗн амӑшӗ» тесе чӗннине. Ятӑм пур — Укҫине. Ҫав ятпа чӗнччӗр.

Кинӗпе тавлашса усси ҫуккине аван чухлать ватти. Вӑрттӑн куҫ хӗсрӗ Энтьука. Ҫамрӑкки ӑнланчӗ. Вӑл ним шарламасӑр япалисене илет те алкумне чӑмать.

Виҫҫӗшӗ те килтен тухрӗҫ. Клуб умӗнче машина тӑрать, лагере лартса каять вӑл ачасене.

Энтьук ҫӑмӑллӑн утать. Аллинче — чӑматан. Хушӑран асламӑшӗ ҫине пӑхса илет. Йӑл! кулаҫҫӗ вӗсем иккӗшӗ. Чеескер карчӑк. Кинӗ сисиччен мӑнукӗн шӑкӑр-макӑрне пӗтӗмпех чӑматана хунӑ.

* * *

Вайлă çил тӳпере хулăн пĕлĕтсене каллĕ-маллĕ хăвалансă вăхăтра кичем лагерьте. Шыва кĕме чараççĕ. Çыран хĕрринчи хăйăр ура тупанне пĕçертмест, выртса йăваланма мар, пусас килмест çарран ун çине. Çумăр çăвать тăтăшах. Ăçта пытаннăши ачасен тусĕ — хĕвел? Пуçсем усăннă, ним патне ал-ура çыпçăнмасть çакнашкал çанталăкра.

Энтьук хуйăха ерчĕ, чунĕ таçта туртăнать.

Пĕр ирхине аслă хĕвел аса илчĕ пулас шавлă ачасене. Вăл çутăлса тухрĕ те лагерьти тетте çуртсен чӳречисенчен йăлтăртаттарса пăхрĕ. Пурте çывăраççĕ-ха. Хĕвел хăйĕн шевлине ачасен пит-куçĕ çине ачашшăн сапаларĕ. Капла кам вăранмасăр вырттăр? Йышлă халăх сиксе тăчĕ те чупса тухрĕ урама. Мĕн тери лайăх кун паян! Сиккелес, чупас, куласс килет.

Апат çисен вожатăй çапла пĕлтерчĕ:

— Пуçтарăнăр, çырлана каятпăр!

Аранах! Сереперен кайăк вĕçерĕннĕн, çунатланчĕç пионерсем. Савăт-сапа илсе, отряд çула тухрĕ. Ăçтан шăппăн утăн ушкăнпа. Параппан, горн сассипе, юрăпа аслă вăрман янратăр.

Умра уçланкă. Чупрĕç темиçен. Сиркелерĕç курăка. Сарлака çулçăсен айĕнче — хĕрлĕ шăрçа ярапи. Тӳсеймерĕç сас памасăр:

— Çырла!

Ваштах сырса илчĕç уçланка пионерсем.

Уçланкă хура курпунлă. Мĕнле тĕмескепе витĕннĕ, ара? Çапă куписем. Акă мĕн. Çапă купи тымарсăр мар. Ытарлисене тупма пулать, эппин. Энтьукăн савăннипе чĕри тухса ӳкесле тăлт-тăлт тапса илчĕ, тути те йăл-л та йăл! кулать. Анчах ăна никам та асăрхамарĕ.

Сахал-и, нумай-и хĕвел анăçалла шурĕ, Энтьук сисмерĕ ăна. Вăл темиçе купа салатрĕ, пухрĕ. Хĕрӳ ĕçрен ăна горн сасси уйăрчĕ. Эппин, пĕр çĕре пухăнса киле кайма вăхăт. Энтьук пухнă хăрăк тымарсене пурака хучĕ, унта кĕменнисене алăпа майласа тытрĕ. Пăхать, пионерсем — стройра. Пырса тăчĕ вара чи юлашки рете.

— Сан çырла ăçта?— ыйтрĕ юнашарти хĕрача.

Çывăхрах Çитăр тăрать. Пĕтĕм сасăпа ахăлтатса кулса ячĕ.

— Тымар Энтьукĕ, çырла палламасть. Сыхланăр, вăл тымар чирĕпе чирленĕ.

Строй пăсăлчĕ. Пурте Энтьук тавра пухăнчĕç. Чăр-р пăхаççĕ ачасем пуракри, алăри тымарсене. Пĕрисем Çитăр пекех ахăлтатаççĕ.

— Энтьук! Сĕтпе çырла лекмест сана паян!— Қалаçма чарăнмасть Çитăр.— Тымар чăмлама тивет!

Ку хутӗнче пурте Ҫитӑр сӑмахӗсенчен кулчӗҫ. Вожатӑй ҫитрӗ.

— Мӗн пулнӑ? — ыйтрӗ хайхискер.

— Энтьук шуйлантарать пире, — паттӑрланчӗ каллех Ҫитӑр. — Ямӑттине хапсӑнать, хӑй ҫырла татас вырӑнне хӑрӑк тымар пухнӑ. Килте те ӑна ҫавӑншӑн амӑшӗнчен пӗҫеркки лекет. Ялйыш та ӑна «Тымар Энтьукӗ» тесе йӗкӗлтет.

Ҫийӗнчех тавҫӑрчӗ вожатӑй. Вӑл Ҫитӑр куҫӗнчен пӑхса ҫапла каларӗ:

— Ҫынран кулаканскер — ӑссӑр тата айван чунлӑ.

Шӑпӑртах пулчӗҫ ачасем. Тепӗр самантран ачасем стройпа вырӑнтан тапранчӗҫ.

Энтьукӑн икӗ алли те пушӑ мар, утма йывӑртарах ӑна.

— Кӳр, хама пар пуракна, — тет вожатӑй Виктор Иванович. — Эсӗ тымарсенчен кӗлеткесем тӑватӑн-и?

Темшӗн чӗмсӗртерех ӳсет Энтьук. Амӑшӗ те тарӑхать ҫавӑншӑн. Халӗ те аслӑ тусне тӗпӗ-йӗрӗпе каласа парас вырӑнне «ӑхӑ» терӗ ҫеҫ.

— Лагерьте хӗрлӗ кӗтес пур. Ӗҫле ҫавӑнта, сана унта никам та чӑрмантармасть.

* * *

Пурнӑҫ хаваслӑ чух кун иртни сисӗнмест. Мӗнле кӑна вӑйӑ выляман-ши лагерьте! Тепрехинче пионерсем уяв иртterме хатӗрленчӗҫ. Кашниннех хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартса памалла. Пултарулӑхсӑр ҫын ҫук. Пӗри юрлама маттур, тепри — ташлама, виҫҫӗмӗшӗ — ӳкерме е мӗн те пулин ӑсталама. Уяв ячӗпе кӳлӗ хӗрринче савӑнӑҫлӑ костер ялкӑшмалла. Кунта ачасен алӑ ӗҫӗсене кӑтартса паракан выставка уҫӑлать.

Канмалли кун. Ҫавна май лагерьте ачасен ашшӗ-амӑшӗсем йышлӑ. Пурте уяв пуҫланасса кӗтеҫҫӗ.

Энтьук амӑшӗ те килнӗ. Ывӑлӗнчен шит уйрӑлмасть. Паллах, тунсӑхланӑ. Кучченеҫ илсе килнӗ, сӑйлать кӑна.

— Костер чӗртиччен выставка курма чӗнетпӗр! — пӗлтерчӗ вожатӑй Виктор Иванович.

— Анне, киле пыратӑп эпӗ те. Атя, — чӗнчӗ Энтьук.

— Чипер пул-ха, ачам, — терӗ лешӗ. — Кунта пурӑнӑҫ япӑх-и мӗн?

Выставкӑна илсе каясшӑн мар Энтьук амӑшне. Шикленет ятлаҫасран. Выставкӑра хӑрӑк тымартан хатӗрленӗ виҫӗ япала ун: «Хӑюллӑ хӗрлӗ армеец», «Тӑмана» вӗҫен кайӑк тата «Чӑпаркка» — кӑлӑк чӑххи.

Амӑшӗ выставкӑра хӑй ачи тымарсенчен хатӗрленӗ кӗлеткесене курасси ҫинчен шутламасть те-ха. Ҫынсенчен юлас мар шутпа ҫеҫ утрӗ вӑл. Хыҫра Энтьук утать, мӑшлатса.

Халăх уйрăмах пĕр сĕтел умне кĕпĕрленсе тăчĕ. Тахăшĕ сасăпах çырса хунине вулать: «Энтьук пионерăн хăрăк тымартан тунă япалисем».

Илтрĕ те çакна Укçине, тулхăрса кайрĕ. Ывăлĕ мĕнле япала ăсталанине курмарĕ, ăна аллинчен ярса тытрĕ те айккинелле танкăлтаттарса кайрĕ.

— Итлемерĕн пулать аннӳне,— тет çиллес сасăпа.— Киле пынă ан пул. Эпĕ, ăна хĕрхенсе, ĕç пăрахса килетĕп, вăл мăшкăлпа кĕтсе илет.

Пуçран çапнă пек талпăнчĕ аслă çул еннелле. Каллех хăйне «Тымар Энтьукĕн амăшĕ» тесе чĕнесрен именчĕ вăл. Çул çине тухсан, килелле мар, тепĕр еннелле утрĕ. Аша пусармалла, ăс ыйтмалла пиччĕшĕ патне çитесшĕн хĕрарăм. Ахалех васкарĕ. Çынсен калаçăвне итленĕ пулсанах кăмăлĕ çаврăнатчĕ ун.

Энтьук амăшне йăпатма пĕлмерĕ. Палатăна кĕчĕ те кравать çине выртрĕ, юхса анакан куççульне çăта-çăта.

Ку вăхăтра Энтьук экспоначĕсене ачасем те, çитĕннисем те куç илмесĕр пăхаççĕ, кашниех çакнашкал тымар ӳснинчен тĕлĕнет.

Тымарĕ ӳсĕ-ха, анчах ăна курма, ăна чун кӳртме пĕлмелле. Çакна вара илеме курма пӳрнĕ тата ылтăн алăллă ача кăна ăсталама пултарать.

— «Хăюллă хĕрлĕ армеец»,— вулать сарă çӳçлĕ хĕрача, экспонат çумне çырса çыпăçтарнă хута.— Мĕншĕн çапла ят панă? Атте, ăнлантар-ха.

— Эсĕ, хĕрĕм, лайăхрах пăх,— тет ашшĕ.— Ав, вăл епле кăкăрне каçăртса мăнаçлăн тăрать. Вăрăм шинель тăхăннă. Пуçĕнче хĕрлĕ çăлтăрлă буденовка. Асăрха, куçĕсем епле çивĕч. Уншăн нимле тăшман та хăрушă мар. Пĕрре пăхсах чухлан: вăл — хăюллă хĕрлĕ армеец! Кунта художник пултарулăхне мухтамалла. Вăл чăннипех хĕрлĕ армеецăн хăюлăхне кăтартса пама ăсталăх çитернĕ.

Хĕрача ашшĕн сăмахне ыттисем те каçса кайсах итлеççĕ, унсăрăн шăпăрт тăмĕччĕç. Тахăшĕ ассăн сывларĕ. Çавăрăнса пăхрĕç ваштах. Хыçалта ватă хĕрарăм тăрать, мăнукĕ патне килнĕскер. Итленĕ май, вăл хăйĕн çывăх çыннине, вăрçăра пуçне хунăскерне, асне илчĕ-тĕр.

Малалла куçрĕç куракансем. Турат çинче «Тăмана» ларать. Куçĕ ун — йĕрĕлче пек çап-çаврака. Тĕсĕ хăмăр, ăна сухăртан якатса çыпăçтарнă.

— «Чăпарккине» кур-ха, атте!— тет паçăрхи сарă çӳçлĕ хĕрачах.— Пуçне мĕнле çĕкленĕ, мăйĕ кăрккanни пекех вăрăм. Каснă-лартнă пирĕн килти кăлăк чăххиех. Тĕкĕсем, тĕкĕсем мĕнлерех! Хăмăр хĕрлĕ, йăмăх хура тата йăлтăркка.

Энтьук тымара лакпа сёрнĕ, çавăнпа та йăлтăртатать «Чăпаркка».

— Мĕнле мăнтăр вăл, пĕсехи тăп-тулли,— хăйĕнчен хушса каларĕ ашшĕ.— Умне сапса панă тулă пĕрчисене сăхма васкас çук, чĕпписене хурчăка çĕклесе каясран сыхлать.

Çав вăхăтра вожатăй улăм шĕлепкеллĕ, хулпуççи урлă фотоаппарат çакнă çынпа çитсе тăчĕ.

— Сирĕлĕр-ха кăшт,— хушрĕ вăл.— Энтьук экспоначĕсене корреспондент пионерсен хаçачĕ валли ӳкересшĕн.

Çынсем икĕ енне чакса тăчĕç. Корреспондент аппарачĕпе ун пек те, кун пек те тытса чаклаттарчĕ.

— Хуçи те тăтăр-ха юнашар,— тет корреспондент.

Кăн-кан пăхкаларĕç пурте.

— Энтьук ăçта?— ыйтать ачасенчен вожатăй.

— Анчах кунтахчĕ,— тет пĕри.

Çынсем хушшинчен чавсипе чышкаласа Çитăр тухрĕ.

— Ана амăшĕ ятлаçса пĕтерчĕ. Выртать палатăра, ӳлесе,— терĕ вăл.

Вожатăй чупрĕ каланă çĕре. Тепĕр самантран Энтьукпа таврăнчĕ вăл. Фотокорреспондент вара çамрăк художника апла та, капла та тăратса ӳкерчĕ.

* * *

Таврăнман-ха киле лагерьтен Энтьук. Анчах ун сăнӳкерчĕкне çапса кăларнă хаçат — сĕтел çинче, ав. Шалт тĕлĕнет амăшĕ. Мухтанать асламăшĕ. Хаçатра мухтаса çырнă. Энтьук хăрăк тымартан ăсталанă кĕлеткесене Мускава, выставкăна, янă. Хăйне, Энтьука, художниксен шкулне вĕренме илнĕ.

Пĕтĕм ялйыш вулать хаçата тĕлĕнсе те савăнса.

Укçине капăр кĕпе тăханчĕ те çула тухрĕ. Ывăлĕ патне лагере каять. Аллинче ун ещĕк. Лавккара туяннă. Хаклă парне. Ещĕкре ăста алăсем валли ятарласа кăларнă ĕç хатĕрĕсем.

Хаçата, ырă кăмăллă çынсене тав туса пычĕ хĕрарăм. Ачи пултаруллă ӳсни — пысăк телей.

Энтьук та ларма-тăма пĕлмест паян. Йăлт та йăлт пăхать уялла. Часах вăл лагерь çулĕ çинче амăшне курать. Хапхаран тухса вăркăнчĕ вара. Амăшĕ те курчĕ ачине, уттине хăвăртлатрĕ. Тĕл пулчĕç те ĕмĕр курман пек ыталаса илчĕç пĕр-пĕрне.

ТУПМАЛЛИ

Йӑл кулсан *(повесть)* . . . 3
Урокран йывӑрри *(повесть)* . . 42
Илемлӗхе курма пӳрнӗ ача *(калав)* 73

Для детей школьного возраста

Эльби (Андреева) Валентина Андреевна

УЛЫБКА

Повести и рассказ

На чувашском языке

Редакторы *О. В. Таллерова, Р. В. Бородкина*
Художник *В. Л. Агаков*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *А. Ф. Никитина*
Корректор *Н. В. Васильева*

НТ 22024. Сдано в набор 30/V-1977 г.
Подписано к печати 20/I-1978 г.
Формат 60×84 1/16. Бумага типографская № 3.
Физ. печ. л. 5,0. Усл. печ. л. 4,65.
Учетно-изд. л. 5,04. Заказ № 2125.
Тираж 5000 экз. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам
издательств, полиграфии и книжной торговли
Совета Министров Чувашской АССР,
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

15 пус.

